ЯЛАВ
№ 6 ИЮНЬ 1954

АСЛĂ ПАРТИ, ТАВ САНА!

Г. Хирбю музыки. *П. Хусанкай* сăмахĕсем.



Тăван çĕршыва чĕререн юратса,
Малтан малалла партипе çул тытар.
Тăван аслă парти çула çутатса,
Пире кăтартать кунран-кун пархатар.

Хушса юрламалли:

Парти — пирĕн мухтав!
Парти — пирĕн ялав!
Санпа эпир ялан çĕкленнĕ,
Санпа эпир ялан çĕнтернĕ,
Аслă парти, тав сана.
Халăхран мухтав сана, мухтав!

Тахçан ĕмĕрте мĕлке пек курнакан
Коммуна умрах çитĕнсе çĕкленет.
Мĕнпур тĕнчене — çут маяк вăл паян,
Вăл пирĕн хăват, пирĕн чап та тивлет.

Хушса юрламалли.

Этем ирĕкне, халăхсен пĕрлĕхне
Ялан аслă парти тăран упраса,
Ялан ӳстерен ĕçсынни телейне,
Мухтатпăр сана пур чунтан тав туса.

Хушса юрламалли.

ЖУРНАЛ ХУПЛАШКИН ПĔРРЕМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: «ЭКЗАМЕН-СЕМ ХЫÇÇĂН».

М. Егоров фотоэтючĕ.

ХУПЛАШКИН ТĂВАТТĂМĔШ СТРАНИЦИНЧЕ: «АСЛĂ АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ».

М. Егоровпа Г. Зиньков фотоэтючĕ.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ЯЛАВ

№ 6 (102)
ИЮНЬ
1954

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН
ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ

ХАЛĂХ ЫЙТАТЬ

Чăваш Совет писателĕсен тăваттăмĕш съездчĕ пирĕн тăван литература умĕнче тăракан чи кирлĕ ыйтусене сӳтсе яврĕ. Çав ыйтусене пĕр çĕре пĕтĕçтерсен, эпир хамăр литературăн тĕп задачине çапла татса калама пултарăпăр: пирĕн пурин те халăх ыйтнă пек, партипе Совет государстви хушнă пек ĕçлемелле, совет обществин пурнăçне пур енчен те тĕплĕн çутатса памалла.

Виççĕмĕшпе тăваттăмĕш съездсем хушшинчи вăхăтра чăваш совет писателĕсем, партин Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем тĕлĕшпе панă кăтартусене пурнăçа кĕртсе нырса, хамăрăн тăван литературăна малалла аталантарса ĕçре паллă утăмсем турĕç. Пирĕн поэзи, проза, драматурги çĕнĕ произведенисемпе пуянланчĕ. Писательсен йышне çамрăк вăйсем хутшăнчĕç. Чăваш литературин чи лайăх произведенийĕсене эпир хăюллăнах вырăсла тата çĕршыври тăванла ытти халăхсен чĕлхисемпе куçарса кăларма сĕнтĕмĕр. Çапла халĕ Ухсайăн «Çул» тата «Кĕлпук» поэмисене, Хусанкайăн «Юманлăх юрлать» ятлă сăвă кĕнекине, Талвирĕн «Эсĕ инженер пулатăн» повеçĕпе калавĕсене тата ытти хăшпĕр произведенисене вырăсла куçарса кăларнă май, вĕсене çĕршыври пур халăхсем те вулама пултараççĕ. Вырăс тата тăванла ытти халăхсен литературисемпе чăваш литератури хушшинчи çыхăнусем çултан-çул çирĕпленеççĕ, çакă ĕнтĕ вăл Совет Союзĕнчи халăхсен туслăхĕ татах та ытларах ӳснине кăтартса парать.

Нумай чĕлхеллĕ совет литературинче пирĕн чăваш литератури хăйĕн тивĕçлĕ вырăнне йышăнчĕ, пĕтĕм Совет çĕршывĕпе пĕрле, хамăрăн тăван республикăри социализмла улшăнусемпе пĕрле вăл çултан-çул малалла аталанса пырать.

Анчах совет çыннисен ĕçре тунă çитĕнӳсемпе лăпланса ларас йăла çук. Халăх, партипе государство ыйтнипе танлаштарсан, пирĕн тĕлĕнмелле пурнăç кăларса тăратакан аслă темăсене шута илсен, хамăр литературăн халичченхи çитĕнĕвĕсем питех те шупкан курăнаççĕ-ха. Пĕр пытармасăрах каламалла, пирĕн литература совет халăхĕн аслă ĕçĕнчен кая юлса пырать. Пысăк темăсем, нумай темăсем çаплах-ха литература тулашĕнче юлаççĕ. Эпир халĕ литературăн «чунĕ» пулса тăракан тĕп ыйтăва татса паман: коммунизм тăвакан совет çыннин сăнарне, унăн мĕнпур илемне кирлĕ пек сăнласа кăтартман. Совет халăхĕ коммунизм патнелле улăпла утăмсемпе утать, анчах эпир, писательсем, тăйлăк-тайлăкăн çеç пускаласа пыратпăр.

Этем чунĕн инженерĕ пулма пысăк культурăлăх, аслă та тарăн пĕлӳ кирлĕ. Пирĕн писательсем культурăлăх тĕлĕшĕнчен катăк теме çук, çапах та пĕлӳпе ăсталăх çитменни пирĕн кашни утăмрах палăрса тăрать. Чылай писательсем марксизм-ленинизм теорине, вырăссен классикăлла литературипе хальхи совет литературин пуянлăхне çителĕксĕр тĕпчесе вĕренеççĕ. Пĕлӳсĕр инженер—мĕнле инженер вăл? Уйрăмах пире пурнăçа тĕплĕн пĕлменни чăрмантарать. Хăшпĕр писательсем нумай çулсем хушши ĕнтĕ хăйсен хваттерĕсемпе хăйсем ĕçлекен учрежденисенчен тухмасăр лараççĕ. Писателĕн фантазийĕ тем пек пысăк пулсан та, вăл хăй умĕнче ларакан чернильницăран нумаях пархатар илме пултараймасть. Халăх пурнăçне, совет çыннисен кулленхи ĕçне чăн-чăн художниксем пек тĕпчесе вĕренмесĕр, халăх чĕри патне пыракан произведенисем çырма çук.

Пурнăçа тĕпчесе вĕренмелле тесен, пирĕн хăшпĕр писательсем тӳрех творчествăлла командировкăсем çинчен калаçма тытăнаççĕ. Тĕрĕс, питех те кирлĕ япала. Писательсен колхозсене, МТС-сене тухса çӳремелле, анчах çакăнпа пĕрлех çапла ыйтас килет: хамăрăн Шупашкарта пурнăç çук-им вара? Тăван республика столици куç умĕнчех ӳссе пырать, вăл ĕнтĕ промышленноçпа культурăн пысăк центрĕ пулса тăчĕ. Пирĕн хулара пĕтĕм Совет çĕршывĕпе палăрса тăракан чаплă предприятисем ĕçлеççĕ, вĕсенче нацилле кадрсем кунран-кун çитĕнсе пыраççĕ, аслă шкулсенче пиншер çамрăксем вĕренеççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, Совет Союзĕн мĕнпур хулисенчи пекех Шупашкарта та пурнăç туллин вĕресе тăрать. Анчах эпир тăван хуламăр пурнăçне нихăш енчен те çутатса парайман-ха. Писатель юлташ, ытах эсĕ колхоза е МТС-а кайса курма вăхăт тупаймастăн пулсан, Шупашкар пурнăçĕпе лайăхрах паллаш, куçна хупса ан çӳре, электроаппаратура заводне е пир-авăр комбинатне кайса кур, рабочисемпе, инженерсемпе калаç, вĕсем сана тахçантанпах кĕтеççĕ, çыр вĕсем çинчен сăвă, калав, роман, пьеса çыр! Халăха юратакан, пурнăçа сăнлама пĕлекен художниксемшĕн Совет çĕршывĕн кашни кĕтесĕнчех çĕнĕрен-çĕнĕ темăсем çăлкуçланса тăраççĕ. Сивĕ чунлă, юлхав çын ан пул кăна!

Пурнăç малтан малалла пырать, халăх литературăран çĕнĕренçĕнĕ произведенисем ыйтать. Совет çыннине лайăх тумпа тутлă апат кăна çырлахтармасть, ăна «чун апачĕ» те кирлĕ, пирĕн кĕнекесенче вăл çĕнĕ шухăшсем, çĕнĕ туйăмсем шырать, унăн ĕмĕчĕ,—пирĕн кĕнекесенчи çĕнĕ ĕмĕтсемпе пĕрлешсе, татах та ытларах çунатланасшăн. Совет çыннин çак пархатарлă ыйтăвĕсене тивĕçтерейменсен, вăл пăшăрханать. Кирлĕ пулсан, писательсене ятласа та илет.

Совет халăхĕн куçĕ умĕнче коммунизм строительствин аслă малашлăхĕ çуталса тăрать. Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви тăван çĕршыва тата хăватлăнрах аталантармалли аслă программа палăртса хучĕç. Социализмла индустрие малалла ӳстерсе пырса, пирĕн хамăр халăхăн куллен ӳссе пыракан ыйтăвĕсене çитес ик-виç çул хушшинче пур тĕлĕшрен те ытлăн-çитлĕн тивĕçтермелле, çăмăл промышленность валли чĕртавар çителĕклĕн парса тăма тытăнмалла. Партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьти тата февральпе мартри Пленумĕсем йышăннă постановленисенче ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене, уйрăмах тĕштырă акса тăвас ĕçе, хăвăрт малалла аталантарас задача лартнă. Ку вăл — пирĕн халăхăн ĕçпе кĕрешӳри аслă программи. Çав программăна пурнăçа кĕртсен, совет халăхĕн пурнăçĕ тата ытларах лайăхланĕ, пуянланĕ, илемленĕ. Тăван çĕршывăмăрăн вăй-хăвачĕ нумай хут ӳссе тĕрекленĕ.

Вĕçĕ-хĕррисĕр аслăн сарăлса выртать Совет çĕршывĕ. Ăçта кăна çитсе ан кур, пур çĕрте те совет çыннисем халăх хуçалăхĕпе культурине ӳстерессишĕн, чăн-чăн ырă пурнăç тăвассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешеççĕ, пур çĕрте те культурăллă та хĕрӳллĕ ĕç вĕресе тăрать. Анчах пирĕн нумай писательсем халăхăн çак улăпла ĕçне аякран кăна сăнаса тăраççĕ. Хула пурнăçне пачах та тенĕ пек кăтартса паман пулсан, эпир паянхи ял пурнăçне те питĕ çиелтен çутатса пыратпăр. «Ялав» журналра, «Тăван Атăл» альманахра паянхи уçă çил варкăшни сисĕнмест. Сайра-хутра тухакан очерксем вулакана нимĕн чухлĕ те çырлахтармаççĕ. Совет çынни пирĕн чуна кантаракан, шухăш-кăмăла çĕклентерекен ăслă та илемлĕ произведенисем ыйтать. Халлĕхе эпир поэзире те, прозăра та, уйрăмах драматургире çавăн пек паха произведенисем питĕ сахал куратпăр.

Чăваш писателĕсен тăваттăмĕш съезчĕ çак пысăк çитменлĕхсене палăртса, писательсен Союзĕн правлени ĕçне çителĕксĕр тесе йышăнчĕ. Чăн та ĕнтĕ, пирĕн халичченхи правлени писательсене чи кирлĕ ĕçе—халăх валли тарăн шухăшлă, паха произведенисем çырас ĕçе парти хушнă пек мобилизацилеме пултараймарĕ, вăл питех те сӳрĕккĕн, юлхавлăн ĕçлесе пычĕ. Çук, литература ĕçĕ—чĕрĕ те хĕрӳллĕ ĕç—нимле сӳрĕклĕхпе юлхавлăха та тӳсмест. Халичченхи правлени пирĕн литераторсем хушшинче критикăпа самокритикăна чĕртсе пыма, писательсене вĕрентес ĕçе йĕркелеме тăрăшман, литература критикине аталантарас ĕç çине, тĕрĕссипе, çаврăнса та пăхман. Çакна пула писательсем хушшинче пĕр-пĕр произведение тивĕçсĕр мухтаса хăпартас е сăлтавсăрах пĕтĕмпе хурласа тăкас йăла сарăлнă. «Ах, эс мана кӳрентертĕн, çавăншăн тавăрăп-ха сана», текен мешченле шухăшсене правлени вăхăтра сире-сире пăрахман.

Писательсен съезчĕ çĕнĕ правлени суйласа хăварчĕ. Пирĕн правлени малашне республикăри литература ĕçне чăннипех те парти хушнă пек ертсе пыракан орган пулса тăма тивĕçлĕ. Халичченхи пысăк çитменлĕхсемпе йăнăшсене шута илсе, пĕтĕм ĕçе тĕпренех çĕнетмелле. Писательпе унăн алçырăвĕ пирĕн литература организацийĕн ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнма тивĕç. Кĕнекене правлени çырмасть, писатель çырать, теççĕ пирĕн час-часах. Ку тĕрĕс. Анчах правленин писателе кĕнеке çырнă чух хавхалантарма, вăхăтра пулăшма пĕлмелле. Кунта вара литература критики чăннипех те чи пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халиччен правлени критикăна хисепе хуман пулсан, малашне ăна пĕтĕм литературăна ертсе, çул кăтартса пыракан вăй туса хумалла.

Ноябрь уйăхĕнче совет писателĕсен пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съезчĕ пулать. Ĕçлемелĕх, хатĕрленмелĕх вăхăт пур-ха. Анчах халăхшăн темле вăхăт та сахал. Кахалланас марччĕ! Çырма пуçланă произведенисене çырса пĕтересчĕ, съезда чăннипех те паха парнесем кӳресчĕ!

Писательсен вырăнĕ—коммунизм строителĕсен чи малти ретĕнче. Пурнăçа шаларах кĕрер, халăхăн улăпла утăмĕсенчен пĕр пусăм та кая юлар мар, хамăрăн çулăмлă та илемлĕ сăмахăмăрсемпе халăха тата хастарлăрах ĕçлеме хавхалантарар!



Чăваш Совет писателĕсен тăваттăмĕш съездĕнче пулнă писательсем.

САЛАМПИ

Повесть

Александр АРТЕМЬЕВ

АМАШĔН — ÇĔР ШУХАШ, ХĔРĔН — ПĔР ШУХАШ

— Хĕрарăмăн висĕ хуйхă: хĕрхаллĕн ача çуратни, качча тухсан ача туманни тата упăшка пур çинчех ют арçынпа ерсе пуранни, тенĕ авал. Ваттисем калани — пуш çăвартан тухнă сăмах мар вăл. Итлеместĕр çав эсир аслисем каланине, хăлхана та чикместĕр, кам ятласа çитерес сире? Хут пĕлетĕр тесе, пуçа ытла каçăртма юрамасть, хĕрĕм. Аслăран аслă татах пур, ухмахран ухмахраххи те тупăнать. Ватлăхра мана намăс кăтартрăн-çке, хĕрĕм, çын çине мĕнле питпе тухса çӳрĕпĕр.

Саламппи сĕтел умне ларнă та амăшне хирĕç чĕнмест. Пĕчĕк Валерик, сарă кăтра çӳçлĕ чипер ача, ун чĕркуççийĕ çине ик аллипе те уртăнса, ним шарламасăр тăрать, çаврака пысăк куçĕсемпе вăл Саламипие хĕрхенсе пăхать; кăмака сакки çинче выртакан чирлĕ карчăк чăвашла калаçнă пирки ача ăна ăнланмасть, анчах вăл ятлаçнине сассинченех сисет, çавăнпа ун еннелле шиклĕн пăхкалать. Саламппи шухăша кайнă та пĕчĕк Валерике пуçран лăпкаса йăпатма та астумасть, амăшĕн сăмахĕсем ун чĕрине çĕçĕпе чикнĕ пекех ыраттараççĕ.

— Килйышра чи кĕçĕнни пултăн çав, кĕçĕнни те ачаш пулать вăл. Ачаш ача вăр тунă, ачаш хĕр — ача тунă, тесе ахаль каламан. Висĕ хĕр ӳстерсе качча патăм. Инçене кайрĕç те — юрĕ ĕнтĕ, хайсен ирĕкĕ. Пĕри те ялйышра ятне ямарĕ, халиччен хĕрĕмсемшĕн хĕрелменччĕ. Кама хурăн-ши эсĕ? Аçу та апла-капла марччĕ, хам та çамрăк чух каччăсемпе тӳрĕ тăрса куçа-куçăн калаçма хăйман.

Карчăк йынăшса сулахай айăкĕ çине çаврăнса выртрĕ.

— Пирĕн вăхăтри хĕрсем каччăпа калаçнă чух яланах хăяккăн тăрса, çĕрелле пăхса кăна калаçнă. Кăнтăр кунĕнчех урамра е çăл умĕнче каччăпа тăнине ваттисенчен кам та пулин курас-тăвас пулсан — ай тур çырлах вара! Ытла хаярччĕ ун чухнехи йĕркесем, хĕрарăма ирĕк паман, тилхепене çирĕп тытнă.

Карчăк ахлаткаласа тăрса ларчĕ те пĕр хушă чĕнмерĕ. Пӳрт умĕнчи хурăнсем çилпе шавласа лараççĕ, кантăк çумне сивĕ çумăр тумламĕсем шăпăртатса çапăнаççĕ.

— Мама!

Саламппи шартах сикрĕ.

— Мама, ман çывăрас килет,—терĕ Валерик, платье аркинчен туртса.

Саламппи ăна пуçĕнчен лăпкаса илчĕ те тĕпелти сак çине выртан сарма пуçларĕ. Карчăк каллех хуллен выртрĕ, вăйсăрран йынăшса ячĕ:

— А-а-ах! Чикен чиксе вĕлерет. Пĕртте вăй çук, темшĕн çакнашкалах хĕне ермелле пулчĕ-çке! Вилĕм те час çывхармасть... Татах тем курасси пур ĕнтĕ сирĕнпеле...

Валерик сĕтел урине мăнтăркка аллисемпе ыталаса илнĕ те карчăк еннелле хăраса пăхса тăрать. Чăнах та, мĕн туса пурăнаççĕ-ши çавнашкал пĕчĕк ачасене юратман карчăксем? Валерик ăна чухлаймасть.

— Кил, Валерик, — вырăсла чĕнчĕ Саламппи, анчах ача ют пӳртре урай варрине тухма шикленчĕ, сĕтел урине тата хытăрах çатăрласа тытрĕ те эрленсе-хурланса макăрса ячĕ.

Саламппи чунĕ çав тери кӳтсе çитрĕ, унăн хăйĕн те пĕчĕк ача пек макăрса ярас килчĕ, анчах вăл, чунне хытарса, куççульне çăтрĕ, ачана сĕтел ури çумĕнчен ачашшăн уйăрса илчĕ те вырăн çине вырттарчĕ.

Инçе çул хыççăн ĕшеннĕ Валерик выртнă-выртман çывăрса кайрĕ. Саламппи чылайччен çумăр шăпăртатнине, çарса юлнă хурăнсем салхуллăн шавланине итлесе ларчĕ. Çурçĕр те çитрĕ ĕнтĕ, анчах ыйхă килмест. Амăшĕ каллех калаçма пуçларĕ.

— Миçе хутчен каланă ĕнтĕ сана, мĕн чухлĕ ӳкĕтленĕ — çук, хăлхана та чикесшĕн пулмарăн. Висĕмçулах качча тухнă пулсан, ним хуйхи те пулман пулĕччĕ, çак намăса та курмăттăн... Эришкассинчи Хветĕр темиçе хут килсе кайрĕ. Каччи хама та килĕшетчĕ ĕнтĕ: нумаях вĕренмен те-ха, çапах пурнăç курнă çын, питĕ кăмăллă калаçать, нихçан тĕлсĕр сăмах персе ямĕ! Ăна та тиркерĕн, сивĕтрĕн çынна, — вара, вăн, Куракассин хĕрне илчĕ. Халь питĕ пуян пурăнаççĕ, тет.

Саламппи яланхи пекех, хирĕç ним чĕнмесĕр, амăшĕн сăмахне тăнласа ларчĕ.

Ун амăшĕ пек хаяр хĕрарăм ялĕпе те пулман пуль, чи чарусăр ачасем те унран шикленерех тăнă: пĕри те ун пахчине хăяр вăрлама кĕме хăйиман; вăл хăйĕн аслă хĕрĕсене те питĕ çирĕп тытса усранă, хăйне хирĕç сăвар уçтарман. Анчах халĕ, ак, кĕçĕн хĕрне сурса ятлаçас чухне, питĕ пăшăрханса, хурланса калаçать. Чирпе вăйсăрланнăскерĕн сасси чĕтрет, сывлăшĕ час-часах пӳлĕнет.

— Висĕмçул тата Вăрманкас салтакĕ ярмăкран тӳрех кунта кĕнеччĕ. Мĕпрен япăх каччă? Кăкăр тулли митал çакса тултарнă — тенкĕсем пек шăнкăртатаççĕ. Ăс-пуçран та, сăн-питрен те япăх мар. Ăна та пулин килĕштермерĕн, вĕсем килсе кĕрсенех пӳртрен тухса тартăн. Каччи вара калама çук пăшăрханчĕ,—ара юлташĕсем умĕнчех намăс кăтартрăн-çке. «Сăра ĕçтерем-и?»—тетĕп те, сĕнсе те ĕçмест, ăшĕ çуннипе çур витре шыва кăшт ĕçсе яратчĕ. Хам та вара çавăн чухне хăйне йăлт хĕрхенсе пĕтрĕм...

Самантлăха çеç Саламппи «Вăрманкас салтакне» аса илчĕ: чăн та вăл лайăх каччăччĕ, хăйне питĕ сăпайлă тыткалатчĕ, ярмăркăра Саламппи хыççăнах вăрттăн асăрхаса çӳрерĕ. Мăнтарăн, хытах килĕштерсе пăрахнăччĕ пулас. Анчах Саламппи унпа ытахальтен, лешĕн ырă кăмăлĕшĕн кăна калаçнăччĕ, халĕ ак ун ятне те астумасть... Сахал каччă тĕл пулнă-им пурнăçра—пурне те ăçтан астуса çитерĕн?

— Шухăшлама пĕлместĕн çав, хĕрĕм, пурнăçа мĕнле майлаштарасси çинчен пĕрре те шухăшлас теместĕн, çавăнпа çакнашкал пулса тухрĕ ĕнтĕ. Хăвна ху такамран та пысăкрах хутăн пуль, сан пек хĕр урăх çук, терĕн пуль... Хам та кăштах ухмах пултăм çав, ăс çитерейменĕм: вăрçă вăхăтĕнчех илес текенсем пурччĕ — памалла та ямаллаччĕ. Хĕрхентĕм, çамрăк-ха, кăштах амăшĕ патĕнче пурăнтăр, терĕм.

Кăна илтсен, Саламппи чунĕ тăвăнса килчĕ. Чăн та, вăрçă вăхăтĕнчех ăна килĕштерекенсем пурччĕ, вăрçă пĕтес çул пĕр-иккĕн хăтана та килнĕччĕ, анчах ун чухне Саламппи амăшĕ те Валерий таврăнасса кĕтсе пурăнатчĕ çав. Ялйышпа пĕрлех вăл та Саламппипе Валерий мăшăрланасса хытах шанса тăратчĕ пулас.

— Халĕ кам таврăнасса кĕтес ĕнтĕ? — терĕ сасартăках амăшĕ.—Мĕншĕн пурне те тиркес? Тиркекене — тиркĕ тĕпĕ тени çаврăнса çитĕ ак, ун чухне вара чавсу çывăх пулĕ те — çыртаймăн. Хĕр ĕмĕрĕ вăрăм мар... Ачи пулнă-пулнах ĕнтĕ, халь тин ним тумалли те çук. Ачаллă хĕрсем те качча каяççĕ, висçăват ачаллă арăмсене илекенсем те пур. Юратсан, ăна-кăна пăхсах тăмĕç. Çырни çырлан курăнать, тенĕ. Эсĕ халь те çынсенчен ытлашши катăках мар-ха. Пĕр-пĕр çамрăка киле кĕртес те — пурăнăр лайăх, шăкăл-шăкăл калаçса, килĕштерсе...

Саламппи тек чăтса лараймарĕ, амăшне пӳлсех каларĕ:

— Ан калаç, анне, кирлĕ мар! Тем тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет пуль сан пуçна... Мана никам та кирлĕ мар! Никам та...

«Кирлĕ мар», тесшĕнччĕ вăл тепĕр хут. Ун сасси тытăнчĕ, пырне тем капланса ларчĕ, пĕтĕм ăшчикĕ тăвăрланса çитрĕ. Саламппи хулпуççи çине пальто уртрĕ те тула чупса тухрĕ.

Амăшĕ, чылайччен хускалмасăр, шухăша кайса выртрĕ. Малтан ун çанçурăм, ală-ура такам тыллана пекех суратчĕ, тапранмассерен чикен чиксе аптрататчĕ, акă халь тата чĕре ыратма пуçларĕ. Ăш çунать. Шыв ĕçес килчĕ, анчах тăрса тĕпеле утса çитмелĕх те вăй çук. Мĕншĕн Саламппи çаплах кĕмерĕ-ха? Ăçта кайрĕ пулать çĕр хута? Тем усал шухăш ан тыттăр — тур çырлахах!

Карчăк йынăшкаласа тăрса ларчĕ те

Малалли. Пуçламăшĕ «Ялавăн» 5-мĕш номерĕнче.

каллех калаçма пуçларĕ. Ача чухне те, ятлама пуçласанах, Саламни çапла çенĕке тухса таратчĕ, çапах та амăшĕ мĕн калание алăк хыçне пытанса итлесе тăратчĕ. Тен, халĕ те çенĕкрех итлесе тăмасть-ши? Çук, çенĕк алăкне шалтлаттарсах хупса тухрĕ те, каялла кĕни илтĕнмерĕ.

— Йывăртарах калараăм пулас, ытлашширех калараăм пуль?!. Халь тин ятласа та усси пулас çук. Пурăнасах пулать ĕнтĕ... Мăнтарăн хĕрĕ, ашшĕ вилнĕренпе те ыррăн савăнса кураймарĕ. Килти мĕнпур йывăр ĕçе — арçын ĕçне хăех туса пурăнчĕ, хулара выçлăнтутлăн вĕренчĕ... Çав институтне вĕренсе пĕтерсен — этем пулĕ-и, теттĕм...

Карчăкăн пĕркеленнĕ пичĕ тăрăх çутă шăрçа пек куççуль тумламĕсем шăпăртатса анчĕç.

— Шеремет хĕрĕ, хăй ачин ашшĕ камне те пĕлмест. Те юриех каламасть? Пĕлессе пĕлет пуль те-ха... Çав териех пĕлтерме те вăтанмалла çынпах çыхланнă-ши вара?.. Ним шутлама та пĕлместĕп ĕнтĕ: мĕнле-ха çавна манран, тăван амăшĕнчен, пытармалла? «Кĕçĕр ан та ыйт ун пирки, урăх чухне каласа парăп», тет. Урăх чухне... Мана та тĕрĕссине каламасан — кама каласа парас-ха? Тем, пĕлме çук çав хальхи ача-пăчана...

Саламни амăшĕ тăчĕ те, шыв ĕçме тесе, тĕпелелле кăштăртатрĕ, анчах тĕпел кукрине çитнĕскерех шыв витри патне пымарĕ, сак çинче çывăракан ача умĕнче чарăнчĕ.

Пĕчĕк Валерик, алли-урине сарса пăрахса, месерле выртнă та мăшлаттарса çывăрать.

Елюна инке, ун çине пăхса, шухăша кайрĕ. Вăтăр пилĕк çул арлă-арăмлă пурăнса та ывăл çуратса пулмарĕ. Патша самани чухне çĕр памасăр аптратрĕç. Виçĕ хĕр качча парасси, калама канас та, çăмăлах мар вăл. Пĕр ят çĕрĕпе çемьене тăрантарса пурăн-ха, çĕрсĕр çи-пуç тума та хĕн. Йĕтĕн-кантăр акса тума çĕр кирлĕ. Хĕр тени вăл ун чухне тупрасăр никама та кирлех пулман. Çавăнпа «çичĕ кин кĕртекен пуйса кайнă, çичĕ хĕр паракан — çука юлнă», тенĕ халăх. Хăшпĕр чухне вара ашшĕ пасартан-мĕнтен ӳсĕр таврăнсан, тарăхнипе, ятлаçса та илетчĕ; ывăл тумастăн тесе айăплама пăхатчĕ. Турă паманни— ăçтан пултăр? Юлашки ачи те хĕр пулчĕ...

Карчăк çĕрелле усăнса тăракан хулăн çивиттие тирпейлĕн пуçтарса илчĕ те Валерике ачашшăн витрĕ, кăмăлĕ вара çемçелсе кайрĕ, куçĕсем каллех шывланчĕç. Вăл чĕтрекен аллипе ачана пуçĕнчен питĕ хуллен лăпкаса илчĕ те ун çине хĕрес палли хучĕ.

— Мухтав турра: ывăл!—пăшăлтатрĕ савăнăçлăн.

Çумăр чарăннă ĕнтĕ, пӳрт умĕнчи хурăнсем кăна пасăрхи пекех кашласа лараççĕ. Саламни вĕсен салхуллă шавне итлесе шухăша кайса тăчĕ. Тем çинчен те шухăшларĕ, тем те аса илчĕ, анчах шухăшĕсем салансах пычĕç. Усă сывлăшра чун усăлнă пек пулчĕ, шăмшак та кĕрхи сулхăна туйма пуçларĕ. Саламни пӳрте кĕрес тенĕччĕ кăна—кӳршĕри çенĕк алăкĕ сас турĕ, унтан хĕр ахăлтатса кулни илтĕнчĕ. Маруç кулать иккен, Виктор çартан таврăннăранпа çавнашкал хавасланать вăл. Савнисем улахран халь тин тухса каяççĕ пулас: пӳртĕнче çаплах лампочка çунать-ха, чӳречерен килкартине çутă ӳкет. Маруç — епле телейлĕ вăл! — хăйне такам кăтăкланă пекех, каçăхса кайса кулать. Тĕттĕмре, çенĕк алăкĕ умĕнче, унăн шурă кĕпи кăшт курăнать те каллех çухалать: каччă хĕре шинельпе хуплать пулас, вара пĕр хушă калаçни илтĕнмест... Виктор кăнтăрла пĕрмай ĕçлет, каçхине çапах Маруçпа тĕл пулма вăхăт тупать. Çав ĕнтĕ вăл, пĕр юратсан, талăкра çирĕм тăват сехет кăна пулсан та, савнипе тĕл пулма çирĕм пиллĕкмĕш сехет тупма пĕлес пулать...

Карлăк юпи çумне таянса тăракан Саламни сасартăках вăтанса кайрĕ. Савнисен вăрттăн телейне аякран курни лайăх мар пек туйăнчĕ ăна — вăл пусма картлашки çинчен чупса анчĕ те пахчана тухрĕ.

Çумăр хыççăн садри йывăççем ĕшен-

Çамрăк шофер

Урамра машина кĕрлесе иртет-и е сенкер тӳпере самолет ярăнать, Ванюк вĕсене ытараймасăр ăмсанса пăхса юлать. Унăн куçĕсем телейлĕ ĕмĕтпе çуталаççĕ, чĕри çĕкленсе каять. Шухăшĕсемпе вăл тахçанах çăмăл машина рулĕ умĕнче ĕнтĕ, пĕрле вĕренекен, пĕр парта хушшинче ларакан юлташĕсемпе тусĕсене те тахçанах «Победăпа» çӳретет.

Унтанпа пайтах вăхăт иртнĕ ĕнтĕ. Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт те пурнăçа кĕчĕ. Пĕчĕкренех тĕрлĕ машинăсене юратакан Иван Осипов шоферсен курсĕнчен вĕренсе тухрĕ те «ЗИС—150» маркăллă машинăпа ĕçлеме пуçларĕ.

Иван Осипов халь Элĕкри сӳс-кантăр заводне тунă çĕрте ĕçлет. Унăн машини яланах юсавлă, вăл ăна тирпейлĕ тыткалать, виçеллĕ çӳрет. Вăл, ăста шофер пулнипе пĕрлех, ĕçре те маттур. Çунтармалли япаласене нумай перекетлет, сменăри задание яланах икĕ хут ытла иртерсе тултарать.

Ӳкерчĕкре: Элĕкри сӳс-кантăр заводне тунă çĕрте ĕçлекен çамрăк шофер Иван Осипов рейса каяс умĕн.

П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕ.

нĕ пекех сĕнксе лараççĕ, кăшт сĕртĕнсенех — улмуççи тураттисем çинчен шăпăрр! шыв тăкăнать. Сад та çаралса юлнă иккен. Йăлтах çаралнă. Салху. Тăлăх...

Саламли кивĕ мунча тĕлĕнче чарăнчĕ. Тайăлсах кайнă вăл, тахçантанпах хутман ĕнтĕ ăна. Тахçанччен çапла тайăлса ларать ĕнтĕ вăл? Мĕн ачаран Саламли çак мунча умне иленнĕ. Акă, тĕксĕм чӳрече айĕнче халĕ те пĕчĕк сак пур, ун çумĕнчех авалхи йăмра тункати, Саламли ун хăвăлĕнче хăйĕн пуканесене пытарса усратчĕ. Хăçанччĕ-ха вăл? Питĕ тахçан... унтанпа ик ĕмĕр иртнĕн туйăнать. Ытти чухне Саламли çак мунча умĕнче ачалăх кунĕсене аса илсе хăйĕнчен хăй кулатчĕ, кĕçĕр пĕрре те кулас килмерĕ.

Ачалăх... Тахçанах иртнĕ-çке вăл! Саламли ун чухне пуканилле выляма питĕ юрататчĕ, тем тĕрлĕ çитцă таткисенчен «тутăр-лентă» тавраша тăватчĕ те пуканисене «туй арăмĕ пек» те, «улах хĕрĕ пек» те тумлантаратчĕ. «Пĕчĕк пуканиксем» те пурччĕ мар-и? Саламли вĕсене пушшех кăмăллатчĕ, сарлака хупах çулçинчен тунă сăпкара сиктерсе «çывăртатчĕ»: «ачине, паппине... ачине, паппине»...

— Ачине... паппине, — пăшăлтатрĕ Саламли, пĕр вырăнта хытса тăрса, унтан сасартăках пĕчĕк Валерик пасăр ыйхăласа макăрнине аса илчĕ те мунча алăкне ним сăлтавсăрах тĕртсе пăхрĕ — тутăхнă петле чуна тивекен сасăпа чĕриклетрĕ, алăкĕ хăлтăр-халтăр туса, çенĕк урайне ӳкрĕ. Ах! вăл хăрах петле çинче кăна тытăнса тăратчĕ-çке: çӳлти петли вăрçă вăхăтĕнчех татăлса кайнăччĕ те, çавăнтанпах ăна никам та тытса юсаман, юсакан çукран йăлт юхăнса, ишĕлсе пырать...

Саламли анкарти вĕçнелле утрĕ. Кăнтăрла унтан уялла пăхма аван: инçетри-инçетри курăнать, халĕ ак, тĕттĕмре, анкарти хыçĕнчи лапсăркка улмуççин хура мĕлки çеç палăрать. Ялта та çутăсем курăнмаççĕ ĕнтĕ, урамри юпасем çинчи лампочкăсене те сӳнтернĕ... Чим! Ял вĕçĕнче, турикасра, пĕр чӳречере çутă пур. Камăн пӳрчĕ-ха вăл? Валерисен! Коля ларать пулас унта, темшĕн çывăрмасть, тем вулать ĕнтĕ? Пĕр-пĕр питĕ тĕлĕнмелле роман тупнă пуль, тен, юрату çинчен?..

Саламли сасартăках кĕçĕр улахра Кольăна тĕл пулнине аса илчĕ. «Мĕн шутларĕ-ши вăл ман пирки?»

— Саламли! Эсĕ-и ку? — илтĕнчĕ çывăхрах.

Шухăша кайнă хĕр шартах сикрĕ.

— Ай! кам унта?

— Эпĕ ара, паллаймарăн-им?» терĕ майралла тумланнă хĕр, карта патне çывхарса. Палланă сасă, çывăх сасă, тăван...

— Ой, хăратрăн та-çке, Лена!

Икĕ хĕр карта урлах ыталанса чуптурĕç. Иккĕшĕ мĕн сăлтавпа çаканта çӳренине пĕр-пĕринчен ыйтма та астумарĕç.

Лена, ним каламасăр, Саламлие тинкерме пуçларĕ, лешĕ вăтанса аяккалла пăхасса кĕтрĕ пулас вăл — хĕр ун шухăшне тӳрех туйса илчĕ, вара ним вăтанмасăр, хăюллăн ăна хирĕç пăхрĕ: «Ан айăпла мана!!! Пĕлмесĕр ан айăпла!» терĕç унăн тĕттĕмре те йăлкăшса тăракан пысăк куçĕсем.

— Машăпа Даша... çавсем тем пакăлтатрĕç... Ĕненес килмерĕ, — лăпкăн калама тăрăшрĕ Лена. Çапах та ун сасси чĕтренине тӳрех сисрĕ. Кун пирки сăмах пуçарасса вăл малтанах кĕтнĕччĕ, çавăнпа халь пĕрре те тĕлĕнмерĕ. Маруçпа Таруç пĕлсен вара — ял пĕлесси инçех мар, анчах пĕри те, никам та Саламли вăрттăнлăхне пĕлеймест, пĕлтерес вăхăт çитмесĕр никам та пĕлеймĕ!..

— Ан ыйт халь ун çинчен, Лена, тепĕр чухне каласа парăп... Халь ан ыйт!

— Каçар, Саламли, пăшăрхантартăм пулсан.

— Нимех те мар, эпĕ хăнăхма пуçларăм ĕнтĕ, хăнăхас пулать, — шӳтлеме хăтланчĕ хĕр, анчах сасси тытăнчăклăн тухрĕ.

— Вĕренме пăрахсах килтĕн-и? Е вăхăтлăха кăна?

— Анне хĕне кайрĕ, пӳртре те аран çеç ахлаткаласа çӳрет. Тен, вăл уйăх та ытларах выртĕ те... Аккасем инçетре, хăйсен те кашнинех хуçалăхĕ пысăк, пăрахса килес çук вĕсем.

— Йывăрах пулсан, больницăна леçес, Саламли? Мĕнле чир вара унăн?

— Ним чирне те пĕлмест вăл, температури те йĕркеллех. Ахаль çапла тахçантанпах чикен чикнипе аптрать. Вата-çке-ха, вăй çук, тет. Ăна больницăна вырттарсан та, килте каллех çын кирлĕ, выльăх-чĕрлĕхне те пăхасах пулать, пӳртне те хутса ăшăтмалла, унсăрăн сакайĕнчи çĕрулми шăнса пăсалма пултарать... тĕтĕм сӳнтерме юрамасть.

— Вĕренес пирки мĕнле вара? — пăшăрханса ыйтрĕ Лена.

— Мĕн шухăшласси... Манăн пĕр шухăш кăна — институт пĕтересси! — çирĕппĕн каларĕ Саламли. — Халь пурпĕрех юлташсенчен юлатăп ĕнтĕ, килес çулсăр та институтра таврăнаяс çук пуль. Унччен килтех вĕренкелес, çитес çул вара институтра çăмăлтарах пулĕ. Колхозра ĕçлес — практика ӳстĕр.

Иккĕшĕ те пĕр хушă сăмах хушмасăр тăчĕç. Çумăр ӳккелеме пуçларĕ.

— Ну, каям-ха эпĕ, Саламли, çумăр хытах çуса яриччен киле çитсе ӳкес, — терĕ Лена, урăх ним калаймасăр.

— Чипер кай.

Çумăр йăсласа çума пуçларĕ. Улмуççи тураттисене сĕртĕнсен халĕ пасăрхинчен те ытларах шыв шăпăртатса тăкăнать.

Епле тĕттĕм каç! Иртнĕ çутă кунсем çак тĕттĕмре пушшех илĕртӳллĕн курăнаççĕ: Шурă Шупашкар... тăван институт... хавасла студентсем... Хăçан тепре курмалла-ши вĕсене?..

Саламли лăпсăркка улмуççи айĕнче чарăнса тăчĕ. Акă вăл, мĕн ачаран юратнă улмуççи. Ун улмисем яланах таса та шултра пулатчĕç, тураттисем çулсерен çĕрелле усăнатчĕç. Вăрçă тухнă çул хаяр сивĕ çапрĕ те, улмуççи аманса юлчĕ. Халĕ те кашни çурах шап-шурă чечеке ларать вăл, анчах çимĕç кӳмест ĕнтĕ. Миçе çул вăл çапла çаралса, тăлăххăн, хĕсĕр ларĕ-ши?

ИКĔ ХĔР

Лена çак каçранпа час-часах шухăша каякан пулчĕ. Итем çинче-и е кил таврашĕнчи ĕçе пуçтарăннă чухне-и — хăй мĕн тума пуçланине те астумасăр тăрать. Пĕр шухăш ăна канăç памасть.

Саламли!.. Ăна пурте ялти ятлă хĕр тетчĕç, ваттисем ăна ĕçченшĕн, сăпайлă пулнăшăн хисеплетчĕç, çамрăксем — ăшă кăмăлĕшĕн, пур енĕпе те пултарнăшăн юрататчĕç... Лена та нихăш енчен катăк пулман темелле: ĕçчен, хастар, чипер — тата мĕн кирлĕ? Каччăсем çапах Саламлие маларах хуратчĕç пуль çав: Валерий те, ав, ăнах юратнă! Икĕ хĕр пĕр-пĕрне кӳлешнĕ тесе шутлаççĕ. Тĕрĕс-и ку? Лена, тен, хутран-ситрен кӳлешнĕ те пуль, анчах Саламли?.. Кӳлешнĕ-ши Саламли? Вăл ăна-кăна нихçан та палăртмастчĕ. Ăçтан пĕлес: кӳлешнĕ те-и, тен... Акă халь Валерий те çук, Саламли те текех хĕр шутĕнче мар. Савăнмалла-ши ĕнтĕ Ленăн? Текех ялта ăна çитекен хĕр çук-çке, ăна чăрмантаракан та çук! Чăн, Саламли малтанхи пекех илемлĕ-ха, тен, малтанхинчен те илемлĕрех пуль, вăл халĕ такамран та ирттерме пултарĕ, çапах ăна хĕр вырăнне хумаççĕ ĕнтĕ: вăл «ача амăшĕ»! Лена ун пекех илемлĕ те мар, унран сахалтарах вĕреннĕ, анчах вăл хĕрле ача туман, вăл — ятне яман таса хĕр!.. Пурпĕрех Лена савăнмасть. Çын хуйхишĕн савăнас-и? Саламлие телейсĕр тесе шутлать вăл, ăна мĕнпе те пулин пулăшас, ырă тăвас килет унăн. Пĕркун çĕрле иккĕшĕ анкарти хыçĕнче калаçнă хыççăн Лена Саламлие хĕрхенчĕ те, юратрĕ те, тен, нихçан та вĕсем çав каçхи пек пĕр-пĕрне тăванла çывăх пулман пуль. Тен, вĕсене савнийĕ çукки çапла çывăхлатрĕ (хуйхă яланах çынсене пĕрлештерет)? Валерий фронтра вилнĕренпе Лена никама та юратман, апла вăл хăйĕн пĕртен-пĕр савнине никамран та хытăрах юратнă. Саламли, акă, Валерий хыççăн такампа çыхланса ача турĕ, апла вăл Лена чухлĕ юратман, анчах мĕншĕн ун çулĕ çине тăчĕ-ха, мĕншĕн хушша кĕчĕ? Айăплă мар-и вăл Лена умĕнче, вăл унран Валерие туртса илесшĕн пулмарĕ-ши? Çакнашкал пур иккĕленӳллĕ хаяр шухăш Лена пуçне çĕмĕретчĕ, анчах халĕ вăл урăхла шухăшлать. Саламли те ун пекех ачаран юратнă, анчах хăй туйăмне çынсенчен пытарма тăрăшнă, çав пысăк туйăм хăех çиеле тухнăшăн кам айăплă пултăр-ха? Çитменне тата вăл туйăм Саламлие те, Валерие те телей кӳме ĕлкĕреймерĕ. Лена та кăштах айăплă мар-ши вĕсем малтанрах пĕрлешейменшĕн? Мĕншĕнха вара уншăн уйрăмах пысăк телей кирлĕ пулнă. Саламлин пĕчĕккипе те çырлахмалла пулнă? Акă халь Саламли питĕ телейсĕр ĕнтĕ...

Вĕçĕмсĕр тăсăлать хĕр шухăшĕ, пăтранать, ниепле те пĕр уçăмлă йĕр çине тухаймасть, ниепле те вĕçне çитеймест. Лена Саламлие хĕрхенет те, ӳпкелет те, юратать те. Пуринчен ытларах, мĕнле пулсан та, юратать. Саламли ялти хĕрсенчен, Ленăран хăйĕнчен те кăмăллăрах пуль, халиччен вăл ни-

кама хаяр ятпа чӗнмен, йывӑр каласа кӳрентермен, халӑх ҫинче хӑйне питӗ лӑпкӑ, сӑпайлӑ тыткаланӑ, ваттисен сӑмахӗнчен иртмен, ҫапах ун ҫумӗнче темле вӑрттӑн вӑй пур, ҫав вӑй кашнинех илентерет те, илӗртет те, лӑплантарать те, пӑшӑрхантарать те. Халиччен ялта Салампи ҫинчен япӑх калаҫманччӗ, пурте ӑна ҫирӗп хӗр тесе шутлатчӗҫ. Института ӑна пӗр студент араукари йывӑҫӗпе танлаштаратчӗ, тет. Мӗнле йывӑҫ вӑл, араукари, ӑҫта ӳсекенскер? Лена ӑна пӗлместчӗ, пӗрре-хинче, сӑмах майӗн тенӗ пек, кӳршӗ колхозри садоводран, Семен Салановран, ыйтса пӗлчӗ. Араукари кӑнтӑр енче ӳсекен йывӑҫ иккен, вӑл питӗ йӗплӗ, ҫавӑнпа ун ҫине пӗр кайӑк та лараймасть, унӑн турачӗсене те никам хуҫаймасть, тет. Салампи те Ленӑшӑн халиччен ҫав тӗлӗнмелле йывӑҫ пекех туйӑнатчӗ, анчах халь ӑна араукарипе танлаштараймӑн ӗнтӗ.

— Елен, эсӗ халӗ те тумланман тем?—терӗ тултан кӗнӗ амӑшӗ.— Сана паҫӑрах клуба пыма чӗнсеччӗҫ... Аҫу та унта кайрӗ пулмалла, тем, пуху пулать, терӗ-и ҫав? Апат ҫимесӗрех тухса кайрӗ. Пуху тесен...

— Халех, анне... Собрани мар, агрокружок занятийӗ пулать. Кӗҫӗр Салампи доклад туса памалла, теҫҫӗ.

«Саламппи» тенӗрен амӑшӗ тем каласшӑнччӗ пулас та — каламарӗ.

Лена аттине хывса боти тӑхӑнчӗ, тумланчӗ, тӗкӗр умне пырса тӑчӗ те кӗске сарӑ ҫӳҫне берет айне тирпейлесе пуҫтарчӗ, вара васкамасӑр пӳртрен тухса кайрӗ.

— Ытла ҫӗрлене юлса ан ҫӳре, хӗрӗм, тем тӗлне пулӑн... Ҫылӑх вӑл ҫири кӗперен те ҫывӑх,— тесе юлчӗ амӑшӗ. Вӑл ҫакна Салампи ҫинчен аса илтерсе каланине Лена тӳрех сисрӗ.

«Ан хӑра, анне, маншӑн, хамӑнне хам пӗлетӗп», тесшӗнччӗ вӑл, анчах ним те шарламарӗ.

Клубра халӑх нумаях мар-ха, пухӑнса ҫитмен. Лена ашшӗ, пӗр пухуран та юлманскер, яланхи йӑлипе чи малтан килнӗ пулас, кӑмака ҫумӗнче пӗчченех чӗлӗм туртса ларать. Ҫамрӑксем хыҫалти тӗттӗмрех кӗтессе вырнаҫнӑ, тем пирки ахӑлтатсах кулаҫҫӗ. Лена вӗсем патне пырса ларчӗ.

Таруҫпа Маруҫ иккӗшӗ те пӗр пек тумланса килнӗ: шурӑ ҫӑм тутӑрпа, шурӑ чуссӑнккипе, хура сӑхманпа. Иккӗшӗ те питӗ хаваслӑ, чӑх кӑтикленӗ пекех ахӑлтатса кулаҫҫӗ. Павӑл вӗсене тем каласа култарать. Лена пырсан, вӑл калама чарӑнчӗ, хӗре саламласа алӑ тытрӗ. Чӗмсӗр Виктор пӗр сӑмахсӑрах, ирӗксӗртереххӗн тенӗ пек ҫеҫ, алӑ пачӗ.

— Лена, эсӗ пӗлме кирлӗ: Саламппи час килет-и?—ыйтрӗ Маруҫ ытахальтен кӑна. Шурӑ тутӑр ҫыхнипе унӑн пичӗ пушшех хӗрлӗ курӑнать, тулли кӗлетки хускалмассерен сӑхман пӗрмечисем ҫурӑлса каяссӑн туйӑнаççӗ,— сӗлӗ кӗлтине ытла пысӑк тусан, ҫыххи ҫапла чӑтаймассӑн туйӑнать.

— Чӑнах та, Лена, эс пӗлместни?—ыйтрӗ ҫамрӑк Таруҫ та. Шурӑ тутӑр ҫыхнипе унӑн ҫӳхе пичӗ пушшех шуррӑн курӑнать, ҫинҫешке кӗлетки ачасем ҫыхнӑ пӗчӗк ыраш кӗлти пек туйӑнать.

— Эсир пӗлмен хыпар та пур-и ялта?—терӗ Павӑл, тӗртсе; унӑн ҫивчӗ чӗлхи туссене те шеллесех тӑмасть. Тус-хӗрсем ӑна куншӑн кӳренчӗҫ пулас, шӑпӑртах пулчӗҫ, Виктор ҫакна кура кӑштах йӑлкӑшса кулчӗ.

— Ӑҫтан пӗлем эпӗ, тен, часах килӗ-ха,— терӗ Лена кӑмӑлсӑррӑн. Хӗрсем Салампи ҫинчен юриех сӑмах хускатнине сиссен, вӑл сасартӑк пӑшӑрханчӗ. Анчах ку чечекӗ кӑна пулнӑмӗн, акӑ кӗҫех ҫырли те пиҫе пуҫларӗ.

Маруҫпа Таруҫ чӗнмесӗр ларчӗҫ-ларчӗҫ те пӗр харӑсах: «Саламппи» — тесе ячӗҫ, унтан иккӗшӗ те пӗр-пӗрне чӑрмантарас мар тесе, калас сӑмахнех каламарӗҫ.

— Калӑр тата, мӗн чарӑнтӑр? Пӗр пуҫланӑ сӑмаха каламасан, вилме выртсан виҫ кун вилеймесӗр асапланать, теҫҫӗ,— тӗртсе илчӗ чаракҫӑр чӗлхеллӗ Павӑл.— Пӗрерӗн калаҫӑр, мӗн эсир, стройри салтаксем командира саламланӑ пек, харӑс калаҫатӑр?

— Саламппи халӗ те ачин ятне ҫыртарма сельсовета пыман, тиҫ,— пӑшӑлтатса каларӗ Таруҫ.

— Мӗн ҫыртаран унта, ачин ашшӗ камне пӗлмесӗр? Ашшӗ камне пӗлмест, титӗҫ! Вӗлтӗрен ӑшӗнчен тупнӑ мар-и?—хытах каларӗ Маруҫ, анчах хӑй ҫине Виктор хаяр куҫпа пӑхнине асӑрхарӗ те шӑпланчӗ, хулӑн тутине тутӑр вӗҫӗпе хупларӗ.

«Карма ҫӑвара тутӑр карса та чараймӑн», шухӑшларӗ Лена тарӑхса, вара пат татса каларӗ:

— Мӗн тума кирлӗ сире ашшӗ? Ачан амӑшӗ пур!

Каларӗ те — урӑх хӗрсен ушкӑнне куҫса ларчӗ.

— Эс анчах уш...— тупӑннӑ сарпике!—терӗ Маруҫ, вӗтӗлтетсе. Ӗлӗк хӑй Салампие чӑтма пултараймастчӗ, Валери пирки кӳлешетчӗ, халӗ Саламппи майлӑ пулма тӑрӑшать.

— Ахаль ҫавнашкал шӑрчӑк вӑл, пурин ҫине те тарӑхса ҫӳрет,— пӑшӑлтатса илчӗ Таруҫ. Пӗччен чух вӑл Лена пирки кун пек каламӗччӗ-и, тен, халӗ тусӗн кӑмӑлӗшӗнех каларӗ.

— Тарӑхтӑр-иҫ, пирӗншӗн пулсан мӗн? Ик айкки те тӑвайкки,—терӗ Маруҫ хыттӑнах, хӑй ҫав хушӑрах Виктор еннелле шиклӗн пӑхса илчӗ. Юрать, лешӗ илтеймерӗ: вӑл хӑйӗн тусӗпе шахмӑтла выляма пуҫларӗ, халь ӗнтӗ унран пӗр сӑмах та илтеймӗн. Павӑлӗ те хӗрсен сӑмахне хӑлхана чикмест, пӗрмай хӑй калаҫать.

Клуба халӑх пухӑнса ҫитсен тин Саламппи килсе кӗчӗ. Лена ӑна алӑк умӗнче ӑнсӑртран хирӗҫ пулчӗ те хӑй сисмесӗрех йӑлкӑшса кулса алӑ пачӗ. Саламппи ӑна кӑмӑллӑн саламларӗ.

— Кӗтсе те ывӑнтӑр пулӗ, час килеймерӗм: ачана чӑпӑл турӑм та...

Лена чӗрине каллех ҫак сӑмах пӑчӑртаса илчӗ.

Саламппи сцена хыҫӗнчи пӗчӗк пӳлӗме кӗчӗ те пальтоне хывса ҫакрӗ, чечеклӗ хӗрлӗ тутӑрне салтса, ҫивӗтне пуҫ тавра кӑшӑлласа ҫыхрӗ. Лена ӑна ҫак пӗчӗк пӳлӗмре тумланнине сахал мар курнӑ. Спектакльсем лартнӑ чух вылякансем ҫак пӳлӗмре тумланатчӗҫ. Салампи ун чухне яланах хаваслӑн кулатчӗ е хуллен юрлатчӗ. Акӑ халӗ вӑл шӑпах, хаваслӑ та мар, ытлашши салхуллӑ та мар. Сцена ҫине тухас умӗн кӑна вӑл кӑшт ҫеҫ палӑрмалла йӑлкӑшса кулчӗ.

— Пултарӑп-ши, Лена?

— Ой, эсир те пултараймасан вара! — терӗ Лена хаваслӑн, хӑй ҫа-

Юрӑ уявӗ умӗн

Ешӗл уҫланкӑра хут купӑс сасси чӗрене ҫӗклентерсе хитрен янӑрать. Часах пӗрисем карталанса тӑраҫҫӗ, теприсем харӑслатса алӑ ҫупма пуҫлаҫҫӗ те, ташӑ ҫеми такмаклаҫҫӗ.

Ушкӑн варрине шур акӑш пек чипер хӗрсем ярӑнса тухаҫҫӗ. Маттур каччӑсем те вӗсенчен юлмаҫҫӗ. Ҫамрӑксем чӑвашла та, вырӑсла та, украинла та, тутарла та ӑста ташлаҫҫӗ.

Кӗҫех юрӑ уявӗ ҫывхарать. Ҫамрӑксем каҫсерен районти культура ҫуртне пухӑнса репетицисем ирттереҫҫӗ. Анчах паян, канмалли кун, вӗсем пӑчӑ пӳлӗмре ларасшӑн мар. Ҫуллахи илем, ешӗл вӑрман илӗртет вӗсене. Канмалли кун ир пуҫласа каҫчен вӑрманта юрӑ-кӗвӗ шӑранать. Ҫамрӑксем ӗҫре кӑна мар, юрӑ уявӗнче те мала тухасшӑн тӑрӑшаҫҫӗ.

Укерчӗкре: Красноармейски ҫамрӑкӗсем канмалли кун вӑрманти уҫланкӑра юрӑ уявне хатӗрленеҫҫӗ.

П. Ефремов фотоӳкерчӗкӗ.

вăнтах вăтанса хĕрелсе кайрĕ: «Мĕншĕн-ха эпĕ ăна «эсир» терĕм?»

— Пултаратăн, Салампи!

«Иксĕмĕр ҫинчен ҫынсем тĕрĕс мар шутлаҫҫĕ. Эсĕ ман тăшман мар, эпĕ сана юрататăп, нихҫанхинчен хытăрах юрататăп!» терĕҫ Ленăн ҫырă куҫĕсем.

— Пултаратăн, Салампи!

«Тавах сана, ырă кăмăллă тусăм!! Эпĕ сана кӳренместĕп, тăшман тесе те шутламастăп. Эсĕ халĕ ман ҫине ырă куҫпа пăхни мана питĕ савăнтарать, ҫапах эпĕ мĕн шухăшланине эсĕ йăлтах пĕлес пулсан, пĕр каҫрах ватăлса кайăн!» терĕҫ Салампин пысăк кăвак куҫĕсем; хăй ним те каламарĕ, темшĕн сылтăм куҫхаршине вăта пӳрнипе хуллен сăтăрса илчĕ те сцена ҫине тухрĕ.

Унăн докладне Лена пĕр сăмах сиктерми итлесе ларчĕ. Пирĕн ҫĕршывра мичуринла наука морганистла-вейстманистла суя наукăна ҫĕнтерни ҫинчен Салампи питĕ лайăх каласа пачĕ. Сăмах майĕн вăл кӳршĕ колхозри паллă садовода Саланова та аса илчĕ, унăн ĕҫĕнчи ҫĕнĕ меслетсем ҫинчен, колхоз садĕнче ҫĕнĕ сортлă улмуҫҫисем ӳстересси пирки нумай каларĕ. Малтанах вăл питĕ пăлханчĕ, юлашкинчен хĕрсе кайрĕ те докладне хĕрӳллĕн вĕҫлерĕ. Лена пуринчен малтан алă ҫупса ячĕ... Унтан колхозниксем Салампие ыйтусем пама тытăнчĕҫ, никамран ытларах Лена ашшĕпе Павăл нумайрах ыйтса пĕлме тăрăшрĕҫ...

Агрокружок занятийĕ питĕ лайăх иртрĕ. Ваттисем тухса кайсан, клубра ҫамрăксем кăна юлчĕҫ. Виктор таҫтан купăс туртса кăларчĕ, никам ҫине пăхмасăр, ташă ҫемми туртса ячĕ. Ҫамрăксем малтанах вырăнтан хускалмарĕҫ, шарламарĕҫ.

— Хамăн пуҫласа парас пуль, ман ура ҫăмăл пулаканччĕ,—терĕ те Павăл, ташă картине шуса-юхса тухрĕ. Ахаль чухне шавлама юратаканскер, ташăра вăл нихҫан та тăпăртатса шав тумасть, вăл ташламасть—мамăк тӳшек ҫийĕн утать, тейĕн; салтак аттисем кĕмсĕртетмеҫҫĕ, хушăран ҫеҫ, пĕр вырăнта ҫаврăннă чух, кăштăртатса илеҫҫĕ, вăрăм шинель арки варкăшать... Ҫăмăллăн, вĕснĕ пек ташлать Павăл, анчах темшĕн, ҫиле хирĕҫ пыракан ҫын пек, хăяккăн ташлать, аллисене хĕрарăм пек саркалать.

Павăл ташласа пĕтерчĕ те хĕрсене йĕркипе ташлатма пуҫларĕ. Черет Маруҫ тĕлне ҫитсен, лешĕ хĕрсем хушшине пытанма тăчĕ, анчах ăна Павăл вăйпах каялла сĕтĕрме тытăнчĕ. Маруҫа вăйпа сĕтĕрсе кăларма пайтах ҫăкăр ҫиес пулать,—ик-виҫĕ каччă ăна аран-аран туртса кăларчĕҫ. Маруҫ яланах ҫапла турткаланса тăма юратать, пĕр ташлама тытăнсан вара — чарса та чарăнмасть. Вăл ик-виҫĕ хут хĕрсем хушшине тарса кĕме хăтланчĕ, ăна пурпĕрех ташă картине туртса кăларчĕҫ, пурте алă ҫупма, шавлама пуҫларĕҫ.

— Ташла тата! Мĕн?!.—терĕ чĕмсĕр Виктор, купăсне малтанхинчен те хытăрах тăсса.

— Эп ку ҫемĕпе ташлама пĕлмес, чăваш кĕвви кала!—терĕ Маруҫ, савнийĕ еннелле ӳпкелешсе пăхса.

Виктор тарăхса кайрĕ: мĕнпурĕ те икĕ ҫемĕ ҫеҫ калама пултарать вăл — ҫул ҫемми те вырăсла ташă ҫемми,— ҫавăнпа халĕ ним чĕнмесĕр купăсне сак ҫине лартрĕ. «Ташла пĕлмене—ҫемĕ килĕшмест», терĕ мăкăртатса.

Павăл ҫавăнтах Кольăна чĕнсе илчĕ те купăс тыттарчĕ, лешĕ именчĕклĕн кулкаласа, купăса ҫăмăллăн тăсса ячĕ. Маруҫ, йывăр лав пек, хуллен тапранса кайрĕ, унтан хĕрсе-хĕрсе пычĕ, тем тĕрлĕ ҫаврăнма пуҫларĕ. Аҫтан вăйĕ тухать-ши — ҫур сехет чухлĕ ташларĕ пуль, ҫаплах чарăнма шутламасть-ха. Хай, ҫимес текен ҫичĕ кукăль ҫинĕ пек... Купăсҫă паҫăрах хашкакан пулчĕ ĕнтĕ, аран-аран турткалашса ларать, ҫамрăксем те вăрттăн кулма, шӳтлеме тытăнчĕҫ, Виктор та вăтанна пуҫларĕ—Маруҫ ҫаплах авăн ҫапнă пек илтерет, кулмасăр, хавасланмасăр, пĕр-пĕр пысăк ĕҫ тунă пек тăрăшса, никам ҫине пăхмасăр ташлать,— урай хăмисем чĕтренеҫҫĕ кăна. Лена хыҫҫăн ҫамрăксем тепĕр хут алă ҫупса ярсан тин, вăл ташласа тăранмасăрах чарăнчĕ.

«Эс анчах уш...»—шухăшларĕ Маруҫ, кулкаласа алă ҫупакан Лена ҫинелле кăмăлсăр пăхса.

Черет йĕркипе Лена та ташлама тухрĕ. Вăл ĕҫри пекех тирпейлĕ, арҫын пек ҫирĕп ташлать, боти кĕлипе «саккăрла ҫаптарать». Ташша вĕҫлес чух вăл сасартăках пăлханса кайрĕ: «ун хыҫҫăн черетпе Салампие кăлармалла. Ташлĕ-ши вăл, ташламĕ-ши? Мĕншĕн юлнă-ши вăл пĕреххут ташлама! Юрать-и халь ăна ҫамрăксемпе пĕрле савăнма-кулма?» шухăшласа илчĕ хĕр, анчах ку иккĕленӳ самантлăха ҫеҫ пычĕ. Лена Салампи умне пырса ура тапрĕ.

Шавлакан ҫамрăксем шăпланчĕҫ, никам та хальхинче алă ҫупмарĕ, кулмарĕ. Коля купăсне тăрăшарах, хитререх калама тытăнчĕ. Лена ҫакна тӳрех сисрĕ те ҫамрăк купăсҫă ҫинелле тинкерсе пăхрĕ. Лешĕ, Салампи ташă карти варрине тухсан, хĕр пек хĕрелсе кайрĕ, питĕнчи чĕкеҫ шатрисем палăрми пулчĕҫ, куҫĕсем ҫăлтăр пек йăлкăшма пуҫларĕҫ. «Мĕнле юратать вăл Салампие, мăнтарăн!» ирĕксĕрех шухăшларĕ Лена. Салампи ташланă чух ĕлĕкрех кĕвĕҫкелетчĕ вăл, анчах кĕҫĕр темшĕн именсе, Салампишĕн вăтанса ларать. «Мĕншĕн ташлать вăл: хăйне хисепе хумасть-и е пире ҫын вырăнне шутламасть? Ҫын умне тухса ҫӳреме намăс чухне мĕнле хăйне хăй ҫапла ирĕклĕн, ҫăмăллăн тыткалама пултарать?» Лена ҫамрăксем ҫине пăхса илчĕ — пурте шăпах, тĕлĕннĕ пекрех лараҫҫĕ. Маруҫ кăна Таруҫа:

— Ай, кур-ха, Коля Салампие ҫисе ярас пекех пăхса ларать,— терĕ пăшăлтатса. Вара шăпăртах пулчĕҫ. Ҫак самантрах Лена тӳсме ҫук вăтанса, тарăхса кайрĕ, ăна такам сивĕ шывпа сапнă пек туйăнчĕ: Салампи ташласа пĕтерчĕ те Таруҫ умне пырса тапрĕ, лешĕ, унран хăранă пек пулса, Маруҫ хыҫне пытанчĕ, Маруҫĕ тăчĕ те хăйĕн тусне ҫавăтса алăк патнелле уттарчĕ,— никам та вĕсене тытса чарма астумарĕ. Салампи пĕччен ташă карти варринче пĕр самант тĕлĕнсе хытса тăчĕ. Тен, ҫак самантра вăл ҫĕр тĕпне анса кайма та хатĕрччĕ пуль. Акă вăл сылтăм куҫхаршине хуллен сăтăрса илчĕ те ташă картинчен тухрĕ. «Мĕншĕн вăл куҫхаршине сăтăрать-ха? Ĕлĕк ун пек марччĕ-ҫке?» ыйтрĕ хăйĕнчен хăй Лена, ним шутлама пĕлмесĕр.

Ташă картине каллех Павăл тухрĕ, вăл юриех кулăшла ташлама тытăнчĕ, анчах Лена ун ҫине ҫаврăнса та пăхмарĕ: Салампипе Кольăна хытă сăнарĕ. «Салампи!»—теҫҫĕ Коля куҫĕсем,—эпĕ сана пурпĕрех ытараймастăп... ытараймастăп... эсĕ такамран та ырă, таса, илемлĕ!» Лена ăна ҫапла ăнланчĕ.

Салампи кăштах ларчĕ те, ҫамрăксем Павăл ташшинчен кулма пуҫласан, ҫын сисиччен тăрса, алăк патнелле утрĕ, ăна Ленăпа Коля ҫеҫ асăрхарĕҫ. «Эсĕ такамран та лайăх!.. Эсĕ пурпĕрех айăпсăр!.. Эпĕ саншăн чунăма парăттăм!» тесе кăшкăрчĕҫ купăсҫă куҫĕсем, анчах ăна Лена ҫеҫ чунĕпе илтсе ăнланчĕ...

Салампи тухса кайнă чух Коля купăс калама чарăнчĕ.

— Мĕн эсĕ?—терĕ ăна Павăл.—Мĕн, походри салтак пек, на ходу ҫывăратăн!.. Ывăнтăн пулсан, пар Виктора — ваттисене асăнса калатăр пĕрре!..

Виктор, тунсăхласа ларнăскер, хăй пĕлнĕ пĕртен-пĕр ташă ҫеммине хаваслăн туртса ячĕ, вара пĕрмай пĕр тӳмесем ҫинех икĕ пӳрнипе пусса, ҫемме ним улăштарми, йăлăхтармалла пĕр пек калама пуҫларĕ...

Лена киле пĕчченех таврăнчĕ. Ҫурҫĕр иртнĕ пулин те, килтисем ҫывăрма выртман-мĕн, ашшĕ Салампи доклад тунине мухтаса ларать. Ун йăли ҫапла: пухусенче кам мĕн калаҫнине киле килсен йăлтах арăмне каласа кăтартать. Хĕрĕ салхуллă килсе кĕнине те асăрхамарĕ вăл, амăшĕ кăна сисрĕ. Ҫывăрма выртсан та хĕрĕ час лăпланмарĕ, вăл час-часах йывăррăн сывланине кăмака ҫинчи амăшĕ илтсех выртрĕ, анчах ним те шарламарĕ... Ыран та ыйтса пĕлĕ-ха! Хĕрупраҫ хуйхи-суйхине амăшĕн пĕлмеллех, унсăр мĕнле пултăр...

Ленăна ҫаплах пĕр шухăш канăҫ памасть. Мĕн шутларĕ-ши Салампи, ташă карти варринче пĕччен тăнă чух? Мĕн шутлать-ши халь вăл килĕнче, ҫывăрать-ши е манашкалах асапланса выртать-ши? Пĕлнĕ-ши вăл ялйыш хăйне ҫапла кĕтсе илессе?

«Сад эрни» питĕ лайăх иртрĕ. Колхозниксемпе пĕрле шкул ачисем те колхоз садĕнче тăрăшса ĕҫлерĕҫ — ҫĕнĕрен икĕ пин кăк йывăҫ лартрĕҫ. Вăтă садоводсемпе пĕрле Салампи пĕр уйрăлмасăр ĕҫлерĕ, тĕрĕссипе, мĕнпур ĕҫе вăл йĕркелесе ертсе пычĕ. Юратса тунă ĕҫ кирек кама та усăлтарать, хаваслантарать — Салампи те ҫак кунсенче малтанхинчен хаваслăрах пек туйăнчĕ. Лена унтан уйрăлма та пĕлмерĕ. Иккĕшĕ вĕсем пĕр-пĕрне хăнăхса ҫитрĕҫ, нихҫанхинчен те лайăхрах килĕштерекен пулчĕҫ. Ҫамрăксем те нумайăшĕ Салампи ҫывăхнерех пулма тăрăшрĕҫ, шкул ачисем вара ун тав-

рах яваҫҫа, шавласа ёҫлерӗҫ. Пӗр каҫхине, садран тавраннӑ чух, Саламппи Ленӑна хӑйсем патне калаҫса ларма чӗнчӗ. Ҫул юппинче уйрӑлас умӗн телейлӗн кулса каларӗ:

— Лайӑх ҫынсем пирӗн, Лена, ырӑ ялйыш! Ҫавӑнпа эпӗ вӗренсе тухсан та хамӑр ялах ӗҫлеме килес тетӗп.

Лена нимех те калаймарӗ, Саламппи ялйышпа кӑмӑллӑ пулни ӑна хӑйне те савӑнтарчӗ. Килне ҫитсен вӑл хӑпӑлхапӑл апат ҫирӗ, тумланчӗ те Саламписем патне тухса кайрӗ.

— Ытла ҫӗрлене ан юл, тем курасилтес пур сирӗнпе... Ҫылӑх вӑл ҫири кӗперен те ҫывӑх,— тесе юлчӗ кӑмака ҫинчи амӑшӗ. Ашшӗ чӗнмерӗ, тухса каякан хӗрӗ ҫине куҫлӑх урлӑ пӑхса илчӗ те каллех хаҫат вулама пикенчӗ.

Лена пырса кӗриччен Саламппи пӗчӗк Валерике шыва кӗртрӗ те ҫывӑрма вырттарчӗ, хӑй пуҫ ҫума тытӑнчӗ. Амӑшӗ паян кӑшт вӑй илнӗ пек пулчӗ, халӗ харлаттарсах ҫывӑрать. Саламппи пуҫ ҫуса пӗтерчӗ, пӳрте тирпейлерӗ, вара ҫӳҫ уҫма тӗкӗр умне ларчӗ. Алӑка шаккани илтӗнсен, пысӑк тутӑр пӗркенсе, ҫенӗке чупса тухрӗ.

— Ой, Леночка! Килместӗн пуль тесе хӑраттӑм... Ан ятла, кӗр. Хывӑн, ак ҫакӑнта ҫак пальтона, кӳр ҫакса ярам...

Пальто ҫакма кармашнӑ чух тутӑрӗ сӗвӗнсе ӳкрӗ те, йӗпе ҫӳҫӗ йӑрӑс пӗвӗ тӑрӑх хумлӑн-хумлӑн саланса кайрӗ, пӗтӗм кӗлеткине хупласа хучӗ. «Мӗнле илемлӗ!» ирӗксӗрех шухӑшларӗ Лена. Ӗлӗкрех вӑл ҫак илеме курса кӗвӗҫетчӗ, халӗ ак хӗпӗртет. Анчах ун савӑнӑҫне ӗненӗ-ши Саламппи? Акӑ вӑл вӑрӑм ҫырӑ ҫӳҫне тураса уҫрӗ те ҫивӗтлеме тытӑнчӗ.

— Икӗ ҫивӗт туса пуҫ тавра ҫыхха, Саламппи, питӗ килӗшет сана,— терӗ Лена йӑлӑннӑ пекех.

— Килӗшнине мӗн калӑн ӗнтӗ,— йӑлкӑшса кулчӗ Саламппи, хӑй ҫапах та икӗ ҫивӗт тума пуҫларӗ.— Кӗнекесем пӑхса лар-ха унччен эсӗ, Лена, эпӗ часах...

— Санӑн лайӑх кӗнекесем нумай,— терӗ те Лена пӗр кӗнекине уҫрӗ.— Семен Саланов алӑ пуснӑ-ҫке кунта!

— Эпир унпа пӗрле вӗрентӗмӗр. Питӗ лайӑх каччӑ.

— Пӗлетӗп. Хамӑр сад валли саженецсем илме кайсан куркаласа калаҫнӑччӗ.

«Ҫавӑ мар-ши?—шухӑшларӗ сасартӑк Лена.— Мӗншӗн кӗнекесем парнелетӗр-ха, сахал-им пӗрле вӗренекен хӗр, пурне те парне парса ҫитереймӗн... Ҫук, вӑл пулма кирлӗ мар, унӑн хӑйӗн «фаукарийӗ» пур»...

Кӗнеке хушшинчен сасартӑк сӑнӳкерчӗк тухса ӳкрӗ, Саламппи ӑна вӑрттӑнрах ҫӗре пуҫтарса хума астуман пулас.

— Ку мӗнле каччӑ, питӗ салхуллӑ сӑнлӑскер? Ах, ҫӳҫӗсем мӗнле вӑрӑм, поэт пекех. Кулмасӑр пӑхса ларать, такам ҫине тарӑхнӑ пек... Эпӗ ҫакнашкал серьезнӑй каччӑсене юрататӑп. Кам вӑл?—терӗ Лена, лӑпкӑнрах каласа тӑрӑшса, анчах чӗри кӑртах сикрӗ.

«Ҫакӑ! Мӗн тесен те ҫакӑх, чун сисет»,—шухӑшларӗ хӑй ҫавӑнтах. Саламппи ун шухӑшне сисмесӗр каларӗ:

— Анатолий Алмазов вӑл, ҫамрӑк композитор, питӗ талантлӑ, теҫҫӗ пурте. Халӗ Хусанта консерваторире вӗренет.

«Апла ҫакӑх иккен!» — шухӑшларӗ Лена.

— Мӗнле майпа паллашма пултартӑн унпа?

Саламппи, пӗр самант Лена куҫӗнчен пӑхса, чӗнмесӗр тӑчӗ, унтан васкаса каларӗ:

— Валерий тусӗ вӑл. Маньчжурире иккӗшӗ пӗрле ҫапӑҫнӑ... Эсӗ пӗлме кирлӗ: Валерий ун ҫинчен ҫырса пӗлтерместчӗ-им?

«Валерий Маньчжурирен ман пата ҫырман, сан пата ҫырма пуҫланӑ», тесшӗнччӗ Лена, анчах калаймарӗ: халь тин мӗншӗн тапратас ӗнтӗ ӑна, пӗр лӑпланнӑ сурана ма ыраттарас?..

Халиччен ялта Ленӑна питӗ хӑюллӑ, харсӑр хӗр тесе шутлатчӗҫ, халӗ акӑ вӑл хӑйӗн телейне туртса илме тӑнӑ хӗр умӗнче те сӑмах чӗнеймест, тӳрӗ сӑмаха та калама хӑяймасть. Хӑравҫӑлӑх-и ку е икӗпитленни-и? Ҫук, вӑл та, ку та мар. Саламппие хур тӑвас килмест унӑн, сӳннӗ вута тепӗр хут чӗртес килмест. Валерий сывах тавраннӑ пулсан, тен, Лена ҫак пӳрте ура ярса пусас та ҫукчӗ пуль, акӑ халӗ ӑна ҫакӑнта килмесен урӑх ниҫта кайма пултарассӑн та туйӑнмасть, Саламппирен лайӑхрах тус тупаяс ҫук пек туйӑнать. Ҫапах иккӗшин хушшинче тата тепӗр чӑрмав пур. Лена ӑна пӗлесшӗн мар пек пулма тӑрӑшать, манма шутлать, анчах лешӗ канӑҫ памасть. Акӑ вӑл канӑҫсӑрлӑх сӑлтавӗ каллех чӗрене пӑчӑртать...

Пӗчӗк Валерик йынӑшса вӑранчӗ те ҫиййӗнчи утиялне сирсе пӑрахрӗ. Саламппи ӑна пусӗнчен лӑпкаса каллех ҫывратса ячӗ.

«Кам ун ашшӗ? Валерий-и? Вӗсем иккӗшӗ хӗрӗх пиллӗкмӗш ҫул станцӑра тӗл пулнӑ, теҫҫӗ... Анчах ачи Валерий сӑнлӑ мар. Тен, Саланов?.. Тен, лешӗ, композиторӗ?..»

Халь ӗнтӗ кӳлешме сӑлтавӗ те ҫук темелле, анчах мӗншӗн Ленӑн чунӗ ыратать? Вилнӗ савнине те кӳлешме пулать-им? Валерипе Ленӑна савнисем вырӑнне никам та хуман, ахаль лайӑх юлташсем, кӳршӗсем, тетчӗҫ. Валерий хӑй те ҫаплах шутлатчӗ пулас. Анчах Ленӑн хӗр ӗмӗрӗ пӗр уншӑн кӑна иртмерӗ-ши? Саламппипе Валерий пӗрле ҫӳремен пулин те, пӗр-пӗрин патне ачаран ҫырусем ҫырман пулин те, вӗсене пурте мӑшӑр тетчӗҫ! Мӗншӗн? Ӑҫта-ха сӑлтавӗ?

— Ашшӗ мӗнлескер, студентах-и?— сасартӑк, хӑй те сисмесӗрех персе ячӗ Лена.

— Хам та пӗлместӗп,— терӗ Саламппи, айӑпа кӗнӗ ҫын пек, кулас килмесӗр кулса. Ҫавӑнтах сылтӑм куҫхаршине вӑта пӳрнипе хуллен сӑтӑрса илчӗ.

Лена куҫӗсем чарӑлса кайрӗҫ, вӑл хӑй мӗн илтнине те ӗненесшӗн пулмарӗ. Мӗнле? Ача ашшӗ камне те пӗлмелле мар-и???

Чечеклентӗр ешӗл сад

Шкулсенче экзаменсем иртнӗ ӗнтӗ, классем те пуш-пушах. Унта халӗ яланхи пек ача-пӑча сасси те илтӗнмест.

Анчах ку вӑхӑтлӑха кӑна. Ҫуллахи каникулсем пуҫланчӗҫ пулин те, ачасем пурпӗрех шкултан, юратнӑ вырӑнсенчен уйрӑлаймаҫҫӗ.

Темиҫе ҫул каялла шкул пахчине ҫамрӑк йывӑҫсем лартнӑччӗ. Халь вӗсем чылаях ӳснӗ ӗнтӗ. Ҫапах та йывӑҫсене ҫулла тирпейлӗн пӑхса ӳстермелле.

Красноармейски вӑтам шкулӗнчи 6-мӗш «Б» класра вӗренекенсем йывӑҫ пахчине ҫав тери юратаҫҫӗ. Вӗсем кунта ботаникӑпа вӗрентекен Марифа Алексеевна Тимофеева ертсе пынипе йывӑҫсем мӗнле ӳснине тӑтӑшах сӑнаса тӑраҫҫӗ, тӗрлӗ опытсем ирттереҫҫӗ. Каникул вӑхӑтӗнче иртттерне опытсем кайран вӗренӳре кирлӗ пуласса вӗсем лайӑх ӑнланаҫҫӗ.

Луиза Юрьевӑпа Миша Михайлов пионерсем шкулти йывӑҫ пахчинчи йывӑҫсене ҫав тери юратаҫҫӗ. Вӗсем ҫура тухсанах йывӑҫ тӗмӗсене кӑпкалатрӗҫ, хӑрнӑ туратсене иртсе тасатрӗҫ.

— Чечекленсе ӳстӗр пирӗн шкулти ешӗл пахча,—терӗҫ вӗсем.

Нумай ҫулсем те иртмӗҫ, ҫак пӗчӗк йывӑҫсем ӳсе пӗтӗм шкул пахчине ешӗл тумпа капӑрлатӗҫ.

Ӳкерчӗксенче: Красноармейски вӑтам шкулӗнчи пионерсем йывӑҫ пахчинче ӗҫлеҫҫӗ.

П. Ефремов фотоӳкерчӗкӗ.

Чăвашсен педагогика институтне тунă çĕрте



Республика столицинче — Шупашкарта халь çĕнĕрен тăвакан çуртсем хушшинче Чăвашсен государство педагогика институчĕн çурчĕ— чи пысăк çуртсенчен пĕри пулмалла. Вăл Советсен çуртĕнчен кăшт тăварахра, Карл Маркс урамĕпе Ленинградски урам хушшинче, ум енĕпе Атăл еннелле пăхса ларакан пулать, вĕренӳ корпусĕ хыçĕнче, Кооперативнăй урамра, студентсем валли тăватă хутлă икĕ пысăк общежити тăваççĕ. Вĕренӳ корпусĕн сарлакăшĕ—104 метр, педагогика институчĕ çурчĕн мĕнпур калăпăшĕ 90 пин кубла метр пулать.

Унта пилĕк факультетра 1600 студент вĕренмелле, вĕсем валли çĕнĕ çуртра 46 вĕренӳ кабинечĕ, 9 лаборатори, 600 çын шăнăçмалăх актовăй зал, 200 çын пĕр харăс вĕренмелĕх вулав залĕсемлĕ библиотека, 200 çын, 100 çын тата 75 çын шăнăçмалăх аудиторисем, И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан педагогика музейĕ, 24 метр тăршшĕ тата 12 метр сарлакăш спорт залĕ пулать.

Вĕренӳ корпусĕн варринчи пайĕ — пилĕк хутлă, ытти пайĕсем— тăватă хутлă пулаççĕ, вĕренӳ корпусĕпе общежити çурчĕсем хушшинче спорт площадки, студентсемпе преподавательсене канмалли сквер пулмалла. Çурт проектне А. М. Крылов архитектор ертсе пынипе РСФСР Çутĕç министерствин архитектурăпа проект мастерскойĕ туса хатĕрленĕ.

Январь, 1954 çул.

А. Родионов ӳкерчĕкĕ.

Ун умĕнче шап-шурă тумлă хĕр ларать. Вăл пирĕшти пек илемлĕ. Унăн пысăк кăвак куçĕсем тӳп-тӳрĕ пăхаççĕ, этем шухăш-туйăмне витĕр курса тăраççĕ тейĕн. Анчах мĕнле-ха вăл хăйĕн ачин ашшĕ камне те пĕлмест? Мĕнлеха вăл çав тери тарăн пылчăка кĕрсе ӳксе те ирхи сывлăм тумламĕ пек таса курăнма пултарать?

СаламПи Лена шухăшне тӳрех сисрĕ, сисрĕ те хĕрелсе кайрĕ.

— Ан айăпла мана,—терĕ вăл сасартăк.— Эсĕ тĕрĕссине пĕлместĕн-ха, никам та пĕлмест. Пĕччен кăна тĕрĕслĕхе пĕлсе тăрасси питĕ йывăр. Ан айăпла... Ман вырăнта пулнă пулсан, тен, эсĕ те...

Халĕ Лена хĕрелсе кайрĕ, унăн куçĕсенче хаяр хĕлхем ялкăшса илчĕ. Лена-и? Вăл хăй ачин ашшĕ камне пĕлмиччене... çӳрĕччĕ-и?!

— Каласан—нумай калас пулать,— терĕ Салампи ывăннă çын пек вăраххăн.— Атя, шалти пӳлĕме кĕрсе ларар, кунта аннепе Валерике вăратăпăр...

Шалти пӳлĕме кĕрсе ларсан, иккĕшĕ те пĕр хушă чĕнмерĕç. Унтан Салампи хуллен кăна каларĕ:

— Юрату — анне мар, амаçури пулчĕ маншăн... Итле...

...Çурçĕр тахçанах иртнĕ ĕнтĕ, автансем иккĕмĕш хут аватрĕç. Икĕ хĕр çаплах лараççĕ.

Салампи калать-калать те тем аса илсе шухăша каять, йывăррăн сывласа ярать, сылтăм куçхаршине сăтăрса илет те каллех малалла калать. Ĕлĕкрех унăн куçхаршине сăтăрас йăла çукчĕ...

Лена ним шарламасăр итлесе ларать, хушăран çеç куççулĕ витĕр йăлкăшса кулса илет е куçĕсене шур тутăрпа шăлкалать...

Салампи калать. Тытăнчăклăн, мĕн аса илнĕ çавна хăй пултарнă таран калать, нумайăшне калама астумасăр та иртгерсе ярать, анчах хăйĕн куçĕ умне пĕтĕм иртнĕ пурнăçĕ йĕрки-йĕркипе, тĕпĕ-йĕрĕпе тухса тăрать, экран çинчи пек курăнать...

(Малалли пулать).

ВĂЛ КОМСОМОЛЕЦ

Очерк

Иван ГРИГОРЬЕВ

Çуркунне çывхарса килни район руководителĕсене тĕлĕнтермерĕ, мĕншĕн тесен кăçал вăл, хăшпĕр çулхи пек, кĕтмен çĕртен килмерĕ. Районти колхозсем çуракине партин сентябрьти пленумĕ хыççăнах хатĕрленме тытăнчĕç. Кăçалхи çуркунне каярах юлать текелерĕç хăшĕ-пĕрисем, анчах вăл март уйăхĕ вĕçĕнчех хăй çывхарнине систерчĕ, апрель пуçламăшĕнче вара çулсем пăсălма тытăнчĕç, хир те хуралчĕ.

... Геннадий Смирнов ДТ-54 трактор моторне сӳнтерчĕ те кабинăран тухрĕ. Вăл халь çеç кӳршĕри колхозран таврăнчĕ. Āна чугун çул станцинчен минераллă имçамсем турттарма хушнăччĕ. Паян вăл юлашки рейс турĕ.

Геннадие партбюро секретарĕ чĕнтерни çинчен пĕлтерчĕç. «Мĕн тума-ши?» Вăл общежитие кĕрсе тухрĕ те, унта никам та çуккине кура, Бондарев патне кайрĕ. Савăнма та, пăшăрханма та пĕлмерĕ вăл, Михаил Ананьевич мĕншĕн чĕннине те туймарĕ. «Тен каллех пĕр-пĕр колхоза каймалла-тăр», тесе çеç шухăшларĕ Геннадий.

— Эпĕ сана паян иртенпех шыратăп,—сĕтел хушшинчен тухса ал тытрĕ Михаил Ананьевич Бондарев.

— Колхозран тин çеç таврăнтăм, — ответлерĕ Геннадий. — Юлашки удобренисене леçсе патăм.

— Пĕтертĕн-и?—Бондаревăн кăмăллă пичĕ каллех çуталчĕ. Вăл çар çыннисенни пек симĕс пустав кителĕн умри кĕсйинчен автомат-кăранташне кăларса пӳрни хушшинче çавăркала пуçларĕ. Партбюро секретарĕн йăм хура куçĕсем трактористан ăшшăн пăхаççĕ. Çӳçне хыçалалла тураса янă вăл. Темшĕн кăштах пĕтсе кайнă пек туйăнать. Ĕçĕ те нумай ĕнтĕ унăн. Геннадий партбюро секретарĕн сăн курăнмалах тасатнă хром аттине асăрхарĕ те вăтаннă пек пулчĕ. Вăл хăйĕн çупа вараланнă фуфайкине пăхкалаcа илчĕ. «Тумтирĕме лайăхраххине тăхăнмаллаччĕ иккен», кĕтмен çĕртен шухăшларĕ Геннадий.

— Ыран мĕн тăватăн-ха эс?—тракторист именнине кура хăех ыйтрĕ Бондарев.

— Колхозри ĕçсене пĕтертĕм ĕнтĕ, халь трактора техуход тумалла пулать пуль...

— Халех райкома каятпăр, иксĕмĕре те чĕнтерчĕç,—хуравларĕ те Бондарев, сĕтел çинче выртакан блокнотне илсе, кĕсйине чикрĕ.

— Райкомра мĕн тăваççĕ манпа? Эпĕ коммунист мар вĕт, комсомола та кĕмен.

— Райком коммунистсемпе комсомолецсем çинчен çеç шухăшлать-и вара?—кулса ячĕ секретарь.—Райкома кĕме пуриншĕн те алăк уçă, райком хăй те сана лайăх пĕлет. Унта сан пирки те интересленеççĕ...—терĕ те Бондарев, каллех тракториста ăшшăн сăнаса пăхрĕ.

... Райком секретарĕ Димитриев патне МТС-ри çамрăксем пуçтарăннă. Вырăн çитменнипе ытти пӳлĕмсенчен пукансем илсе кĕчĕç. Кунта трактористсемпе комбайнерсем, прицепщиксем пухăннă. Çавна кура Геннадий Смирнов темле пысăк ĕç пирки сăмах пырасса малтанах сисрĕ. Ытти комсомолецсене хисепленĕ пекех, ăна та секретарь патне чĕнни Геннадие савăнтарчĕ, тинех вăл ытла ютшăнми пулчĕ.

Бондарев райком секретарĕпе юнашар пырса ларчĕ. Чӳрече умĕнче, Димитриева хирĕç, Георгий Мушлаевпа Гаврил Васильев ларнă. Мушлаев пĕлтĕр те бригадирта ĕçленĕччĕ. Васильев, нумаях пулмасть, Етĕрнери механизаторсен шкулĕнчен вĕренсе тухнă та Ишлей МТС-не килнĕ. Вĕсем иккĕшĕ те комсомолецсем. Кунта Геннадийĕн пиччĕшĕ Леонид та, унпа пĕрле ăмăртса ĕçлекен Захаров та пур иккен. «Леонид хамăр кунта килессине малтанах пĕлнĕ-тĕр, мапа мĕншĕн каламан-ха вăл?»

— Пурте пухăнса çитрĕмĕр-и, юлташсем?—çамрăксем çине йăл кулса пăхрĕ Димитриев.

Райком секретарĕ вăтам пӳлĕ, хура çӳçлĕ çын. Смирнов ăна халиччен курманччĕ-ха. Димитриев хĕрĕх çулалла çитнĕ пулин те, сăнран çамрăк курăнать.

— Сире ĕç вăхăтĕнчех чĕнтермелле пулчĕ, — терĕ Василий Димитриевич.—Еçĕ питех те васкавлă, юлташсем. Хăвăрах куратăр, çуркунне çитрĕ. Урăх кĕтсе тăма вăхăт çук...

Василий Димитриевич комсомолецсемпе çамрăксен трактор бригадине тăвас пирки каларĕ. Иртнĕ çулсенче МТС-ра кун пек бригадăсем çукчĕ. Çамрăк механизаторсене çак пуçару питех те кăмăла кайрĕ. «Халь ĕнтĕ хамăр пултаруллăха тинех кăтартатпăр», терĕç вĕсем. Кăçал машинăсем те нумай илсе килнĕ. Тăрăшса ĕçлесе, колхозсенче вăйлă тырпул ӳстерессн хăйсенченех килнĕн туйăнчĕ. Бригада ячĕ те çакна лайăх кăтартса парать.

— Сирĕн бригадăрта комсомолецсемпе çамрăксемсĕр пуçне коммунистсем те пур. Вĕсем те нумай пулăшаççĕ. Бригадăра пурĕ вунвиçĕ комсомолец пулать, МТС-рисем Мушлаевах бригадирта хăварасшăн. Унăн ĕçре опыт пур, пултараканскер. Мĕнле, килĕшетпĕр-и, юлташсем? Тен, сирĕн урăх сĕнӳсем пулаççĕ?

— Килĕшетпĕр, килĕшетпĕр,—шавласа кайрĕç çамрăксем.—Мушлаевпа ĕçлеме пулать. Пĕлтĕр те вăл бригадăна лайăх ертсе пычĕ.

— Георгий Степанович, хăвăр мĕнле шухăшлатăр? — Мушлаев еннелле пăхрĕ Димитриев.

— Çамрăксем шанаççĕ пулсан, килĕшес пулать ĕнтĕ,—терĕ Мушлаев.

— Бригадăр помощникне кама кĕртер?—ыйтрĕ райком секретарĕ.

— Гаврил Ильича, Васильева помощник тумалла, — терĕç каллех темиçен пĕр харăс.

— Васильев пултаруллă çын, пире ĕçре нумай пулăшма пултарать.

— Калаçса татăлтăмăр апла пулсан?

— Юрать, юрать, ку питĕ лайăх, килĕшетпĕр, — пĕрне пĕри пӳлсе каларĕç механизаторсем.

Пурте лайăх ăнланчăр тесе, Димитриев комсомолецсемпе çамрăксен бригадин задачисем çинчен каласа пачĕ. Вăл партин сентябрьти тата февральпе мартри пленумĕсен решенийĕсене асăнчĕ.

— Кăçал пирĕн хамăр республикăри кăнтăрти районсене хăвалаласа çитмелле. Пĕлтĕр кашни гектар пуçне пĕрер центнер ытларах тырă пухса илнĕ пулсан, Елчĕксенчен юлмастăмăрччĕ. Вĕсемпе юнашар пулма пур майсем те çителĕклĕ. Кăçал пирĕн тата ытларах тăрăшмалла. Пĕр центнер çеç мар, виçĕ центнер, пилĕк центнер пĕлтĕрхинчен ытларах илмелле. Хамăр района республикăра мала кăларас тесен, пирĕн çирĕп графикпе ĕçлемелле, — терĕ райком секретарĕ.

— Тырă пулать кăçал, çĕрулми пулать,—юрăри пек каласан,—вăл та пулать, ку та пулать, колхозниксем тутă пулсан — çĕршыв та пуян пулать. Çапла-и?—каллех ыйтрĕ те вăл, аллипе сулмаклăн сулса татăклăн хушса хучĕ:—Çапла!

Райком секретарĕн сăмахĕпе килĕшсе пурте шăпăрт пулчĕç. Этажерка çинчи сехет шаккани те уççăнах илтĕнчĕ.

Пухăннă çынсем хăйсене ĕçре мĕн чăрмантарни çинчен каларĕç, çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме пулăшăр, терĕç, Василий Димитриевич тетрачĕ çине тăтăшах темĕн çыра-çыра хучĕ.

Геннадий райком секретарĕ патĕнчен çав тери хавхаланса тухрĕ. Хăнара пулнăнах туйăнчĕ ăна, вăй хутшăннă пек, тaçти çĕнĕ çĕре кайса килнĕ пек... Çак каç вăл çĕрĕпех канлĕ çывăраймарĕ, тепĕр кунне шуçăм çутипех тăрса тумланчĕ те сĕтел хушшине ларчĕ.

— Эсĕ мĕн, çывăрман-им кĕçĕр?—юлташĕсене ыйхăран вăратасран шикленнĕн пăшăлтатса ыйтрĕ Леонид.

— Çывăрнă-çке,—пиччĕшĕ пекех пăшăлтатса шăппăн каларĕ Геннадий.

— Мĕн тăватăн халь? Çыру çыратăн-и?

— Комсомола кĕме хатĕрленетĕп. Ахалĕн, темшĕн, коллектив тулашĕнче пек хама туйăнать. Акă эсир пурте комсомолецсем, пĕрле ĕçлетĕр. Эпĕ хама коридорта тăнă пек туятăп... Илĕç-ши мана?

Леонид ăна хирĕç нимех те шарламарĕ. Те çывăрса кайрĕ вăл, те юри чĕнмерĕ. Геннадий каллех уçса хунă тетрачĕ умне пĕшкĕнчĕ.

Паян, комсомолецсен пухăвĕ пуласса пĕлсен, Геннадий пĕтĕм канăçне çухатрĕ. Вăл çакăн пек хавасланнине пĕрремĕш бригадăрисем курманччĕ-ха. Смирнов пĕринпе шӳт тăвать, теприне ĕçре пулăшать. Захаровпа пиччĕшĕ ăна кăнтăрлахи апата чĕнсен те, вăл столовăя каймарĕ.

— Эпĕ кайран,—терĕ Геннадий аллипе сулса.—Çак сеялкăн дискĕсене лартса пĕтерем-ха, çиесси ништа та тармĕ...

Пĕррремĕш бригадăра тракторсене кăна мар, ытти машинăсене те юсаса çитернĕ. Анчах пĕр сеялкăпа каярах юлчĕç, дисксене улăштармалла пулчĕ. Сеялка юсама Мушлаевпа Васильев хăйсем тытăнчĕç. Геннадий вĕсене çине тăрсах пулăшрĕ. Хăй тракторне техуход туса пĕтерсен те вăл ĕçсĕр лармарĕ.

Пуху пуласса пĕлсен ăна çĕнĕ вăй хутшăннăн туйăнчĕ, çав хушăрах шикленчĕ те.

— Комсомола илеççĕ-ши? Илмесен мĕн тумалла-ха манăн? Юлташсем умĕнче намăс куратăп вĕт,—кунĕпех шухăшларĕ Геннадий.

Апрель кунĕсем хăвăрт иртсе кайрĕç. Пирвайхи çумăрсем хыççăн çанталăк ăшăтса ячĕ. Пĕррремĕш бригада ыран хире тухас тенĕ чухне Геннадишĕн асран каймн самант пулчĕ. Вăл ВЛКСМ райкомĕнчен комсомол билечĕпе тухрĕ те, тӳрех юлташĕсем патне чупрĕ.

— Лĕнька, халь эпĕ те комсомолец!—пĕчĕк ачаллах савăнса, пиччĕшне ыталаса илчĕ Геннадий.—Пĕрле, пĕр тракторпа ĕçлетпĕр. Ан хăра, эпир иксĕмĕр нихçан та кая юлмастпăр. Çапла-и? Захаровран иртетпĕрех. Пирĕн агрегат кăçал пуринчен мала тухма тивĕç.

— Эсĕ ху кăна чапа тухасшăн ан тăрăш-ха,—каларĕ шăллĕне Леонид.—Иксĕмĕр кăна мала тухни çур пуслăх çеç, пирĕн бригадăна мала кăлармалла. Василий Ди-

митриевич каланине мантӑн-им?— куҫне хӗссе илчӗ те Леонид ДТ-54 кабинине уҫрӗ. Кайран, урипе гусеница ҫине пуссан, ун еннелле ҫавӑрӑнса татах хушса хучӗ:— Ҫарта сан пеккисене, пӗлетӗн-и, мӗн теҫҫӗ?.. Салтака вӗренме кансӗр пулсан, ӑна пулӑшаҫҫӗ, мала тухма май параҫҫӗ. Эсӗ Захаровран малта пулма ӗмӗтленсттӗн бригада ӗҫне манатӑн.

— Эпӗ эгоист мар,—ҫирӗпп каларӗ Геннадий.—Эпӗ кайра пулма юратмастӑп, ыттисене те сӗтӗрӗнсе пыма хушмастӑп. Комсомолец яланах малта пымалла.

— Ҫав хушӑрах юлташсене те пулӑшмалла.

— Кирлех пулсан, вӗсене те буксире илетӗп. Ан хӑра.

Те хӑй комсомола кӗнипе мӑнаҫланчӗ Геннадий, те ыран ҫураки пуҫланнипе хавхаланчӗ,—пӗлме ҫук, ҫапах та вӑл ҫав тери ҫӗкленсе кайрӗ. Унӑн хӑвӑртрах хире каяс килчӗ. Тепӗр кунне хӑй ӗҫлекен ДТ-54 маркӑллӑ тракторне «Знамя коммунизма» колхоз хирне илсе тухсан, вӑл хӑйне вӗрентен вӗҫертнӗ урхамах пек туйрӗ.

Анчах унӑн савӑнӑҫӗ те, малтанхи кунах рекорд тӑвас ӗмӗчӗ те кӗтмен ҫӗртенех путланса ларчӗ.

Ирхине ирех Смирновсен агрегачӗ кӗр калчине сӳрелеме пуҫламаллаччӗ. Леонид кӑнтӑрлахи сменӑра ӗҫлеме килӗшрӗ, Геннадий каҫхине сӳрелетӗп, терӗ. «Эпӗ халь пурпӗрех сывӑраймастӑп», терӗ вӑл. Мушлаев бригадир хирӗҫлемерӗ.

Хирти стана ҫитсен, вӗсен пӗтӗм планӗ харама кайрӗ. Халӗ кӗр калчине сӳрелеме шӑпах вӑхӑт ӗнтӗ. Анчах колхоз сӳресене халиччен те хире илсе тухман.

— Гена, чуп-ха правление, колхоз бригадирне е председателе шыраса туп, «зигзагсене» хӑвӑртрах илсе тухчӑр. Эпӗ плугсемпе сеялкӑсене тепӗр хут пӑхса тухам,—хушрӗ Леонид.

Смирнов колхоз правленине чупрӗ. Малтанхи кунах ҫакӑн пек чӑрмав пулни ӑна тарӑхтарса ячӗ. «Мӗнле-ха капла,— шухӑшларӗ вӑл,—ыран-виҫмине акма пуҫламалла, вӗсем халь те сӳре хатӗрлеймен. Ниушлӗ МТС-а ҫеҫ шанса лармалла? Мӗнле чун вӗсен, колхоз руководителӗсен? Ниушлӗ бригадӑн малтанхи кунах.. Ҫук, ҫук, эпир кая юлма пултараймастпӑр...»

Ҫав вӑхӑтра Смирнов хӑй пирвайхи ҫуракине урттернине аса илчӗ, чи малтан «ана пуҫлани» куҫ умне тухса тӑчӗ.

Геннадий Смирнов ҫамрӑклах, вунтӑваттӑ тултарсанах, Муркашра трактористсен курсӗнчен вӗренсе тухнӑ. Ҫуракине тухсан, Смирнов малтанхи хут хӑй тӗллӗн руль умне ларса хире тухнӑ. Малтанхи суха кассине, чӑн ӗнтӗ, хӑй тӗллӗн тӑваймарӗ вӑл. Орлов бригадир вунтӑватӑ ҫулхи ҫамрӑк ачана шансах каймарӗ пулас.

Тракторист вырӑнне Орлов хӑй ларчӗ. Геннадий хӑй ӗҫлеменнине пула пӑшӑрханса ӳкрӗ, кӑштах кӑмӑлсӑрланчӗ те. Пусӑ тавра виҫӗ хут ҫавӑрӑнсан тин Петр Никифорович трактора чарчӗ те, ӑна хӑй тӗллӗн ӗҫлеме хушрӗ.

— Халь яра пар ӗнтӗ,—терӗ Петр Никифорович ҫамрӑка ҫурӑмӗнчен ашшӗ пек лӑпкаса.—Эп кӑтартнӑ пек ӗҫле, тилхепӳне ҫирӗпрех тыт. Ахаллӗн «айӑру» йӗнерӗ ҫинчен хӑвна варкантарса хӑварма пултарать. Ӑнлантӑн-и?

Ҫамрӑк тракторист руле ярса тытрӗ те, урисемпе тормоза пусрӗ, унтан майӗпен, асӑрханса ҫеҫ газ пачӗ. Мотор, ӑна итлесшӗн пулман евӗр, чӑрсӑррӑн кӗрле пуҫларӗ, машина вырӑнтан тапранчӗ, трактор ҫав самантрах, Геннадий сисмен хушӑрах, суха кассинчен тухса сулахаялла пӑрӑнчӗ. Смирнов руле хӑвӑрт сылтӑмалла пӑрса хучӗ, машина аяккалла ҫавӑрӑнса, сухаланӑ ана ҫине кӗрсе кайрӗ.

Геннадий тракторне хыпаланса чарчӗ. Вӑл, те хӑйне халех трактор ҫинчен хӑваласа ярасран шикленнипе, те чӗри ҫӳҫеннипе, малтанлӑха ним тума аптраса ӳкрӗ, пулӑшу ыйтнӑн Орлова пӑхса илчӗ, сӑнран улшӑнчӗ. Унӑн аллисем сивӗ чир чухнехи евӗр чӗтрерӗҫ. Тракторист сӑлтавсӑрах хӑвӑртлӑх рычагне куҫарчӗ, тормозне пускаларӗ те, темшӗн мотора сӳнтерчӗ.

— Миҫе ҫулта-ха эсӗ, ачам?— кӗтмен ҫӗртен ыйтрӗ Петр Никифорович. «Халех машина ҫинчен хӑваласа ярать», чӗри кӑртах турӗ Геннадин. — Малтанах ӑнаҫлӑ пулаймарӗ те, халь пӗтрӗм ӗнтӗ». Тракторист бригадире тӳрех куҫран пӑхаймарӗ, чӗлхи сыхланнӑ пек пулчӗ. Малтанхи кунах ҫапла айванла хӑтланни ӑна пӗтӗм ҫураки ӑнӑҫсӑр вӗҫленессе пӗлтернӗн туйӑнчӗ.

— Вунулттӑра тетӗн-и-ха? — кӑшт куларах тинкерчӗ Орлов. Геннадий унӑн сӑнӗнчен те, йӑваш сассинчен те лешӗ ӑна ытлах ҫиленменнине туйрӗ, анчах хирӗҫ калама унӑн хӑюлӑхӗ ҫитмерӗ.— Суйма ан вӗрен, тусӑм, суйни ирсӗрринчен те ирсӗр япала,—йӑвашшӑн каласа хучӗ Петр Никифорович.—Тепӗр чухне вунтӑваттӑрисенчен те лайӑх тракторист пулаканччӗ. Сӑнран пӑхсан чӑнах та вунултӑ-вунҫичӗ ҫулсенче темелле. Санӑн хӑюллӑрах пулмалла, малтанах хӑраса ӳкмелле мар. Паян эсӗ пӗчӗкрех хӑвӑртлӑхпа ӗҫле, ытти трактористсем пек норма хыҫҫӑн ан хӑвала. Ну, ӗҫӳ ӑнаҫлӑ пултӑр,—терӗ те бригадир, трактор ҫинчен сиксе анса, кусса ҫӳрекен будка еннелле яра-яра пусса утса кайрӗ, тепӗр хут ҫаврӑнса та пӑхмарӗ.

«Шанать-ши вӑл мана, е паянлӑха ҫеҫ ӗҫлеттерет-ши?» пӑшӑрханса шухӑшларӗ таса уйра пӗчченех тӑрса юлнӑ Геннадий. Вӑл юнашар хирелле пӑхкаласа илчӗ. Унта, дизеллӗ тракторсем ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсен пӗр тикӗс сассисем лайӑх илтӗнеҫҫӗ. Трактористсем пусӑ тавра пӗр хуйхӑсӑр ҫавӑрӑнаҫҫӗ. Пӗлмеҫҫӗ вӗт вӗсем ҫамрӑк трактористӑн хуйхине, унӑн пирвайхи ӑнӑҫсӑр пуҫламӑшне! Тата миҫе хутчен ҫапла намӑс курмалла пулӗ-ши унӑн, вунтӑватӑ ҫулхи трактористӑн? Ҫам-кам ятламӗ вара?..»

Тарӑхнипе юри тенӗ пекех, мотора та час чӗртеймест вӑл. Унӑн халех прицепщика кӑшкӑрса тӑкас килет, анчах хӑй айӑплине туйса илет те, нимӗн те шарламасть.

Мотор чыхӑна-чыхӑна ӗҫлеме тытӑнать. Геннадий каллех руль умне ларать. «Каҫхине пурпӗрех бригадир мана лектерет ӗнтӗ», шухӑшлать вӑл ҫаплах. Геннадий каҫӑсӑр чӗри смена иртиччен лӑпланаймарӗ, халь-халь ун вырӑнне тепӗр тракторист ӗҫе килессӗн туйӑнчӗ. Унтан та ытларах, учетчика е прицепщика куҫарсан намӑсран тарса ҫӗр тӗпне анса кай...

Ҫавӑнтан вара ултӑ ҫул иртрӗ ӗнтӗ. Ултӑ ҫул каялла Геннадий Смирнов, Хӑймалакасси ачи, Муркаш районӗнчи колхозсен хирӗсенче суха тунӑ, тырӑ акнӑ, тырпул пухса кӗме пулӑшнӑ. Темиҫе ҫул ӗҫлекен трактористсем дизеллӗ тракторсемпе ӗҫленине кура, Геннадий вӗсене чӗререн ӑмсаннӑ, хӑй те вӗсем пек пулма ӗмӗтленнӗ, час-часах вӑл канма мансах гусеницӑллӑ трактор ҫине ларса пусӑ тавра ҫавӑрӑннӑ, каҫкаҫ дизеллӗ тракторсен пайӗсене тепӗр хут вӗреннӗ.

Тӑван пичӗшӗ Леонид та аллӑ пӗрмӗш ҫулта шӑллӗне пӗрлех трактор ҫине ларнӑ. Ҫакӑнтанпа ҫак пӗртӑвансем яланах пӗрле ӗҫленӗ. Геннадий пичӗшне трактор ӗҫне вӗрентнӗ пулин те, вӑл ӑна ҫав тери ӑмсаннӑ. Леонид комсомолец пулнӑ, комсомолецсене Геннадий чи хисеплисенчен хисеплисем вырӑнне хунӑ.

Кӑҫал Смирновсем Ишлей МТС-не ӗҫлеме куҫрӗҫ. Иртнӗ ҫулсенче Ишлей МТС-ӗ республикӑри ытти машина-трактор станцийӗсенчен чылай юлса пынӑччӗ. Кунта опытлӑ механизаторсем ҫитменни те палӑрнӑччӗ. Кӑҫал МТС-а ҫӗнӗрен аллӑ ултӑ механизатор килчӗ. Халь ӗнтӗ комсомолецсемпе ҫамрӑксен пӗрремӗш бригади кӑна мар, пӗтӗм МТС-ӑн мала тухас шанчӑк пур.

Ҫак шухӑшпа Геннадий колхоз правленине пырса кӗчӗ. Анчах кунта председатель те, бригадирсем те пулмарӗҫ. Смирнов кӑнтӑрла иртичченех чупса ҫӳрерӗ, МТС-а та пырса тухрӗ, Бондарева та, Мушлаева та сӳресем ҫуккине пӗлтерчӗ, Васильева тепӗр хут правление кайса пӑхма ыйтрӗ. Ҫамрӑк комсомолец тем пек тӑрӑшрӗ пулин те, ҫак кун сӳре тума тытӑнаймарӗҫ. Ултӑ ҫул ӗлӗкхи пекех ҫӗнӗ вырӑнта уншӑн ҫураки ӑнаҫлӑ пуҫланаймарӗ. «Вӑт сана комсомолец, вӑт график» ҫиленсе шухӑшларӗ Смирнов.

... Аслӑ ҫулпа «вездеход» пынине Геннадий фарӑсен ҫутинченех палларӗ те тракторне чарчӗ, кабинӑран васкаса тухрӗ. Халь, ҫӗрле, ӑна пӗр-пӗр бригадӑран Бондарев таврӑнассӑн туйӑнчӗ.

Трактор ӗҫсӗр тӑнине машина ҫинчен те асӑрхарӗҫ курӑнать, «Газик» ҫултан пӑрӑнчӗ. Часах Смирновсен агрегачӗ патне райком секретарӗ пырса тухрӗ.

Димитриев ҫамрӑк тракториста сывлӑх сунчӗ те саламласа алӑ тӑсрӗ.

— Ман алӑ вараланчӑк,—мотор кӗрленипе кӑшкӑрса каларӗ Геннадий.

— Тем мар, эпир тӑпраран йӗрӗнместпӗр, — терӗ райком секретарӗ.

Геннадий, калаҫма меллӗрех пултӑр тесе, мотора чарчӗ. Самантлӑха таврара шӑпӑрт пулчӗ, ниҫта пӗр сас-чӳ илтӗнмест. Пӗтӗм уй-хир лӑпкӑн сывӑрнӑн туйӑнчӗ. Димитриев суха касси патне пырса кӑпӑшка тӑпрана тытса чӑмӑртарӗ.

— Мотора мӗншӗн чартӑр?— ыйтрӗ вӑл Геннадирен.

— Калаҫни илтӗнмест те...

— Калаҫма вӑхӑт ҫук халь, тӑванӑм,—ывӑҫ тупанне сӑтӑркаларӗ Димитриев,—ҫуракинче кая юлатпӑр.

— Ӗпле юлатпӑр?—ененмесӗртӗрех пӑхрӗ Смирнов.

— Ҫаплах, юлатпӑр. Хаҫат вуламан-и эсир? Унта сводка пичетлесе кӑларнӑ. Кӗр калчине аталантарнӑ чух республикӑра эпир пӗрремӗш вырӑнтаччӗ, халь акӑ ҫирӗм пӗрмӗшне ҫитрӗмӗр.

— Тепӗр икӗ кунтан эпир акса пӗтеретпӗр,—хушса хучӗ Геннадий, секретарь пӑшӑрханнине кура.

— Икӗ кунтан?.. Тен, виҫҫӗ те иртме пултарӗ?.. Ерипен ӗҫлетпӗр, тусӑм, ерипен... Ҫамрӑксен бригади юлсах каймасть те, анчах эсир ҫеҫ малта пыни пурте мала тухнине пӗлтермест-ха... Эсир халь комсомолец вӗт-ха?..

Райком секретарӗ кайсан та, Геннадий ун сӑмахӗсем пирки шухӑшларӗ. Секретарь пӑшӑрханни ӑна та пӑшӑрхантарчӗ. Халь вӑл хӑй те района каялла туртса пынӑн туйӑнчӗ. «Икӗ кун, икӗ кун...» терӗ вӑл ҫаплах. Мӗнле пулсан та, хӑвӑртрах акса пӗтерсе, урӑх ӗҫе тытӑнас килчӗ унӑн. Техникӑлла культурӑсем акма та вӑхӑт ҫитет ӗнтӗ. Ҫурхи кун ҫулталӑка тӑрантарать, тесе ахальтен каламан ҫав. Апла пулсан—тата лайӑхрах ӗҫлемелле. Мӗншӗн Геннадий комсомола кӗнине ыйтрӗ-ха секретарь? Тен, комсомолец тивӗҫне аса илтересшӗн пулчӗ-тӗр?.. Мӗнле ӗҫлет-ха Смирновсен агрегачӗ? Ӗнер вӗсем палӑртнӑ нормӑран кӑшт ҫеҫ урттерсе тултарчӗҫ. Паян та капла ӗҫлесен—икӗ кунта мар, виҫҫӗре те пӗтерейӗмӗн.

Тепӗр каҫхине, ҫурҫӗрпе, Геннадий патне пичӗшӗ пычӗ те кабинӑна унпа юнашар кӗрсе ларчӗ.

— Мӗншӗн килтӗн эс?—ыйтрӗ Геннадий.

— Ҫывӑрас килмест, — таврӑнчӗ лешӗ.—Захаров агрегачӗ ӗнер норма ҫурӑ ытла тултарнӑ.

— Чӑнах-и? — савӑнса кайрӗ Геннадий.—Пит аван!

— Аванни аван та-ха.. Эпир... Хамӑр ӑмӑртатпӑр вӗт.

— Ӑмӑртатпӑр ҫав... Захаров лайӑх ӗҫлени мана савӑнтарать... Пӗлетӗн-и, Ленька, пирӗн район юлса пырать... Пирӗн бригада ҫеҫ малта пыни, район мала тухнине пӗлтермест, — Димитриев сӑмахӗсене аса илсе каларӗ вӑл.

— Мӗн каласшӑн эсӗ? — ыйтрӗ Леонид.

— Эпир комсомолецсем-ҫке...

Иккӗшӗ те шӑпланчӗҫ. Кайран каллех Геннадий сӑмах хушрӗ.

— Эсӗ килни аван-ха вӑл. Ирччен акма вӑрлӑх ҫитмест, санӑн халех яла чупмалла пулать... Эпӗ кӗҫӗр пурпӗрех ҫак пусса акса пӗтеретӗп. Юрать-и?

Леонид пуҫӗпе сӗлтрӗ те кабинӑран тухрӗ. Часах вӑл тӗттӗмлӗхре курӑнми пулчӗ.

... Хӗвел хӗрелсе тухнӑ вӑхӑтра Геннадий юлашки хут пусӑ тавра ҫавӑрӑнчӗ те юнашар колхоза ҫул тытрӗ. Смирнов агрегачӗ ҫуракине планпа палӑртниччен пӗр кун малтан вӗҫлерӗ. Геннадий сменӑра нормӑна икшер хут урттерсе ҫуртри акрӗ, ҫураки планне 180 процент ытла тултарчӗ. Халь ӗнтӗ таса чӗрепе, ӗҫ пӗтернӗшӗн савӑнса, тепӗр колхоз хирне те кайма пулать. Ҫӗрулми лартма тытӑнмалла...

Хӑватлӑ ДТ-54 хӑрах гусеници ҫинче ҫаврӑнчӗ те, аслӑ ҫул еннелле пӑрӑнчӗ.

„ТĂВАНКАССЕМ“ ПОЭМĂРАН

Алексей АФАНАСЬЕВ

Чечек çинчи хурчĕсемпе
Мăкăртата-мăкăртата
Тяпук мучи мĕн иртенпе
Пĕччен ларатчĕ утарта.

Ял почтальонĕ Кĕркури
Ана çыру килсе тыттарчĕ.
Хыпар ярать-мĕн хулари
Юлташĕ ун—Назар Макарччă.

Назар çырать-мĕн ак çапла:
«Аван пурнать-и, савнă çыннăм!
Яка тухманшăн ан ятла—
Эп çырунe ик-виç хут çыртăм.

Килсе курсамччĕ пĕреххут,
Тусна манатăн — кăмăл юлчĕ.
Çула тухмашкăн пур-тăр ут—
Тăванкассен çунатлă учĕ».

Назар мучимĕр кунсерен
Хула ўснишĕн хĕпĕртет-мĕн.
Çапла вĕçлет юлашкинчен:
«Шур хут çине йăлтах кĕртеймĕн.

Ват кăмăла эс ан хăвар,
Килсе курсам вăрахламасăр».—
Йĕрке йĕрне пĕртте пăсмасăр
Ал пуснă: «Сан тусу—Назар».

Кайса курас-шим чĕннĕ чух,
Кĕтет пуль çав Назар Макарччă.
... Пĕр ирхине ирех Тяпук
Хапха умне лаша кăкарчĕ.

Хул хушшине ял кучченеçĕ
Хĕстерчĕ те хайхи Тяпукăм:
— Каяс-ха,—терĕ,—пит чĕнеççĕ...
Çул вăрăм мар—пĕр вăтăр çухрăм.

* * *

Тĕлĕнмелле иккен кунта:
Ăçта та вышка, тем вучахĕ.
Шутлать Тяпук: ак вăл ăçта
Назар хулин чамасăр чапĕ!

Пасар урамĕ тĕлĕнче
Назар çуртне Тяпук пĕлетчĕ.
Анчах унта, хăма çинче,
Халь çырнă ак: «Девон проспекчĕ»

Шырарĕ вăл Назар тĕлне,
Ун тĕлĕ пур та, çурчĕ çук.
Аптрарĕ, чарчĕ лашине.
Çук, ĕненмерĕ-ха Тяпук.

Кус-пуç арпашнă сăлтавпа
Пăртак аташрăм пулĕ, терĕ.
Çук, йынăшман: ав, чул юпа,
Ав, çывăхрах курнать кĕперĕ.

Назарăн çурчĕ вырăнне
Вăл лашине пырса кăкарчĕ.
Кап-капăр пăхăр чĕлĕмне
Енчĕкĕнчен туртса кăларчĕ.

Упкелешет Тяпук хуллен:
«Кĕтсе ларни те кăлăхах-тăр.
Ку намăса çын куриччен
Аçа кăна çапса пăрахтăр!»

Васкас пулатчĕ-мĕн чĕнсен,
Ма ырана хăвармалла?..
Ăçта ўкессине пĕлсен,
Çĕре тип улăм сармалла.

Пĕр саманта хăй хăнана
Килни çинчен манса кайса,
Кил еннелле вăрт-варт кăна
Пăрса хурать тăрантаса.

— Ыр лашана ывăнтарса
Хăна пуласшăн çўреме
Эп ўстермен-ха, ıçмасса,
Шур сухала, мăн пĕвĕме!

Мыскарана çын пĕличчен
Киле часрах çитни аван,—
Тяпук ăшчик пăшнипелен
Тухсах каятчĕ хуларан,

Анчах пăртакçă пуç таврa
Шухăшласа тăна кĕрсен:
— Каяс-ха,—терĕ,—кантура,
Ăна унта пĕлеççĕ тен...

Чĕлхе-çăвар этемсене
Çитерĕ, теççĕ, Киевах,—
Тяпук мучи нефть кантурне
Пырса кĕрет хăюллăнах.

Тяпук вара хăй нушине
Йăлт каласа пĕтериччен,
Пĕр çынĕ кăмăллă куçне
Илме пĕлмерĕ ун çинчен.

Телефонпа пĕрре кăна
Шăнкăртаттарчĕ хайхискер.
Ыйтать, пулас, вăл Юмана:
— Килте-и,—тет,—çав инженер?

Калаçнă хыççăн трубкине
Илсе вăл хучĕ иплĕн çех:
— Паян ирпе хăйсен ялне
Вăл кайнă,—терĕ,—ашшĕпех.

Тяпук чĕнмерĕ пĕр сăмах.
Мĕскер тăвас? Каяс ялах...
Çула тухман çын тухсанах
Тăман тухать иккен, чăнах!

* * *

... Тяпук ĕнер каçалапа
Çĕн хуларан килсе çитсен,
Темле çĕкленнĕ кăмăлпа
Килсе кĕретчĕ хапхинчен,

Курах каять пахчи хыçне
Ик-виçĕ трактор пынине.

Çынсем те килнĕ машинпа,
Лартаççĕ тимĕр кăмака.
Хăй килĕнче мĕнле шăпа
Кĕтет-ши пирĕн Тяпука?

Сиксе тухать старик умне
Назарăн ывăлĕ Юман;
Пĕрне çеç мар, ик аллине
Тăсать ик-виçĕ утăмран.

Тяпук чĕнмест. Енчĕкĕнчен
Илет те чĕлĕмне хыпать.
Хыпать те... шăрпăк çутиччен
Унта табак хума манать.

— Телей, Тяпук мучи! Ташла!..
Тăванкасра-çке чи малтан —
Сан пахчунта—нефть тухмалла!—
Савăнăçпа çиçет Юман.

Чĕлхесĕр пек хытса тăма
Пултараймарĕ ватă çын:
— Çунать чĕрем ахаль те ман,
Эс вут çине ан сап краççын...

Юман хавасла кăмăлпа
Ĕнентерет ăна çапла:
— Кунта геологсем юпа
Лартса хăварнă. Ак, вула.

— Итле, эс сикнĕ сăпкана
Кам тунăччĕ хурамаран?
Тяпук кўршў хальчен сана,
Юман, юратнă — хурламан.

Ăна манма юрать-и-ха?
Ма ват çынна хисеп-чыс çук?
Эс ан кĕçен, юпах тиха,
Турта курман-ха,—тет Тяпук.

Туяласа килет Назар,
Ун пуçĕнче çĕн шĕлепке:
— Мĕн харкашатăр пит хаяр?
Юман, ан тив-ха старике.

Назар Макарччăна Тяпук
Вăрах тăрсан тин алă парчĕ:
— Çапла ўсет-мĕн сан чапу...
Манран-и санăн кулмаллаччĕ?!

Ыр вырăнта çуралнă эп,
Ыр вырăнтах вилесчĕ ман:
Эсир мана кун пек хисеп
Кăтартасса эп шутламан.

Назар мучи те чĕмсĕр мар,
Сăмах айне пулать-и-ха!
— Апла эппин, эпир начар...
Ман ывăлăм—юпах тиха...

Пĕлетĕн-и, эпир санпа
Ик сўткеленчĕк—ватă супнă...
Тяпук, Тяпук... ватă пуçпа
Тата кама вăрçмашкăн тупнă!

Ачи, ав, нефтьшĕн тăрмашать.
Сан пахчунта нефть пулмалла.
Тяпук калать: Эх, тамаша,
Мĕн нефчĕ пултăр, пур хăмла...

Назар татах ăна пўлет:
— Мана эс хуть те мĕн кала—
Çăвар тути кăна пĕтет,
Чакмастпăр пурпĕр каялла.

Пит çиленсе шăртланчĕ леш,
Чĕтретрĕ шĕвĕ сухалне:
— Манпа текех эс ан ермеш
Ан мăшкăлла Тяпук ятне.

Э, пулас çук ĕнтĕ сана
Тяпукăн хĕрĕ сарă кин.
Çыртма тăрсан та, чавсуна
Çыртаймăн ĕнтĕ халĕ тин.

Назарăн та сăмахĕ пур,
Тяпук вăрçни мĕн япала!
— Кĕнекўне усса ан хур,
Çырманнине эс ан вула...

Хăта, пуççапмăпăр вара,
Тавра ялта хĕрсем пĕтмен.
Çўпçи — хупăлчине кура
Тесе калань ĕмĕртен.

Çитет сана. Хăвна пĕлсен,
Эс хăвăн хĕршĕн ан тавлаш.
Эй, хуранта хур пуç пиçсен,
Хура кушак та хурăнташ!

Ăçта унта Тяпук мучин
Ятлассине тек итлесси!
Çырма енчи лутра мунчин
Чĕтрет тăватă кĕтесси.

Машинасем кĕрленипе
Выляççĕ вак хумсем шывра.
Савăннипе, тĕлĕннипе
Ташласшăн тайăлнă йăмра.

«Тăванкассем» поэмăна пĕтĕмĕшпе «Тăван Атăл» альманахра пичетлесе кăларма палăртнă.

ВĔСЕМШĔН ТĂВАН ÇĔРШЫВ ТĂРĂШАТЬ

Комбинат территорийĕнчи 11-мĕш номерлĕ вăтам шкул хыçне тухсан, куç умне икĕ хутлă илемлĕ çуртсем курăнса каяççĕ. Вĕсем 4-мĕш номерлĕ ача сачĕпе 10-мĕш номерлĕ ача яслийĕн çурчĕсем. Ача сачĕпе ача ясли пир-авăр комбинатĕнче тата 11-мĕш номерлĕ «Легпромстрой» трестĕнче ĕçлекенсен ачисене йышăнаççĕ. Ача садне 114 ача, яслине 110 ача вырнаçать.

Ача садĕнче тăватă ушкăн. 3—4 çулхи ачасем кĕçĕннисен ушкăнне, 5 çулхисем—вăтам ушкăна, 6 çулхисем аслă ачасен ушкăнне кĕреççĕ.

...Эпир ача садне ирхи апат хыççăн пырса кĕтĕмĕр. Унта та кунта ачасен савăнăçлă уçă сасси илтĕнсе тăрать. Ачасем тĕрлĕ вăйăсем выляма тытăннă. Мĕнле кăна вăйă выляма вĕрентмен пулĕ вĕсене!

Виçĕ ачана эпир ешĕл пахчара тĕл пултăмăр. Воспитательницăсем ертсе пынипе ачасем илемлĕ чечексем лартса ÿстереççĕ. Çутçанталăк кĕтесĕнче аквариум пур. Унта ылттăн тĕслĕ пулăсем ишсе çÿреççĕ. 5 çулхи Таня Цай пулăсене апат парать, Алла Щеглова чечексене шывпа çуса тасатать, Валерик Бронников чечексене шăварать (çÿлти ÿкерчĕк).

Ачасене канма, выляма пур условисене те туса панă. Пĕчĕк Алла «Кремль» тунă. Витя карапсемпе интересленет. «Ÿссен моряк пулатăп»,—тет вăл «карапсем» çине савăнăçлăн пăхса (иккĕмĕш ÿкерчĕк).

Садра ачасен сывлăхне кулленех тĕрĕслесе тăраççĕ. Кунта врач пулса Ленин орденĕ илнĕ Фаина Петровна Засыпкина юлташ ĕçлет. Кашни уйăхрах ачасем мĕн чухлĕ хушăннине уйрăм хут çине çырса пыраççĕ. Акă паян та Засыпкина юлташ ачасен йывăрăшне виçсе пăхать (виççĕмĕш ÿкерчĕк).

— Аван ÿсетĕн,—тет вăл Валя Макаровăна виçсе.

...Халĕ 10-мĕш номерлĕ ача яслине кĕрсе пăхăпăр. Ясли талăкĕпех ĕçлет. 54 ача (аслă ушкăнран 22 ача, вăтам ушкăнран 15 ача, кĕçĕн ачисен ушкăнĕнчен 17 ача) яслире кăнтăрла, ыттисем талăкĕпех пулаççĕ. Кунта ĕçлекен воспитательницăсем пурте медицина ĕçне лайăх пĕлеççĕ. Вĕсем хăйсен ĕçне чунтан юратса тăваççĕ, ачасем сывă та тĕреклĕ ÿсчĕр тесе тăрăшаççĕ. А. А. Мусихина юлташ — ачасен чи юратнă воспитательници. Вăл кунĕпех ачасемпе пĕрле. Ачасем те ăна чунтан юратаççĕ. Акă Мусихина юлташ ачасене пухса вĕсене юмах каласа парать (аялти ÿкерчĕк). Ачасем унăн сăмахне чунтанах интересленсе итлеççĕ.

— Пăхатăн та вĕсем çине, чун савăнать,—тет Мусихина юлташ.—Телейлĕ çĕршывра çитĕнеççĕ вĕсем. Ясли—ачасемшĕн иккĕмĕш тăван кил. Çакăн пек лăпкă та мирлĕ пурнăçра иртĕрчĕ пĕтĕм тĕнчери ачасен кун-çулĕ. Анчах пур çĕрте те пурнăç пирĕн çĕршыври пек мар çав...

Кĕçĕн ачисен ушкăнĕнче 18 ача. Çак ачасене Татьяна Петровна Смирнова воспитательница пăхать.

— Çак хĕрачана яслие виçĕ уйăхра чухне илсе килчĕç,—терĕ вăл 8 уйăха кайнă Люся Черепановăна шыва кĕртсе (аялти варринчи ÿкерчĕк). Питĕ лайăх çитĕнет. Пăхăр-ха, мĕнле чипер вăл! Кăмăла каять пулмалла ăшă шыв!

Татьяна Петровна Люсьăна таса кипкепе чĕркерĕ, унтан ăна таса кĕпе тăхăнтартса кровать çине вырттарчĕ. Социализмла çĕршывăн пĕчĕк гражданки çемçе вырăн çинче тутлăн сывăрса кайрĕ.

Ачасене вылямалли теттесем 15 пин тенкĕлĕх туяннă. Велосипедсем, тĕрлĕрен машинăсем, пÿскесем, «калаçакан» пуканесем, «строительство» материалĕсем, параппансем—мĕн кăна çук пулĕ унта! Кашни ача мĕнле вăйă выляс тет, çавна вылять. Витьăна вара велосипед пултăр! (аялти сылтăмри ÿкерчĕк).

Ашшĕ-амăшĕсем яслире ĕçлекенсене тав туса сĕнÿ кĕнеки çине нумай ăшă сăмахсем çырнă.

Ача амăшĕсем Сидоровăпа Челякова юлташсем хăйсен ачисене лайăх пăхнăшăн ясли коллективне чунтан тав туса çыраççĕ.

«Эпĕ, Игорь Косогонов амăшĕ,—тесе çырать Л. Косогонова юлташ,—хамăн ывăла лайăх пăхнăшăн питех те савăнатăп. Пирĕн ачасене малашне те партипе правительство хушнă пек пăхасса шанса тăратăп».

Çак сăмахсенче совет патриотки Тăван çĕршыва, партипе правительствăна хĕрÿллĕн юратни, ачасене телейлĕ те савăнăçлă пурнăç туса панăшăн чунтан савăнни палăрса тăрать.

А. ЖИРНОВ.

И. Никифоровпа Б. Тимкин фотоÿкерчĕкĕсем.



Çултан пăрăнсан

Калав

Василий АЛЕНДЕЙ

М. Жолобов ӳкерчĕкĕсем.

Çиллĕ сулхăн каç. Пĕлĕтсем пĕр канмасăр юхаççĕ. Хутран-ситрен кăна çăлтăр йăлтăртатса илет. Çинахвун йăмрасен хушшипе васкамасăр утать. Акă вăл улт пĕçмехлĕ çĕнĕ пӳрт умне çитсе чарăнчĕ. Пӳртре электричество çутатать. Сĕтел хушшинче икĕ ача ларать, иккĕшĕ те сап-сарă çӳçлĕ. Ванюкпа Петюк иккен. Вĕсем каçхи апат çиеççĕ. Амăшĕ те пукан çинче ларать. Çинахвун пӳрт умĕнче чылайччен тăчĕ. Вăл, сывламасăр тенĕ пекех, пӳртелле пăхрĕ. Çак вăхăтра, сисмен те Çинахвун, ун еннелле кĕтесрен пĕр çын пăрăнчĕ. Васкасах килет. Çинахвун чĕри кăртах сикрĕ. Вăл, картузне пуçĕ çине тата ытларах антарса лартса, малалла утма тытăнчĕ. Хирĕç пулнă çын ăна палламарĕ пулас, чĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Çинахвун тинех уççăн сывласа ячĕ, йăпшăна-йăпшăна, каллех пӳрт умне пырса тăчĕ. Пӳртрисем çывăрма хатĕрленеççĕ. Укахье вырăн сарать.

Çинахвун крыльца умне те çывхарчĕ, пӳртелле çапах та кĕмерĕ-ха. Çав тери кĕрес килет унăн çак киле, çав тери... Çак пӳрте те вĕсем Укахьепе иккĕшĕ пĕрле лартнă. Çак крыльца хăмисене те вăл хăех турттарса килнĕ. Çапла шухăшланă май, Çинахвун ирĕксĕрех хăй арăмĕпе паллашнине, унпа туслă пурăннине аса илчĕ.

...Акă, Çинахвун çартан таврăнчĕ. Кăкăрĕ çинче унăн çап-çутă медальсем. Çинахвун куçĕсем хĕвел пек кулса тăраççĕ. Вăл малтанхи каçах вăййа тухрĕ. Вăййăра ярăнса кăна утса çӳрерĕ вăл, медалĕсем шăнкăртатса çеç пычĕç.

Чăваш çамрăкĕсем карталанса тăрса вăйă тума юратаççĕ. Унта ялти хĕрсем, каччăсем пурте пыраççĕ. Çакăн пек вăйă çураки иртсен пулать. Шурă, кăвак, хĕрлĕ кĕпе тăхăннă хĕрсем пĕр-пĕрипе алла-аллăн тытăнаççĕ те пысăк ункă тăваççĕ. Каччисем çав ункăн тул енче те, шал енче те çӳреççĕ. Ункăн пĕр енне тенкел лартаççĕ. Унта вăйçă тухса ларать. Вăйçă купăсне тăсса ярать те, хĕрсем ала супма тытăнаççĕ. Вăйçине курасчĕ сирĕн, вăйçине! Вăл кăвак кĕпе çинчен ярапаллă шурă пиçиххи çыхнă, çӳçне каялла янă. Çамрăксем ăна пурте хисеплеççĕ. Хăшпĕр чухне вăл хăйне пăхăнтарма та пăхать. Хăтлантăрах... Пурпĕрех кăмăлĕ çаврăнать унăн. Хăйсене кăштах мăнаçлăн тыткаласси вăйçăсен йăлине кĕнĕ ĕнтĕ. Çав каçри вăййа Çинахвун ниепле те манас çук.

Çинахвун ун чухне вăйăра чи малтан ташласа пачĕ. Тухасса мĕнле тухрĕ вăл вăйă карти варрине!.. Тĕлĕнмелле маттуррăн тухрĕ. «Ну-ка, çул парăр-ха, юлташсем», тесе тухрĕ те «ал çупăр!» тесе кăшкăрса ячĕ. Хĕрсем харăссăн алă çупа пуçларĕç. Çинахвун вара чĕркуççине виç-тăватă хутчен «хоп-хоп-хоп!» тесе çапса илчĕ те тусан вĕçтерме тытăнчĕ. Нумайччен, пĕр канмасăр ташларĕ вăл. Кам нумай та лайăх ташлама пултарать, çав çынна ялта çирĕп те тĕреклĕ çын вырăнне хураççĕ. Çинахвун ташларĕ-ташларĕ те, пĕр чипер Укахье умне пырса, урипе тапрĕ. Хĕрĕ турткалашса тăмарĕ. Вĕсем иккĕшĕ мăшăррăн ташша çапрĕç.

Вăйă картинче Варвари те пурччĕ. Вăл акă саппунне тӳрлеткелесе çыхрĕ, сăмса тутрине аллипе сулкаласа, кĕтмен çĕртенех вăйă варрине вĕçтерсе тухрĕ. Çартан тин таврăннă хитре каччă хăй çине пăхтарас тесе пуль, Укахьепе Çинахвун хушшине çĕмĕрттерсе кĕчĕ. Варвари вĕсем хушшинче çаврăнса çӳрерĕ, анчах Çинахвун ун çине пăхмарĕ. Кăмăлсăрланнă Варвари çутă сахал лекекен вырăна çаврăнса çитрĕ те, çынсене систермесĕр, хăй вырăнне кайса тăчĕ.

Çинахвун çак каç паллашрĕ те ĕнтĕ Укахьепе. Ерипен хумханакан йăмра турачĕсем айĕнче вĕсем чылайччен пĕрле ларчĕç. Уçă та ăшă каçчĕ.

Укахьепе вăл çавăн хыççăн кашни каçах курнăça пуçларĕ. Тепĕр çулхине Çинахвун авланчĕ.

Хаваслă кунсем иртрĕç-çке Çинахвунăн! Арăмĕ икĕ ывăл çуратса пачĕ. Иккĕшĕ те сывă, тĕреклĕ. Çынсем вĕсене курсан:

— Каснă-лартнă ашшĕ пекех,— теççĕ.

Сăнĕ, чăн та, ашшĕнни пек вĕсен.

Хăйĕн тăван çемйипе аван пурăнатчĕ Çинахвун. Халĕ йăлт урăхла пулса тухрĕ. Акă ĕнтĕ вăл хăй килне кĕме те вăтанать, хăрать.

Çинахвун çаплах тăрать. Унăн пуçне вĕçĕмсĕр шухăш çавăрать. Çинахвун ĕнтĕ хăй ăçта иккенне те манса кайрĕ. Çынсем шăкăлтатса калаçнине илтсен кăна хăй ăçта тăнине асне илчĕ. Çан-çурăмĕ сăрăлтатса кайрĕ унăн. Çынсем, виççĕн пулас, ун патнеллех килеççĕ. Çинахвун çынсен куçĕ умне пулма хăрарĕ, намăсланчĕ вăл. Вара, йывăççем çумĕпе иртсе, тăкăрлăка тухрĕ. Çынсем ăна асăрхарĕç пулмалла.

Ун хыççăн васкасарах утма тытăнчĕç: хуса çитес, теççĕ пуль ĕнтĕ. Çинахвун çакна сиссен тата хăвăртрах утма тытăнчĕ, уйăх çути лекмен сĕмлĕхе кĕрсе куçран çухалчĕ. Кусем урама тухнă каччăсем иккен. Вĕсем «кам çав!» тесе кăшкăрчĕç те, Çинахвун вĕсене хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕ, малалла та малалла вĕçтерчĕ вăл. Каччăсем ун хыççăн чупа пуçларĕç. Çинахвун вара хăйне вĕлтренпе вĕтеленĕ пекех тапса сикрĕ. Акă вăл, пĕтĕм вăйне пухса, талкăшса пырать. Кĕтесрен пăрăнсан, пĕр пахчана якăлт кăна сикрĕ те акаци тĕмисен ăшне кĕрсе выртрĕ. Каччăсем ун патĕнченех чупса иртрĕç:

— Мĕнле çын вăл?

— Ăçта çухалчĕ?

— Ак, тамаша...

— Вăрă мар-ши вăл?

Çинахвун, çак сăмахсене илтсен, чĕтремеллипех чĕтре пуçларĕ. Мĕн ухмахланчĕ-ха вăл? Мĕншĕн тарать?

Анчах вăтанмалли пурах пуль çав... Çинахвун пуçĕнче Укахье сăнарĕпе пĕрлех тепĕр çын сăнарĕ пур. Вăл Варвари. Варварипе курса калаçкаланине Çинахвун паянхи пек astăвать.

Çинахвун пĕррехинче хăма турттарма кайнăччĕ. Крыльца кăларма хăма кирлĕччĕ ăна. Вăл аран-аран Ара çырмине çитрĕ. Питĕ шутаратчĕ. Лаша урисем тытмастчĕç. Çавна пула Çинахвун шыв арман çуртĕнче çĕр каçрĕ.

Çапла çав, арман çуртĕнчех çĕр каçмалла пулчĕ унăн. Çумăрпа йĕпеннĕ пирки Çинахвун пĕр чĕрĕк эрех шыраса тупрĕ. Лашине курăк çулса пачĕ те хăй пÿрте кĕчĕ, кĕсйинчи эрехне кăларса:

— Ме-ха, тыт çакна, ăшăтса пар!— терĕ вăл Варварие. Варвари пĕр ял çынниех. Вăл вăтăралла çитнĕ ĕнтĕ, халь те качча тухман-ха. Ун çинчен ялта тĕрлĕ халлап çÿрет. Тахçан ун патне пĕр каччă хăтана пынă имĕш. Каччи атă тăхăннăскер пулнă. Варвари ун çине çаврăнса та пăхман:

— Эпĕ атăллă çынна качча тухмастăп, путинккиллисе не çеç кăмăллатăп,— тенĕ пулать вара вăл.

Каччă амăшĕ авалхи çынсен йăлине пĕлекенскер пулнă пуль, тухса кайнă чухне, çиленнипе, виçĕ хутчен алăк тăпсине тапса хăварнă, тет. Çакăн хыççăн Варвари патне никам та хăтана пыман имĕш. Çак халлапа юри кăна туртса кăларнă пуль ĕнтĕ, çапах та карчăксем ун çинчен калаçкалаççĕ. Çапла вара Варвари — «çамрăк ĕмĕр пурпĕрех иртет, вăхăтра савăнса юлас», теме тытăннă, арçынсем умĕнче те ытла туртăнсах тăман. Ах, çапла çав Варвари! Çавна пулах çакăн пек çÿремелле пулчĕ Çинахвунăн...

...Ун чухне Варвари ăна эрех ăшăтса пачĕ. Тин тытнă карас пулă ăшаларĕ. Вĕсем малтан пĕрер черкке ĕçрĕç, унтан апатланчĕç. Апат хыççăн чылайччен пĕрле шăкăлтатса ларчĕç, тулли кĕленче пĕтĕмпех пушатрĕç.

Çинахвун вара Варвари килĕнчен тухрĕ те картишĕнчи сарай тăррине хăпарчĕ. Унта тин çулса хунă ешĕл утă пурччĕ, çавăн çине тухса выртрĕ. Паха утă шăрши сăмсана кăтăклать. Çинахвун пуçне тĕрлĕ шухăш пырса кĕчĕ. Çак утă улăхра ашкăрса ÿснĕ вĕт. Ем-ешĕл курăк çинче, хĕрлĕ, кĕрен чечексем тĕлĕнче, лĕпĕшсем вĕçсе çÿренĕ. Пыл хурчĕсем сĕрленĕ. Мĕн тери хитре пулнă çаран ун чухне! Çинахвунăн ыйхă килет, куç хупăнать. Унтан татах урăх шухăш килсе тухать. Çак хăмана турттарса çитерсен, крыльца пулса та тăрать. Ашшĕ хăй ĕмĕрне кивĕ пÿртре пурăнса ирттернĕ. Вăл акă, çĕнĕ пÿрт, сакăр чÿречеллĕ çĕнĕ пÿрт лартнă. Тавтапуç колхозлă пурнăça...

Çав вăхăтра аялта такамăн ура сасси илтĕнсе кайрĕ. Часах пусма та чĕриклетсе силлене пуçларĕ. Сарай тăррине такам пĕри хăпарчĕ.

— Эх, çав арман пÿртне! Çывăрма та çук, хăнкăласем сырса илчĕç. Тÿсеймерĕм, тула тухас терĕм,— чĕвĕлтетрĕ Варвари,—вăрçмастăн-и кунтах хăпарнăшăн?..

— Мĕншĕн вăрçмалла пултăр,— терĕ Çинахвун.

— Эс хăш тĕлте? Сана таптаса каяс марччĕ. Çутă пÿртрен тухнă хыççăн куç нимĕн те курмасть.

— Эп кунта-ха, сылтăмарах... Таптамăн, сыхланса утсан.

Варвари çав вăхăтра те утиялĕпе тăлланчĕ, те шуса кайрĕ, шăпах Çинахвун питне сĕртĕнчĕ, çÿлĕ кăкăрĕ арçын хулпуççине лекрĕ, аллисем те, тепле майпа, Çинахвун мăйĕ тĕлнех пулчĕç.

— Ак, тамаша, сан çинех ÿкрĕм-çке эпĕ,— терĕ вăл.

Çинахвун ăна хăй çумнерех туртса илчĕ. Ÿсĕртерех пулнă май, унăн юн вĕриленсе кайрĕ. Хăй те сисеймерĕ, Варварие чуптуса илчĕ. Варвари урăх тĕле вырăн сарма каймарĕ те. Çапла Варвари Çинахвун çемйин пурнăçне сĕкĕнсе кĕчĕ...

...Çаксем çинчен темле вăхăтра аса илчĕ Çинахвун. Вара вăл йывăç тĕми хушшинчен хуллен кăна çĕкленчĕ, пахча урлă каçрĕ, тепĕр урама тухма шутларĕ. Çак самантра вăл пĕр тунката çине пырса такăнчĕ, вирлĕн чикеленсе кайса сăмсипе тăрăнчĕ, пичĕ тăрăх ăшă япала юхса анчĕ. Юн каять-и вара? Çинахвун сăмса тутăрĕпе шăлчĕ, юн иккен, вăл юхма чарăнмасть. Мĕн тумалла? Вăл, сăмсине çÿлелле çĕклерĕ, кăштах выртса канчĕ.

«Хам ухмаххине пула ял халăхне култарса çÿретĕп çав. Вăт япала... вăт инкек...» шухăшларĕ Çинахвун.

Сăмсинчен юн кайма чарăнчĕ. Çинахвун каллех малалла сĕнкĕлтетрĕ. Çак вăхăтра ăна сад хуралçи асăрхарĕ.

— Кам унта? — тесе кăшкăрса ячĕ вăл.

Çинахвун шартах сикрĕ, хирĕç чĕнсе тăмарĕ, хÿме урлă сиксе ÿкрĕ те урама тухрĕ. Инкеке тата çамрăксен вăйăйи тĕлнех тухрĕ. Хĕрсен сассисем те илтĕнсе кайрĕç:

— Кам вăл?

— Кам тухрĕ пахчаран?

— Кам унта хÿме çĕмĕрсе çÿрет?

— Тытăр ăна, тытăр!

Хĕрсем çухăрашнине илтсен, каччăсем чупса çитрĕç. Çинахвуна хăвала пуçларĕç. Çинахвун пĕтĕм вăйĕпе тарма тытăнчĕ. Халĕ ĕнтĕ пурпĕрех ниçта пăрăнма та çук. Пур çĕрте те ăна паллама, курма пултараççĕ. Курсан, палласан та ним те пулмасть те. Çинахвун чунĕ çапах та шикленет. Ăна пурте хăйĕнчен кулассăн туйăнать. Çавăнпа вăл çынна курăнасшăн мар. Çинахвун Типĕ çырманалла сикрĕ те хăйăрлă, чуллă çыран тăрăх шуса анчĕ. Çырмара пĕç тĕптаран шыв иккен. Иртнĕ çумăра пула пухăннă пуль. Çинахвун çакăнтан шампăртаттарса тухрĕ те, шăлаварне пăрса типĕтмесĕрех, малалла васкарĕ.

— Ак, шуйттан, Типĕ çырмара та типĕ мар иккен,— терĕ вăл, вăрмана çитсен.

Çинахвун, йывăçсем хушшине пытанса, кăштах чарăнса тăчĕ. Каччăсем вăрман хĕрринех çитрĕç, шалалла кĕмерĕç. Тем ахăлтатса кулчĕç вĕсем, мăкăртатрĕç, вара каялла кайрĕç.

Çинахвун çак вырăнтан чылайччен хускалмарĕ. Чунĕ унăн ыратмаллипех ыратать, чĕри те сиксе тухас пек тапать.

Пуçĕнче çав-çавах Укахьепе Варвари. Укахьен ырă кăмăлĕ, чипер сăнĕ-пичĕ ăна хăй патнеллех туртать, унтан ниепле те уйрăлма çук. Çав вăхăтрах Варвари те кăчăк туртнăн туйăнать.

Арман пÿртĕнче тĕл пулнă хыççăн Çинахвун Варвари патне час-часах каякан пулчĕ. Ялта — Çинахвун арăмне пăрахнă, тенĕ хыпар сарăлчĕ. Варварипе çыхланса кайнă, теççĕ. Колхоз правленине е ял Советне кĕмелле пулсан, Çинахвун хĕп-хĕрлех хĕрелет. Хирте ĕçленĕ чухне те лайăх мар ăна. Ялйышсем пур çĕрте те тăрăхлаççĕ, кулаççĕ. Унисçе карчăк çынсем умĕнчех ăна, пĕр сăлтавсăр тенĕ пек, сура-сура ятларĕ:

— Аскăн! Ачу-пăчуна, лайăх арăмна пăрахрăн-и? Çакăн пек çынна çапса вĕлермелле,— терĕ вăл.

Çапла, ытла та çиленчĕ çав Унисçе. Çапсах вĕлермелле, терĕ. Унисçе калани Çинахвун чĕрине пырса тиврĕ. Ку сăмах — халăх приговорĕ пек пулса тăчĕ. Тĕрĕсех калать пуль çав Унисçе... Икĕ ача, Ванюкпа Петюк. Ванюк виççĕре, Петюк пиллĕкре. Епле лайăх вĕсем. Çинахвун килтен

тухса кайнӑ чухне вӗсем «ӑҫта каян, атте?», «ӑҫта каян?» тесе йӗрсе юлчӗҫ. Ҫинахвун вӗсене юратмасть-и вара? Вӗсене пӑрахать-и? Ҫук, вӑл вӗсене нихҫан та пӑрахас ҫук. Анчах мӗншӗн кайрӗ-ха Ҫинахвун хӑйӗн килӗнчен? Мӗншӗн вӗсенчен уйрӑм пурӑнать вӑл?

— Эх, мӗн пулчӗ-ха капла? Мӗн пулчӗ?—хӑйӗнчен хӑй ыйтрӗ вӑл.—Паҫӑрах киле кӗмеллеччӗ. Ӗҫӗ те пӗтетчӗ. Халь акӑ мӗнле пулса тухрӗ?.. Таркӑн пек тарса ҫӳретӗп-ҫке...

Ҫинахвун ял еннелле пӑхрӗ. Ӑна ҫак ялтан такам хӑваласа янӑ пекех туйӑнчӗ. Ҫемйине пӑснӑшӑн, тӑван ачисене пӑрахнӑшӑн пӗтӗм ял халӑхӗ хӑваланӑ пек туйӑнчӗ ӑна. Ҫавӑн пек шухӑша пула Ҫинахвун ҫул тӑрӑх мар, пахчасем урлӑ, тӗттӗм кӗтессемпе шырлансем тӑрӑх ҫӳрерӗ.

Колхозра Ҫинахвунпа Укахье пӗр бригадӑрах ӗҫлетчӗҫ. Иккӗшӗ те хастар ҫынсемччӗ. Ӗҫре ҫынтан юлмастчӗҫ, кирек хӑҫан та малтисемпе пӗрлеччӗ. Ҫемйине пӑрахса кайнӑ хыҫҫӑн Ҫинахвун сӳрӗкленчӗ, хастарлӑхӗ те чакрӗ, ӗҫе ирпе ирех тухми пулчӗ, ӗҫ вӑхӑтӗнче те час-часах ларса табак туртать; Укахье те, хуйхӑрнипе, чылай хавшарӗ. Хӑй ҫапах та тӳсет-ха. Ӗҫре кая юлни сисӗнмест.

Ҫинахвун текех ӗнтӗ Варварипе интересленме те пӑрахрӗ. Чунӗ сивӗнсех пырать унӑн. Ҫинахвун хӑй йӑнӑш тунине сисет. Унӑн ҫемйине пӑрахмалла пулман. Варварипе паллашни сыпкаланипе ҫеҫ пулнӑ. Ҫапах та Ҫинахвуна ял ҫыннисем килӗштерми пулчӗҫ. Пухусенче куҫкӗретӗнех калаҫҫӗ. Ак ӑна кӗҫӗр те ятларӗҫ, вӑл ӗҫре юлса пырать, ҫемйине пӑрахнӑ, терӗҫ. Ҫавна пула тар тапса тухнӑччӗ унӑн. Пуху хыҫҫӑн вӑл, текех яла култарас мар тесе, киле таврӑнма шутланӑччӗ. Халӗ мӗн пулчӗ тата... Эх, япала...

Ҫапла шухӑшласа ларнӑ ҫӗртех Ҫинахвун ыйха кайрӗ. Юман ҫумӗнчех ҫывӑрчӗ вӑл. Йӗпеннӗ шӑлаварӗ типсе ҫитмен, ҫӗрӗ те нӳрлӗ.

Ҫӗрӗпех вӑл усал тӗлӗк курнӑ-мӗн. Ун ҫине тискер кайӑксем сиксе ӳкеҫҫӗ пек, сӑрт ишӗлсе анать-и е такамсем ӑна хӑвалаҫҫӗ пек, е вӑл тинӗсре путма пуҫлать пек.

Ҫинахвун, хӑранипе, хӑвӑрт-хӑвӑрт сывласа вӑранчӗ. Ним ӑнланаймасӑр сиксе тӑчӗ вӑл. Умӗнче тем ҫӳлӗш юмансем. Ҫинахвунӑн шӑлаварӗ пылчӑкллӑ, пиншакӗ те вараланнӑ. Вӑл каҫхи ӗҫсене аса илчӗ, вара тӳсеймерӗ, аллипе сулчӗ те:

— Ҫитет, таврӑнатӑп, киле таврӑнатӑп! Кун ҫутипех, ҫынсен куҫӗ умӗнчех таврӑнатӑп,— терӗ.

Хӗвел тин ҫеҫ тухать-ха. Ҫинахвун шӑлаварне якаткаларӗ, пиншакне силлерӗ, унтан ҫирӗппӗн пусса, вӑрмантан тухрӗ. Халӗ ӗнтӗ ҫырма тӑрӑх мар, аслӑ ҫулпах ялалла утрӗ. Ҫултан пӑрӑнса ҫӳрени пурнӑҫран пӑрӑнса ҫӳренӗ пекех туйӑнчӗ ӑна.

Акӑ, Ҫинахвун уй хапхинчен кӗчӗ. Ялтан кӗтӳ кӑлараҫҫӗ. Хӗрарӑмсем те, арҫынсем те пур.

— Сывӑ-и, Ҫинахвун?—чӗнчӗ Униҫҫе карчӑк.

— Сывӑ-ха...

— Ӑҫтан эсӗ капла ирех? Ҫӗн арӑмпа ыйӑх та килмест пулас...

— Эпӗ-и? — Ҫинахвун ним калама та аптраса тӑчӗ. — Киле таврӑнатӑп.

— Киле-и?

— Киле.

Униҫҫе ун ҫине тинкерсе пӑхрӗ, тем мӑкӑртатса илчӗ те кӗтӳ еннелле васкарӗ.

Киле ҫитиччен Ҫинахвуна ҫынсем татах нумай хирӗҫ пулчӗҫ. Вӑл вӗсемпе уҫҫӑн калаҫрӗ, хӑй киле таврӑнни ҫинчен пӗлтерчӗ.

Ҫинахвун часах ултӑ пӗсмехлӗ ҫӗнӗ пӳрт умне ҫитрӗ. Ним шухӑшласа тӑмасӑрах, крыльца ҫине хӑпарчӗ, ҫенӗк алӑкне уҫрӗ, пӳрт алӑкне уҫиччен кӑшт шухӑшласа тӑчӗ те:

— Кӗме юрать-и? — тесе ыйтрӗ.

Ҫинахвун пӳрте кӗчӗ. Акӑ, унӑн куҫӗсем Укахье куҫӗсемпе тӗл пулчӗҫ. Укахье ун ҫине сиввӗн, шӑтарас пек пӑхать.

— Ну, мӗн ӗҫпе килтӗн тата? Мӗн кирлӗ?—сӑмах хушрӗ Укахье, чылайччен чӗнмесӗр тӑнӑ хыҫҫӑн.

Ванюкпа Петюк та вӑраннӑ, куҫӗсене сӑтӑркаласа лараҫҫӗ. Ҫинахвун вӗсем ҫине пӑхрӗ те тӳссе тӑраймарӗ:

— Аташса ҫӳрерӗм эпӗ, Укахье. Каҫар,—терӗ.

Укахье ҫаплах ун ҫине пӑхса тӑрать-ха. Вӑл хитре те ҫирӗп. Унӑн икӗ хулӑн ҫивӗтӗ пилӗк тӗлнех ситет.

— Йӑнӑшрӑм. Тек нихҫан та ун пек хӑтланмастӑп,— сӑмах пачӗ Ҫинахвун.

Ҫакӑн хыҫҫӑн пӳртре шӑп пулчӗ, пӗри те чӗнмерӗ. Ҫинахвун чӗри сиксе тухас пекех, вӑл ун-кун пӑхкаларӗ те, малалла иртме хӑяймасӑр, диван хӗррине пырса ларчӗ, унӑн питне тар тапса тухрӗ. «Мӗн тӑвӗ-ши ӗнтӗ Укахье? Йышӑнӗ-ши, йышӑнмӗ-ши? Йышӑнмасан—ҫын кулли пулатӑп вӗт... пӗтрӗ пуҫӑм, пӗтрӗ пуҫӑм...» пӑшӑрханса шухӑшларӗ Ҫинахвун.

Ванюкпа Петюк та ашшӗнчен ютшӑннӑ, Ҫинахвун килсе кӗрсенех иккӗшӗ те амӑшӗ патне пырса тӑчӗҫ, ашшӗ ҫине вӗсем, ют ҫын ҫине пӑхнӑ пек, куҫ илмесӗр пӑхса тӑраҫҫӗ. «Хам ачасем хамран ютшӑнчӗҫ пулас, манран таракан пулчӗҫ», каллех вӗлтлетсе иртрӗ ун пуҫӗнче шухӑш.

Ҫинахвун ним тума аптранӑ пирки табак туртса яма шутларӗ. Анчах чикарккине ниепле те ҫавӑраймасть, те хучӗ начар, тем тусан та ҫыпӑҫмасть, саланса каять. Ҫинахвунӑн аллисем те мухмӑрлӑ ҫыннӑнни пек чӗтреҫҫӗ.

Ҫинахвун урайӗнче выртакан пӗчӗк армана сак ҫине илсе хума шутларӗ. Армана алла тытнӑччӗ кӑна, Петюк чупса пычӗ те:

— Ан ил ӑна. Манӑн вӑл,—терӗ. Армана ашшӗнчен туртса илчӗ те кӑмака айне кайса хучӗ.

Ҫак япала Ҫинахвун чӗрине шартах ҫурса ячӗ, йӗппе чикнӗнех туйӑнчӗ ӑна.

Укахье ҫаплах чӗнмест. Ҫакӑн пек путсӗр упӑшкана сӑмах та чӗнес килмест унӑн. «Алӑк урлӑ та каҫармалла марччӗ, мӗншӗн кӗртрӗм-ха ӑна пӳрте?» шухӑшларӗ вӑл.

Апла иккен: Укахье Ҫинахвуна ним чухлӗ те хӗрхенмест. «Хӑй тунӑ айӑпшӑн тӳстӗрех, асаплантӑрах», тесе шухӑшлать вӑл. Ҫапах та унӑн кӑмӑлӗ кӑштах йӑвашланчӗ. Вӗсем унпа пӗрле пурӑннӑ, пӗрле ӗҫленӗ. Ҫак мыскарана кӑтартиччен вӑл ӑна чун-чӗререн юратнӑ, хисепленӗ. Тунсӑхланӑ вӑл ӑна, хуйхӑрнӑ та. Халӗ те юратать вӑл Ҫинахвуна, юратать. Пӑрахса кайсан та, вӑл таврӑнасса тӳсӗмлӗн кӗтсе пурӑнчӗ, ӑна манмарӗ. Юлашкинчен, Укахье чылаях ӑшшӑн:—Мӗн пӑхса тӑратӑн? Хывӑн,—терӗ.

Ҫинахвун пиншакне хывса ҫакрӗ, ҫӑвӑнчӗ.

— Пӑх-ха, пиншаку вараланчӑк иккен сан,—тӗлӗнчӗ Укахье.

— Пиншак вараланчӑк пулин те, чунӑм халь таса, чунӑм таса,—савӑнӑҫлӑн каларӗ Ҫинахвун, питне шӑп-шурӑ алшӑллипе шӑлса.

Апатланчӗҫ. Ванюкпа Петюк урама тухрӗҫ. Ҫинахвун вӗсем ҫине чӳречерен пӑхса тӑрать. Епле лайӑх ачасем иккен.

Кӳршӗ ҫыннисен ачи Ванюк патне пычӗ те:

— Пӑх-ха, мана атте кӗнеке илсе пачӗ,— терӗ.

— Манӑн та атте пур,— терӗ Ванюк.

Ҫакӑн хыҫҫӑн, темшӗн, Ҫинахвун куҫӗнчен ҫутӑ тумламсем курӑнчӗҫ. Вӑл тепӗр еннелле ҫаврӑнса тӑчӗ.



АСЛĂ АТĂЛ ХĔРРИНЧЕ

Очерк

Валентин УРДАШ,
Илья ПЕТРОВ

Атăл çинче пăр тапранса кайнă-кайманах канăçсăр пулăçсем кимĕсене затона антарчĕç. Çурхи шывпа чŷхенсе ларакан йăмраçŷçесем патне тухрĕç, кăчкă кăларнă туратсене сире-сире шак хумалли лăпкă вырăн, пăр лекмен вырăн шырарĕç. Теприсем, затон хĕрринчи çŷлĕ-çŷлĕ хырсемпе юмансем айĕнче, икшерĕн-виçшерĕн пухăнса, вуншар метрлă сĕрекисене сŷтсе майлаççĕ. Атăлта пăр çаплах-ха йăшăлтатса, шавласа тăрать.

Пăртан тасалма пуçланă затон, вăрман хушшинче, хĕрлĕ шăвăç витнĕ пысăк çурт умĕнче, чуччу ярăнакан кантра вĕççĕн, улăпла утăмсем тăвакан, пĕр-пĕринпе хăваламалла вылякан, чечеклĕ кĕпе тăхăннипе чечекле курăнакан хĕрачасемпе галстук çакнă хĕрлĕ питлĕ пионерсене: «çурхи илеме пăхса савăнма килĕрсем!» тенĕ пекех, хĕвел çутипе симĕссĕн те кăвакккăн йăлтăртатса выртать.

— Нина Даниловна, Нина Даниловна, атьăр пăр курма каятпăр!—Атăл еннелле тăсса кăтартаççĕ кăвак кĕпе çинчен хĕрлĕ галстук çакнă Ира Терноуцкаяпа Люда Исакова.

Нина Даниловна, вăтам пŷлĕ, сарлакарах хулпуççиллĕ, сенкер куçлă, çирĕмелле çывхарнă çавраках питлĕ хĕр, ешĕл платье тăхăннăскер, сарă пурçăн тутăрне майланçи пулса:

— Халех каятпăр, Людмила Ивановна çеç килтĕр,— тесе, пĕрре шавлакан Атăл çинелле, тепре ачасем çинелле пăхса илет. Вĕсем çурхи хĕвел ăшшинче, хыр вăрманĕнчи уçă сывлăшра, санатори шкулĕ таврашĕнче савăнса выляса кăна çŷреççĕ. Вĕсемпе пĕрле Нина Даниловнăн та савăнасси килет. Ўссе çитĕнсе, учителе тухасси çинчен, ачасем хушшинче пуласси çинчен вăл мĕн пĕчĕкрен ĕмĕтленнĕ-çке-ха. «Анчах хамăн ĕмĕтленнине çитейĕпши?» иккĕленнĕ вăл час-часах. Вăрçă çулĕсенче, Нина вунă çулта чухнех, амăшĕ йывăр чирлесе ŷкнĕ. Аннесĕр пурнăç çăмăл мар. Нина мĕн пĕчĕклех амăшĕн ĕçне хăй туса пынă, вĕренме те пăрахман, ĕçрен пушаннă вăхăтра кĕнеке тытса ларнă, Çĕрпŷри тимуровецсен командине те хутшăннă, килти ĕçсене тунă хушăрах, ытти пионерсемпе пĕрле, хăй пек тăлăх ачасен çемйисене те пулăшма ĕлкĕрнĕ, унтан амăшĕпе пĕр тăван аккăшĕ, Анна Михайловна Цветкова колхозница пулăшнипе, Çĕрпŷри педагогика училищинчен пионервожатăйне вĕренсе тухнă. Иртнĕ çул вара ăна Чăваш АССР Сутĕç Министерстви вăрманти санатори шкулне пионервожатăйĕнче ĕçлеме янă. Акă халĕ вăл çав ачасем умĕнче хăйĕн пурнăçланнă ĕмĕтне курса тăрать. Кунта ŷпкепе чирленĕ ачасем вĕренеççĕ. Йăлăмри вăрман шкулне киличчен Нина Даниловна çав чир туберкулеза та кайма пултарасси çинчен пĕр сăмах та илтменччĕ.

Çыран хĕрринче такам кăшкăрса чĕннине илтсен, Нина Даниловна хыçалалла çаврăнса пăхрĕ.

— Нина Даниловна, ачасене йĕркипе тăратса тух,— уçă çилпе варкăшса килчĕ çамрăк хĕр сасси.

Кĕçех ачасен ушкăнĕ, харăс-харăс пусса, хăватлă юрă шăрантарса, шыв хĕррине анчĕ.

— Каллех килеççĕ, пулăсене хăратаççĕ ĕнтĕ,— мăкăртатса илчĕ çыран хĕрринче атмапа пулă сĕрекен ватă пулăçă.

Васли мучи пулă тытнă чух хирĕçме, пуринчен ытла суйма юратнине Николай Орлов пионер виçĕмкунах сиссе илнĕ, ак халĕ вăл каллех пулăçă патнелле чупрĕ.

— Ытла çыран хĕррине ан пырăр,— асăрхаттарчĕ вĕсене Людмила Ивановна воспитательница, тŷп-тŷрĕ пŷлĕ, çинçе пилĕклĕ, хура çŷçлĕ хĕр.

— Илемлĕ вĕт Атăл тăрăхĕнчи çурхи кунсем,—сăмах хушрĕ Нина Даниловна, Люсьăпа иккĕш кăна тăрса юлсан.

— Ытарма çук. Каспи таврашĕнче тата илемлĕрех мар-ши?—хăйĕнчен хăй ыйтнă пек каларĕ Бакура педучилище пĕтернĕ Людмила Ивановна.

— Атăл тăрăхне çитекен çĕрсем те пур-ши вара?—хăйĕннех каласа хучĕ Нина Даниловна.— Пырса кур-ха эсĕ Çавал таврашне, куçпа виçейми ешĕл улăха, çулçăпа пĕркеннĕ вăрмансене!

Пионервожатăй тата тем калас тесе çăвар уснăччĕ, çак хушăра ачасем Васли мучипе хĕрсе калаçни унăн шухăшне татса хучĕ.

Вĕсем пынă çĕре Васли мучи шывран кăларнă шаксене йăмрасем çумне типĕтме çакса тăрать. Ачасем ăна чăлханнă шаксене майлама, вĕтĕ пăр катăкĕсенчен тасатма пулăшаççĕ.

— Васли мучи, санăн 12 шакна пăр илсе кайнă темерĕн-и?—чеен кула-кула ыйтрĕ хăйне разведчик тесе шутлакан Николай Орлов.

— 12 темерĕм-çке, ултăшне илсе кайнă, терĕм. Ултă шака. Пĕрне çав йăмра патĕнчен тупрăм, туратран çакланса юлнă.

— Енер çыран хĕррине кăларса пăрахнă терĕн-çке? — ыйтрĕ ачасенчен пĕри.

— Вăл урăххи... тепри эппин,—суйма май çуккине кура мăйăхне пĕтĕркелерĕ Васли мучи.

— Эсĕ пĕрне çеç тупрăм темерĕн-и?

— Çук, иккĕшне...—шак çинчен куçне илмесĕр каласа хучĕ пулăçă.

— Апла сан тăватта çеç çухалнă пулать.

— Ехĕ, тăватта çав. Вĕсем хуть лайăххисемех мар, кусемшĕн ак çĕрĕех сывăрмарăм. Кăçал çеç сыхнăччĕ те... Çĕнĕ япалана çухатас килмест-çке.

— Лешсене тупса парам-и?—пулăçран хăпма пĕлмерĕ Николай.

— Вĕсем халиччен Астрахане те çитрĕç пулĕ ĕнтĕ,—мучи пĕчĕк тимĕр якăрне çыран хĕрринче ларакан кимĕ çине хăпартса хучĕ, киммине тĕртсе ячĕ, якăр хысĕнчен вăрăм тимĕр вĕрен аякка тăсăлса кайрĕ, вĕренĕ шыва ŷкесрен ачасем ăна вĕçĕнчен тытса тăчĕç.

— Астрахане мар, мучи, вĕсем сан сăмсу айĕнчен те хăпман, тупса парам-и?—хăйĕннех печĕ Николай.

Мучи ача сăмахĕсене юриех илтмĕш пулчĕ, унтан, сасартăк çамрăкланса кайнă пек, кимĕ пуçĕнчи якăрĕ патне сиксе ŷкрĕ, çиçĕмле хăвăртлăхпа çĕкленсе шывалла чăмтарчĕ.

Старик калле таврăннă çĕре Николай Нина Даниловнăна, Людмила Ивановнăпа Евдокия Корниловна воспитательсене мучин çухалнă шакĕсене кăтартрĕ.

— Çухалман вĕсем. Эпĕ вĕсене, мучи пăр илсе кайнă тесе суйнине илтсенех, хĕрлĕ çиппе палăрмалла мар çыхса тухрăм. Халĕ ав, пурте куç умĕнче—пĕри çеç çук. Ăна вăл, ав, çав кукăра лартрĕ. Хам куçăмпа хам куртăм.

— Ийя, Николайпа иксĕмĕр пăхса тăтăмăр, — хăй те мучие тăрă шыв çине кăларас ĕçе хутшăннине пĕлтерме васкарĕ тин çеç йывăçсем хушшинчен тухнă Тоня.

— Курнă... Эсĕ ăна тĕлĕкре те курман. Эс мар, Виталий Григорьевич та курман-ха ăна,—хĕрачана татса хучĕ Николай.

Ачашăн хăйсене вĕрентекен йăрăс пŷлĕ, хура костюм çинчен вăрçă орденĕсем çакса çŷрекен учитель, чăнах та, пурне те—ачасем хушăран ашкăнкаланине çеç мар, пулăçсем суйнине çеç те мар, тĕнчере кам кăна суять, усал ĕç тăвать, çавна витĕр курса тăракан çын пек туйăнать.

— Виталий Григорьевич та, Павел Васильевич та,—ача директор ятне асăнсан, кăштах имесе, çŷçенсе илчĕ.— Шкул директорĕ те курман...

— Вĕсем ăçтан курччăр, вĕсем вĕт машина патĕнче,—хирĕçлерĕ Ира Терноуцкая.

Павел Васильевич, çŷлĕрех кăна кĕлеткеллĕ, хĕрĕхрен иртнĕ, вăрçă витĕр тухнă тĕреклĕ арçын,

Васли мучип тытнă пулла алăпа тытса пăхмасăр чун чăтмасть.

Çÿлти ÿкерчĕкре: Шкул ачисем пушă вăхăтра спорт площадкинче.

Аялти ÿкерчĕкре: Йăлăм вăрманĕнчи санатори шкулĕнче вĕренекенсем аслă пионервожатăй Нина Даниловнăпа пĕрле Атăл хĕрринче.

ешĕл гимнастерка, кăвак галифе, сăран атă тăхăннăскер, канмалли кун пулин те, паян ĕçе хĕвелпе пĕрлех тухнă. Сахал-и шкул директорĕн ĕçĕ-хĕлĕ? Пурне те курмалла вĕт унăн. Ачасене вĕрентнине те, пăхнине те, шкул таврашĕнчи тирпейлĕхе те... Çитменнине тата çурхи кунсем пуçланнă май ĕçĕ те нумайлансах пырать. Автомашинăна, кимĕсене хăвăртрах юсаттарса çитермелле, çĕнĕрен килекен 80 ача валли пÿлĕмсем хатĕрлесе хумалла. Кашни ача мĕнле вĕреннине, пурăннине витĕр курса тăмалла.

— А вĕт, йăнăшатăн, Васçли мучи шак лартнине çеç мар, эпĕ унăн «çухалнă» шакĕсем çумне хĕрлĕ çип çыхса тухнине те Павел Васильевич хăй куçĕпе хăй курчĕ,— хăйĕн сăмахне тÿрлетрĕ Николай, пăртак тăрсан.

Кимĕ сăмсипе çыран хĕррине пырса тăрăнчĕ. Васçли мучи пĕç тĕпĕнченех туртса лартнă аттипе шыва анса тăчĕ, типĕ шаксене кимĕ çине иле-иле кĕчĕ.

— Тăхта-ха, Васçли мучи, акă вĕт санăн çухалнă шакусем,— пулăçа тытса чарчĕ Николай.— Астăрханьте мар-иç, ху аллунтах.

— Кусем урăххисем, — тÿрре тухма тăрăшрĕ пулăçă.

— Урăххи, урăххи мар çав, эпир, эсĕ суйнине пĕлсенех, хĕрлĕ çиппе çыхса тухрăмăр, акă çиппи, акă...— пÿрнипе хĕрлĕ çип çине тĕллесе кăтартрĕ Николай.

— Юрать, сиренни пек пултăр эппин, суйнă пултăр,— мучи, ача умĕнче намăса кĕрсе, куçне çĕнĕ шак çинчен илеймерĕ, унтан сасартăк, айăпа кĕнĕ çын пăртак вăй илсен хăйĕн вĕрилĕхне кăтартма тăрăшнă пекех, хаярланса ялласса илчĕ:

— Кам хушрĕ сире çын япали патне пыма? Тепре çеç пырăр, тÿрех вăн çав пăр кумкипе пусарса хурап...— Пулăç тата тем калама тăчĕ, анчах хăй çине икĕ учительпе пионервожатăй тинкерсе пăхнине сиссе, куçĕсене айккинелле пăрчĕ те, хăрах урипе çĕре таптарса, кимĕ çине хăпарса ларчĕ.

— Мучи, эсĕ пионер пулсан та суйнă пулăттăн-ши?—илтрĕ вăл хыçĕнчен Николай сассине.

— Лайăх ачасем, тÿрĕ кăмăллă ачасем ÿсеççĕ. Пĕр сăмах суйнине те юратмаççĕ, шĕпĕнсем,— мăкăртатса илчĕ ватă пулăçă.— Учителĕсем, директорĕ мĕнле ырă çынсем тата,— юриех, çыран хĕрринчисем илтчĕр тенĕ пек, кăшкăрса каларĕ вăл.— Чăн-чăн коммунизм çыннисем пулаççĕ...

Ачасем воспитательсем тавра пуçтарăнса тăнă вăхăтра, пулăç кимми аякран аякка кайса пычĕ, «çухалнă» шаксем пĕрин хыççăн тепри лăпкă шывра пытанчĕç.

Васçли мучи столовăйнелле утакан ачасем çинчен куçне илме пĕлмерĕ.

Нина Даниловна пионерсемпе ачасене аслă Атăл çинчен, унăн вăй-хăвачĕпе илемĕ çинчен, çав аслă Атăл хĕрринче 84 çул ĕлĕкрех Ильич аттемĕр çурални, вăл çав тери тÿрĕ кăмăллă, çав тери ăслă çын пулни çинчен хавасланса каласа пачĕ.

Унăн сăмахĕсемпе пĕрле куç умне вĕçĕ-хĕррисĕр чÿхенсе, сарăлса выртакан Атăл шывĕ, çыран хĕрринчи пиншер çухрăма тăсăлакан ешĕл çулçăллă вăрмансем, ылттăн тулă пуссисем, çав вăрмансемпе хирсем хушшинчи, çырма-çатрасем çумĕнчи пиншерпиншер ялсем туха-туха тăчĕç. Аслă Ленинăн ĕмĕр вилми сăнарĕ вара ачасем умне утса тухса, пĕр вĕçĕмрен: —Вĕренмелле, вĕренмелле, вĕренмелле! тесе каланă пекех пулчĕ.

Çав сăнар, тăван сăнар, столовăйне кĕрсен татах та ытларах пысăкланнă пек, ăшă та тăрăн куçĕсемпе ачасем çине пăхса ларнă пек туйăнчĕ.

Перасковья Тимофеевна Серебрякова повар ачасем валли каллех тутлă апат пĕçерсе хунă. Ирхине ачасем сĕтпе пĕçернĕ çулă хуратул пăтти çинĕçчĕ, пĕремĕкпе шерпетлĕ чей ĕçнĕччĕ. Клавдия Григорьевна фельдшерица кăнтăрлахи апатра — ашлă купăста яшки, усламçупа ăшаланă çăмарта янă рис пăтти, энтри апатĕнче—аш кукли çиме, компот ĕçме хистесе çÿретчĕ. Халĕ акă каллех мăй таран апат: ăшаланă лапша, булкăпа усламçу, пылак чей.

— Çаксене пире Ильич туса панă,—тет Галина Спиридоновна, анне те çапла калать,— сăмах хушрĕ Ира Терноуцкая.

— Нина Даниловна, ăна Владимир Ильичпа парти туса панă, тет. Çак шкула та партипе правительство усрă, тет.— Пионервожатăй сăмахĕсене манас мар тесе, калаçăва хутшăнчĕ Анна Белова. Вăл ĕнтĕ, виççĕмĕш класра вĕренекенскер, правительство мĕн иккенне, парти мĕн иккенне лайăх тĕшмĕртет.

— Нина Даниловна, эсир Мускавра пулнă-и?—ыйтать вăл, çутă та таса общежитине таврăнсан.

Нина Даниловна тепĕр занятире Мускав çинчен, унта СССР Верховнăй Совечĕн сессийĕ пулни çинчен, сессире депутатсем Совет Союзĕнчи халăхсене ырлăх парасси пирки, ачасене сывлăхлă, тĕреклĕ пурнăç парасси пирки сÿтсе явни çинчен ăнлантарать.

— Манăн та çавăнта, Кремле, кĕрсе курасчĕ,—тÿсеймесĕр калаçа хурать Николай Орлов.

— Эпĕ кайса куратăпах,—татса калать Сĕнтĕрвăрри районĕнчен килнĕ Клава Филиппова, хăйĕн юлташĕ Ишлей хĕрачи Надя Елекова çине пăхса.

— Малтан лайăхрах вĕренес пулать-ха. Пулăççене аптратас пулмасть,— тет пионервожатăй.

— Эпир пулăçсем патне пырса та пăхман,—вырăсла пĕр такăнмасăр калать Надя Елекова.

— Борис пĕр вĕçĕмрен пулăçсем патĕнче.

— Пулăçсем патĕнче пулса мĕн тунă вара эпĕ? Манăн акă пулăç пулас килет. Кунти пек пулăсем çеç мар, кит пек пысăк пулă тытас килет. Пĕр пулли пĕтĕм санаторнăй шкула çиме çиттĕр, ыран валли те юлтăр.

— Эсĕ халех Васçли мучи пек суйма пуçланă-çке.

— Вара мана Мускава, Ялхуçалăх выставкине илсе каяççĕ, уп чухне Кремлех кĕрсе курап,—ачасен сăмахне илтмĕш пулать Николай Орлов.

— Эпĕ каяймастăп ĕнтĕ, чăваш чĕлхипе те вырăс чĕлхипе «4» паллă кăна илтĕм,—пăшăрханать Надя Елекова.— Пурпĕрех «5» илетĕп.

Чăваш ачисем пиллĕкмĕш урока лараççĕ, çак вăхăтра Людмила Ивановна воспитательница вырăс ачисене уçăлма, çырма хĕррине, илсе каять. Санатори шкулĕнче, хĕвеллĕ ăшă кунсенче, уроксене уçă сывлăшра, хыр йывăççисен сулхăнĕнче ирттереççĕ. Класра вĕреннĕ чухне 5-мĕш урок вĕçнелле пуç ывăнса çитет, ыйхă пусса килет. Çук, кунта ывăннине туймастăн, хыр-сухăр шăрши çурхи уçă сывлăша пушшех уçăлтарса тăрать. Тен, çавăнпах та ĕнтĕ Клавăпа Надя çур урок иртсе кайнине сисмесĕрех юлчĕç.

— Малалла «Шăнкăрч уçă кÿни» ятлă калава вулăпăр,—терĕ учитель.—Эпир ăна сирĕнпе вырăс чĕлхи урокĕнчех вуланăччĕ. «Скворец» калава аса илĕр-ха.

Ачасем калава шăкăлтаттарса каласа параççĕ. Виталий Григорьевич кирек хăçан та чăваш чĕлхи урокĕнче—вырăсла вĕреннĕ материалсене, вырăс чĕлхи урокĕнче—чăвашла вĕреннĕ материалсене аса илтерет. Çакăн пек туни икĕ чĕлхене те юратса, лайăх вĕренсе пыма пулăшать.

Уроксем пĕтсен, ачасем каллех столовăйне кайса килчĕç, унтан юр пек шурă çивиттиллĕ койкăсем çине сывăрма выртрĕç. Лăп та шăп çак вăхăтра Васçли мучи кимми 6 çынна Атăл урлă та затон урлă илсе каçарчĕ.

Малтанах вăл «ответственноçа хам çине илместĕп» текелесе турткаланса тăчĕ, унтан Вăрмантăн санатори шкулне килекен çынсем ача ашшĕ-амăшсем иккенне пĕлсен, хĕпĕртесех йышăнчĕ.

— Рад стараться. Алюра три креста... Халех çыран хĕрринче пулатпăр...—кĕсменсене сулса пынă май калаçма чарăнмарĕ вăл.—Ну, халĕ леш тÿрĕ кăмăлли куртăр-ха мучĕш суйманнине. Тен, ун ашшĕнех лартса каçатăп.

Пулăç, тасалсах пĕтеймен пăр катăкĕсенчен пăрăнас тесе, кимме сылтăмалла пăрчĕ, ишсенишсен сулахаялла çаврăнчĕ. Шултра пăр катăкĕсем пырапыра çапăнчĕç, кимĕ сулăнса кайнă пек пулчĕ, пулăçăн тĕреклĕ аллисем ăна каллех лăпкă вырăна илсе тухрĕç.

Кăнтăр апачĕ хыççăн санатори шкулĕнчи ачасем лăпкăн çывăраççĕ.

— Ма вара пăр тасалса пĕтмесĕрех каçмалла пулчĕ? Сирĕн ачăрсем шанчăклă алăра вĕт, хам пĕлеп, райри пек пурăнаççĕ,— терĕ мучи.

— Хамăр ачасем-çке-ха, мĕнле ырă пурăнсан та курас килет. Çитменнине тата çурхи шыв вăхăчĕ, темрен тем пулас...—пуриншĕн те каларĕ пусне шурă тутăр çыхнă, аллă çулалла çывхарнă хĕрарăм.— Ачин те кăшт пустахлăхĕ пур... Хăй ашшĕсĕр ӳсет те-ха.

— Ашшĕсĕр ӳстерме хĕнтерех çав,—унпа килĕшрĕ юнашар ларакан хĕрарăм, çулĕпе вăтăртан иртмен пулин те, пичĕсем самаях пĕркеленнĕ унăн.

Çыран хĕрринче ачасем пуринчен ытла «тӳрĕ кăмăлли» (шкулта Николай Орлова пурте тӳрĕ кăмăлли теççĕ) ырă ĕç тунă чухне те пулин суйма вĕреннĕ пулăçа самаях пăшăрхантарчĕ.

— Ну, акă, çитрĕмĕр те. Эсир çитеймесрен хăрарăр,— Васли мучи çитнĕ-çитменех шыва сиксе анчĕ, кимме çыран хĕрринелле туртрĕ.

Хăнасем Васли мучие укçа сĕнесшĕн пулчĕç. Мучи малтанах, çынсене лартсанах, «сӳсенне çинчен пĕр чĕрĕклĕх пулать-ха» тесе хĕпĕртесе ӳкнĕччĕ, ăста ларса ĕçмеллине те паллă туса хунăччĕ, çав вырăн, кăтра хыр айĕнчи вырăн, халĕ те ăна хăй патнеллех туртать. Анчах çук, укçа илме тесе кимĕ сăнчăрĕ çумĕнчен вĕçертнĕ алли каллех хăй вырăнне йышăнчĕ, сăнчăр çумне хытса ларчĕ. Аякран ун çине галстук çакнă пионер, Николай, пăхать пек. «Каллех чĕрĕклĕх пустарасшăн» тенĕ пек туйăнчĕ мучие. Ăста-ха «тӳрĕ кăмăлли» умĕнче тӳрĕ мар ĕç тăватăн?

— Çук, çук, ан та чăрманăр, перекетленĕ укçăр ачăрсене ӳстерме, вĕрентме кайтăр,— татса каларĕ вăл.

Санатори шкулĕн директорĕ Павел Васильевич Сырцов хăнасене ачасем çывăракан пӳлĕм патне илсе пычĕ.

Тутлă тĕлĕк курса çывăраççĕ телейлĕ ачасем! Те тĕлĕкре савăннипе, Борис Васильевич Терноуцкин III-мĕш класра вĕренекен хĕрĕ, Ира, çаврака питлĕ, пĕчĕк туталлăскер, тĕлĕкре те кулса выртать. Кăшни ача çинех çурхи хĕвел сăнĕ ӳкнĕ тейĕн, çавăнпах та ĕнтĕ вĕсене халĕ никам та чирлĕ ача тесе калас çук. Тӳррипе каласан, сывă, тĕреклĕ ачасем ĕнтĕ вĕсем.

Ача ашшĕ-амăшĕсем, Шупашкартан килнĕ хăнасем, ачасем пурăнакан çутă-çутă пӳлĕмсене, урай-маччине çутă сăрпа сăрланă



III-мĕш класра вĕренекенсен уçă сывлăшри урокĕ.

П. Ефремов фотоӳкерчĕкĕсем.

аслă классене, столовăйсене, мунчана, прачечнăйне, ачасем вылянă çĕре çитсе курчĕç.

— Тавтапуç, пирĕн ачасене сыватнăшăн, вĕрентнĕшĕн, ырă кунçул панăшăн, шкул коллективне пысăк хисеп,— терĕç вĕсем, умлăн-хыçлăн шкул директорĕн аллине чăмăртаса.

— Пире мар, партипе правительствăна тав тумалла. Парти туса панă вĕт ăна, эпир те парти хушнине мĕн вăй та пĕлӳ çитнĕ таран тума тăрăшăпăр.

— Çавăншăн мухтатпăр та сирĕне,—пуриншĕн те каларĕ Терноуцкий.

Хăнасем директортан сĕнӳ кĕнеки ыйтса илчĕç. Ун çине, ытти ача ашшĕ-амăшĕсен сăмахĕсемпе пĕрле, хăйсем те партипе правительствăна, шкул коллективне ачисене лайăх пăхнăшăн чĕре патĕнчен тухакан сăмахсемпе тав туса çырса хăварчĕç. Çав сăмахсен вĕçне Терноуцкий, Белова, Косолапова хушаматсем сырăнса юлчĕç.

— Эпĕ хам коллективри çамрăксене тав тăватăп,—хăнасене ăсатас умĕн Виталий Григорьевичпа Галина Спиридоновна учительсем, Людмила Ивановнăпа Евдокия Корниловна воспитательсем çине тата хĕрлĕ галстук çыхнăран яланах хĕрлĕ сăнлă çӳрекен Нина Даниловна çине пăхса каларĕ директор.

Шкулта ĕçлекенсем çеç мар, Васли мучи те хăнасем çине вĕсем курăнми пуличченех пăхса тăрса юлчĕ. Хăнасем кайсан, кимĕ çинче вăл шурă суркăчлă чĕрĕк тупрĕ. Туптулли чĕрĕк: çавна ĕнтĕ вăл халĕ ниçта хура пĕлмест. Пĕрре çак чĕрĕке хăнасем хăйсене ырă тунăшăн, тепре, «тӳрĕ кăмăлли» каларĕшле, суйнă пирки куласшăн лартса хăварнă пек туйăнчĕ мучие.

Çак чĕрĕке вăл каçхине шаксем лартнă хыççăн та, Мускав хыпарĕсене итленĕ хыççăн та ĕçмерĕ. Мускав—Верховнăй Совет сессийĕ çинчен, сесси ячĕпе пĕтĕм халăх çĕнĕ çитĕнӳсем туни çинчен пĕлтерет.

— Вĕсене лайăх унта—рабочисене, колхозниксене. Вĕсен станокне, тракторне-и унта—ĕçлеттер те ĕçлеттер! Санăн кунта акă пулă килессе кĕтсе вырт. Шывра вăл пулă хăй хуçа. Ăста каяс тет, çавăнта каять, Васли мучи шакне кĕрес тесе çеç çӳремест.

Старик çĕрĕпех çывăраймарĕ. Унăн та çав аслă ĕмĕртăва хутшăнасси килчĕ. Вăл килĕнче юлнă шакĕсене пустарса тухрĕ, пулă ăстарах кĕме пултарассине виçсе пăха-пăха лартса çӳрерĕ.

Людмила Ивановнăпа Нина Даниловна ирхине, çичĕ сехетре, ачасене затон хĕррине ирхи зарядкăна илсе анчĕç.

Затон урлă вут юпа пек тăсăлса выртнă хĕрхĕлтĕм хĕвел шевли патĕнчен, шывран тухма пуçланă йăмрасем хушшинчен кимĕ ишсе килнине хальхинче те чи малтан Николай асăрхарĕ.

— Суеç тавăрнать,—кăшкăрса ячĕ вăл, хăй те сисмесĕр, Васли мучие тунсăхласа çитнипе.

Кимĕ çинче лăк тулли пулă. Вĕсем сиккелесе кăна, йăлтăртатса кăна выртаççĕ.

— Миçе пăт тытрăн?—ыйтрĕ Николай, мучи суяссине пĕлсех.

— Мĕн миçе пăчĕ пултăр!.. Нормăна иртерсе тултарнă. Эсĕ сесси ячĕпе миçе паллă илтĕн? Манăн вăт 2 норма та тулатчĕ, пысăккисене тартрăм, çын тăршшисене,—Васли мучи хăй суйнине хăй те сисмерĕ.

Ачасем пичĕсене çуса столовăйнелле утрĕç. Вĕсен умĕнче çаплах аслă Атăл йăлтăртатса выртнă пек, çав Атăлта Васли мучи тартнă пысăк пулăсем кĕтĕвĕкĕтĕвĕпе ярăнса-ишсе çӳренĕ пек.

Çак ачасен кун-çулĕ Атăл пек сарăлнăçем сарăлса пырассăн туйăнать вĕрентекенсемшĕн, Васли мучишĕн, пуриншĕн те...

Куçа илĕртсе тăрать аслă Атăл, чуна çĕклентерет.

Вĕренекенсем каçхи апатра.

Ирхи ӳкерчĕк

Георгий ОРЛОВ

Çутăлать...
Шăппăн-шăппăн хĕвел вăранать:
Хĕмленсе-ялкăшса çĕкленет;
Ялтăран сывлăмпа çăвăнать,
Тӳпене сапалать шевлине.

Таврана йăл! пăхса çутатать,
Чуптăвать мăн вăрман кăтрине,
Çĕмĕрте киленсех ачашлать,
Йăлтăр-йăлтăр анать шыв хĕрне.

Сĕт пек шурă тĕтре явăнать
Тĕлĕрен юханшыв çийĕпе:
Явăнать,
шĕвелет,
арканать,—
Çухалать варкăш уçă çилпе.

Хӳхĕм тулă хуллен хумханать,—
Çийĕнче кĕмĕл сывлăм çунать,
Такама пуç тайса саламлать,
Хăй патне йыхăрать вăл чуна.

Ывăнма та пĕлмест-çке тăри,—
Юррипе янратать улăха.
Пĕр чăмать те çĕре вăл юри,
Тӳпене çиçĕмле улăхать.

Вĕçсе кайрĕ чĕкеçĕ тăста,—
Çырмара-иç вылять, шыв ĕçет.
Вăрманта, ав, куккук авăтать...
Юрă, юрă таçтан та килет!
Çутăлать...
Юрăпа ĕçлĕ ир пуçланать.

Шăпчăк юрри

Калав

Степан ПАВЛОВ

М. Жолобов фотоÿкерчĕкĕ.

Гриша мĕн пĕчĕкренех юрлакан кайăксене юрататЬ. Çавăнпах ĕнтĕ вăл читлĕхсем тума та пит ăста. Мĕнле кăна читлĕхсем çук-ши унăн! Тимĕр пралуклă сакăр кĕтесли, шурă хăваран авнă çавра тăрăлли, шĕшкĕпе кăнчанкă турачĕсенчен тата мăкăнь тунисемпе улăм пĕрчисенчен тунă читлĕх те пур унăн! Пĕр читлĕхĕ тата çав тери тĕлĕнмелле илемлĕ: темиçе пÿлĕмлĕ, кашни пÿлĕмĕнче пĕрер кайăк, тăвата кĕтессинче, тулаш енчи шăвăç савăтсем ăшĕнче, чечексем ÿсеççĕ. Маччара кăна мар, кантăксем умĕнче те читлĕхсем çакăнса тăраççĕ. Гришăсем патĕнче вара çулла та, хĕлле те кăсăя е чĕкеç чĕвĕлтетнине, шăкăлчи е чепчен сассине илтме пулать.

Апрель пуçламăшĕнче çурт тăрринчен тумла юха пуçласан, Гриша шăнкăрч вĕллисем ăсталама тытăнать. Ялти нихăш ача та унăнни пек хитре вĕллесем тума пĕлеймест. Вăл тунă вĕллесене ачасем «кайăк керменĕсем» теççĕ. Шăнкăрчсем вĕçсе килнĕ тĕле Гришăсен пÿрчĕпе хапхи тăрринче, урамри шурă хурăнсемпе пахчари улмуççисем çинче кашни çуркуннех вара яп-яка хăмасенчен çапса тунă эрешлĕ вĕр-çĕнĕ «керменсем» хăйсен пулас хăнисене кĕтсе тăраççĕ.

Халĕ Гриша пысăк ĕнтĕ — вунвиçĕ çулта. Унăн аслашшĕ, хурт-хăмăр ăсти, çулла пулсан — яланах вăрманта, колхоз утарĕнче тĕрмĕшет. Унăн ĕçченлĕхне, ырă кăмăлне кура ял çыннисем ăна пит хисеплеççĕ. Уйрăмах ăна ача-пăчасем юратаççĕ: утара пырсан вăл вĕсене нихçан та хăваласа ямасть, кăтрашка кăмпа пек пĕркеленчĕк пит-куçне хĕвеле хирĕç каçăртса лартать те, сухан тымарĕ пек усăнса тăракан шурă сухалне лăс-лăс силлентерсе, темĕн çинчен те каласа парать. Сăмахĕсем ăçтан кăна тухаççĕ-ши! Пĕрмай хĕвел çине пăхса калаçнăран хăй калас сăмахсене хĕвел пичĕ çинче вуланăнах туйăнать.

Вăл çăвĕпе тенĕ пекех утарта пурăнать, сайра хутра çеç киле таврăнать. Çавăнпа Гриша, аслашшĕне апат-çимĕç леçме тесе, час-часах ун патне каять те хăш чухне çывăрма та юлать.

Утарта çав тери илемлĕ. Пысăк уçланкăра темĕн чухлĕ вĕлле ларать: пĕри хĕрлĕ, тепри сарă, кĕренни те, симĕсси те — темле тĕсли те пур. Вĕлле речĕсем, вĕсене пĕр тикĕс йĕркепе лартса тухнă май, аякран пăхсан юмахри пĕчĕк хула урамĕсем пекех туйăнса каяççĕ; çурчĕсем кăна пĕр пек виçеллĕ. Çăра курăк хушшинче, ăçта пăхнă унта, тĕрлĕ тĕслĕ, ырă шăршăллă чечексем, куçа илĕртсе, эрешлĕ шыв хумĕ пек хумханаççĕ. Йĕри-тавра — ем-ешĕл çăкалăх.

Уйрăмах тата, ирхине ирех ыйхăран тăрса утар çуртĕнчен тухсан, тĕлĕнсех каймалла: тухăçран, кăвар пек хĕмленсе, хĕвел тухать; сывлăш уçă, çанталăкĕ тÿлек те лăпкă, лăпкă...

Кайăк юрри тата!.. Мĕн чухлĕ кайăк, миçе кăна сасăпа юрламаççĕ-ши вĕсем! Пĕр сăмахпа каласан — ытарайми илемлĕ, чуна уçăлтарса çĕклентерет.

Пĕррехинче Гриша, хĕвел тухиччен тăрса, утар уçланкине тухрĕ те кайăксем юрланине чылайччен итлесе ларчĕ. Уйрăмах вăл шăпчăк юрланине чунтан юратса итлерĕ.

Унăн пуçĕнче сасартăк пĕр шухăш вăранчĕ: «Мĕншĕн кайăксем вăрманта çеç юрлаççĕ, мĕншĕн вĕсем яла пымаççĕ? Шăпчăк сассине унта нихçан та илтме çук».

Тивĕçлĕ ответ тупайманнине кура, вăл аслашшĕ патне чупса пычĕ те хăйĕн шухăшне каласа пачĕ.

Аслашшĕ, калаçма яланах хапăл тăваканскер пулин те, пĕр-пĕр ыйту парсан, тÿрех ответлемест, малтан эсĕ хăв шухăшласа пăх-ха, тенĕ пек, чакăр куçĕсемпе сăнавлăн пăхать, вара тин ăнлантарма тытăнать.

Хальхинче те вăл, Гриша çине куç хĕррипе пăхса илчĕ те:

— Сан шутпа мĕнле пек?—терĕ кулкаласа.

— Пĕлейместĕп çав.

— Пĕлес пулать. Юрлакан кайăксем илеме юратаççĕ, çавăнпа вĕсем вăрмансемпе улăхçарансене ытларах ăванаççĕ, — терĕ аслашшĕ, татăклăн.

«Апла эппин, шăпчăксем яла пырас çук, вăрманта вĕсене нимĕнпе астарса та тытаймăн. Шел... Питех те илемлĕ юрлаççĕ-çке вĕсем!.. шухăшларĕ Гриша хăй ăшĕнче.

Унăн шухăшне тавçăрса илнĕ пекех, аслашшĕ малалла каларĕ:

— Садсем сахал, уйрăмах пирĕн ялта. Акă хамăрăнах улмуççисем сивĕпе хăрса пĕтрĕç те, çĕнĕрен пĕр тĕп те лартман. Хăй тĕллĕнех ÿсес çук ĕнтĕ...

Çак сăмахсем, сад лартманнишĕн Гришăна хăйне айăпланă пек, унăн чĕри тĕпнех пырса тиврĕç.

— Халĕ лартма пулать-и? — ыйтрĕ вăл сасартăк.

— Пулать, епле пулмасть тет, тусассăн темĕн те пулать. Куç хăрасан та, алă тăватех. Пуçăнаканни кăна çук, пĕр пуçăнсан...

...Çак кунах Гриша, яла таврăнсан, аслашшĕ панă шухăша хăйĕн юлташĕсене каласа пĕлтерчĕ, юлташĕсем—теприсене. Ачасем вара тĕрлĕрен йывăç хунавĕсем туянма ашшĕ-амăшĕсене ÿкĕтлеме тытăнчĕç.

Кĕр çитсен, Гришăпа аслашшĕ кÿршĕ колхоза кайрĕç те унти питомникрен икĕ çĕклеме яхăн улмуççи, чие, хурлăхан, хăмла çырли хунавĕсем туянса килчĕç; лакăмсем чавса хатĕрлерĕç те чылайăшне урама — пÿрт умне, ыттисене—пахча енчи кантăк умне лартрĕç: Гриша пĕтĕм чун-хавалтан тăрăшса, савăнсах ĕçлерĕ. Малашне унăн та пĕчĕк сад пулать-çке! Пĕр сăлтав кăна канăç памасть: çитес çуркуннеччен вĕсем пĕри те çулçă кăлармаççĕ, пит нумайччен кĕтмелле-çке...

Йывăçсене лартса пĕтернĕ хыççăн аслашшĕ ăна çапла каларĕ:

— Лайăх ÿсчĕр тесен, малашне санăн тăрăшмалла, — терĕ.

Гриша ÿркенсе тăмарĕ. Лартнă йывăçсене пăхма хăйне шанса панишĕн вăл чунтанах савăнчĕ. Кĕркунне, сивĕ тăм ÿкме пуçличченех, кашни йывăça шăварса тăчĕ. Сивĕтсе юр çума тытăнсан, хĕлле шанса пăсăласран кашни йывăç тунине улăмпа чĕркесе çыхрĕ, йĕри-тавра

ЧĔРЕ ХУШАТЬ

Калав

Валентин БУРНАЕВСКИЙ

П. Димитриев ӳкерчĕкĕ.

Тинĕс тĕпĕнчен вăл хăрушла йăтăнса хăпарчĕ. Уçса янă люкран пăчăланнă тăвăр отсексене нӳрлĕ çил вĕрсе кĕчĕ. Подводниксем таса сывлăша, ĕмĕр сывласа курман пек, кана-кана çăта пуçларĕç. Сывлăшĕ, нӳрлĕ пулсан та, вĕсен антăхнă ăшчикĕсене сулхăна кĕнĕ чухнехи пекех уçăлтарчĕ.

Калаçмалли трубкăран хулăн сасă кĕрлесе кайрĕ:

— Иккĕмĕш статьяри старшина Изратов! Халех мостик çине, командир патне!

Пăхăр ӳтлĕ моряк, пуçне йалт-ялт пăркаласа, вылянчăк куçĕсемпе унталла-кунталла пăхрĕ те переборка алăкĕ витĕр тулалла тапса сикрĕ.

Виç-тăвата çын тăмалăх пĕчĕк мостикăн йĕпе урайĕ тăрăх канăçсăр Николькин уткаласа çӳрет. Вăл—капитан-лейтенант, шыв айĕнче çӳрекен киммĕн командирĕ. Çăварне хăй хăмăр чĕлĕм хыпнă. Хăватлă табак тĕтĕмĕ хăш чухне темле хуйха та, никам ăнланман йывăр шухăша та кăштах пусарма пулăшать иккен. Командир утнă май, Токарев сигнальщик та вырăнтан вырăна куçкала пуçларĕ. Кимĕ хатĕр ĕнтĕ,— шыв айĕнче мар, тинĕс çийĕнче. Унăн аллаппи пысăкăш пĕчĕкçĕ лаптăк палуби çинче тавралăха сăнакан часовой пулмалла,— текех перископа çеç шанса лармалла мар.

Командир ассăн сывласа ячĕ: ӳлĕмрен те халичченхи пекех йĕркеллĕ пулсан — пит лайăхчĕ. Анчах хăрушлăх пĕтмен-ха. Çак зонăра минăсем пулмалла: капитан-лейтенант шухăшлани тĕрĕс те пулĕ. Сывă юлас тесен, пит те сыхланса иртмелле, кашни утăмра вилĕм хăрататъ. Тăшман карапĕсемпе самолечĕсем, тен, подлодкăна асăрхаймĕç, мĕншĕн тесен таврана, шур çивитти пек, çăра тĕтре карнă. Çакнашкал тĕтре витĕр фашистăн çăтă куçĕ инçетех курас çук. Ку — подводниксемшĕн пит те аван.

Анчах тĕтрен çăра карăмĕ вăхăтлăха çеç пулчĕ çав: вăл, уяр куна хирĕç вăрахчен тăраймасăр, шĕвелнĕçемĕн шĕвеле пуçларĕ. Эх, çав хӳтлĕх тата тăватпилĕк сехете тăсăлинччĕ... Тĕтре итлеместь. Мăръерен тухакан ирхи тĕтĕм евĕр, вăл куç умĕнчех хуллен-хуллен сирĕле пуçларĕ. Халь ĕнтĕ хĕвел хăш тĕлерехрине чухлама та çăмăл.

Командир хăйĕн чăмăр чĕлĕмне çăварĕнчен кăларчĕ те пĕр вырăнта тĕк тăра пĕлмен сигнальщик çине пăхрĕ:

— Токарев, ăçта сирĕн вырăнăр? Аçталла пăхмалла сирĕн?..

* * *

Шыв айĕнчи кимĕ çӳле тухсан, командăри кашни çын уçă люкран кĕрекен сывлăшпа сывлать, кимĕ хыççăн Балтика шывĕ, хумханса, кăпăкланса юлать. Хумсем мăкăрăлчăк борт çумне сулмаклăн çапăнаççĕ. Çак тăсмака кимĕре, командирпа сигналщиксăр пуçне, урăх никам та çук пек туйăнать. Чăн та, икĕ çын мостик çинче тăраççĕ: ултавлă тавракурăма куç хупмасăр тинкерсе пăхаççĕ. Вĕсен куçĕсем çивĕч те вичкĕн. Ку самантра кимĕ экипажĕн пурнăçĕ йăлтах Николькинпа Токаревран килет. Пăшаллă часовой мăран çын пулсан е хăй ĕçне пĕлмесен, вара пĕтĕм экипаж пĕтме пултарать.

Аялта, уйрăм пӳлĕмсенче, отсексенче, электричество лампочкисем йăлтăртатса çунаççĕ. Унта ĕмĕрне те кăнтăр çути кĕместь. Шутласа кăларма çук нумай приборсемпе аппаратсен стрелкисем çăмăллăн выляса тăраççĕ.

Кимĕ халăхĕ хускалнă. Çынсем командир мĕн хушнине кирек хăш самантра та итлеме хатĕр. Ларакан, вырттакан çук — кашни хăй вырăнĕнче, шăнăрĕсене хытарса, ура çинче тăрать. Ĕçе çийĕнчех тума хушакан приказ çӳлтен, мостик çинчен, кĕç-вĕç илтĕнсе кайма пултарать.

...Похода каясси кĕтмен çĕртен килсе тухрĕ. Вăраха пынă йывăр операцирен кимĕ тинрех кăна таврăннăччĕ. Çавăнпа та ăна пĕр вăхăт канăç пама пулнăччĕ. Çитменнине тата праçник, Совет флочĕн кунĕ çывхаратчĕ. Ăна чаплăрах ирттерес тесе, паек çумне хушса, канфетсем, повидлăсем, мандаринсем, карап çинче халиччен пулман ытти çимĕçсем илсе хунăччĕ. Складран карçинкки-карçинккипе çăмарта турттарса килнĕччĕ. Ăна фашистсен эрне каялла туртса илнĕ транспортĕнчен хамăр склада пушатнăччĕ. Çав транспорт трюмне вунă тоннăна яхăн çăмарта тиенĕ пулнă.

Лешка Дубинин, кимĕ çинчи кок, шăвăç питлĕхсем çине çулă котлетсемпе запеканкăсем шаритлесе хунăччĕ ĕнтĕ. Çав сĕтеклĕ котлетсене тутансан чĕлхӳне çăтса ярăн. Вĕсене экипажри ушкăнпа пĕрре ларсах çисе пĕтереймĕн. Соус тултарнă кастрюльпе каçăр сăмсаллă симĕс чейник те хатĕрччĕ. Вĕтетнĕ ашпа пăрăç хутăштарса йăвалнă чăмăрккасем çатма çинче ăшаланма пуçласанах, кокăн ăсĕта алли вĕсене сарлака вăрăм çĕçĕпе хăвăрт-хăвăрт çавăркаласа хурать. Пĕр котлетне те çунăхма памасть вăл, кунта тĕтĕм-сĕрĕм шăрши сарăлни нихçăн та пулман. Кулинари ĕçне кок чăпнипех те артистла тăвать. Кусем хыççăн тата темĕн чухлĕ куймаксем, çӳхӳсем, икерчĕсем пĕçермелле. Çавсем валли çакăнтах çине-çине хунă турилккесем лараççĕ. Кокăн ĕçĕ май таран. Штормлă тинĕсе тухсан, кунашкал апат-çимĕç час хатĕрлĕп тесе ан та шухăшла.

Матроссем хăйсен йăм хура шала-

юр купаларĕ. Йывăç хуппине шăшисем кăшласа сиен кӳресрен, купаланă юрне таптаса пирчентерчĕ.

Шкула каять-и Гриша е шкултан таврăнать, хĕлле çулçă тапса тухас çуккине пĕлет пулин те, пĕрех май хăй лартнă йывăççем çине пăхать. Хăй çав тери кĕтнипе-и — хĕл пит вăраха тăсăлнă пек туйăнать уншăн. Çанталăк ăшăтма пуçласа çуркунне енне сулăнсан, кунсем пушшех те вăрăмрах пек туйăнаççĕ. Çуркунне вара, çĕр типсе çитсен, йывăççем айĕнчи тăпрана кăпкалатсах тăрать Гриша, часчас тислĕк шывĕпе шăварать.

Акă кăçал ĕнтĕ вĕсем палăрмаллах çитĕнсе кайрĕç, чылайăшĕ çеçкене те ларчĕ. Уйрăмах чие йывăççисем куçа илĕртеççĕ: шап-шурă çеçкепе витĕннĕ те шурă çĕлĕклĕ пуçĕсене тайса, Гришăна тав тунă пек чӳхенсе лараççĕ. Пӳртрен те, урамран та пăхма илемлĕ. Кун пек садсем вĕсен кăна мар, нумай колхозниксен пӳрчĕсем умĕнче ӳсеççĕ, вĕсене те ачасем хăйсем тăрăшнипе лартнă.

... Пĕррехинче Гриша ирех вăранчĕ. Вăхăт нумай мар иккен — хĕвел те тухман-ха. Аптранă енне вăл мачча хăми çинчи пĕр турат йĕрĕ çине тинкерчĕ те нимĕн шухăшсăр пăхса выртрĕ.

Сасартăк унăн хăлхине кайăк сасси илтĕннĕ пек туйăнчĕ. Савăннипе чĕри кăртах сикрĕ: «Чăнах та вара сада кайăксем килнĕ-ши?»— шухăшларĕ вăл. Вара, йăпăр-япăр сиксе тăчĕ те кантăка яри уçса ячĕ. Чим, ку шăпчăк мар-и? Чăн — шăпчăк.

— Шăпчăк, шăпчăк килнĕ!—пĕтĕм чун-хавалĕпе савăнса пăшăлтатрĕ вăл хăй ăшĕнче. Хĕпĕртенипе нисхта кайса кĕме пĕлмест, анчах кайăка хуйхатса ярас мар тесе, пĕр хускалмасăр ларать.

Шăпчăк ăна асăрхамасть, каçăхса кайсах юрлать. Çунатне çине-çинех çапать, ачасем чĕлхепе çăвар маччине перĕнтерсе цăклаттарнă пек, тĕлĕнмелле хитрен шаккаса илет, унтан пĕр саврăм чилетет те ши-ши! шăхăрса ярать. Унăн кĕмĕл хĕлĕх пек янăракан сасси пĕрре çӳлеçӳле, тепре — çĕр çумне янраннă пек сывлăшра янăраса тăрать. Мĕнле кăна çемĕ çук-ши унăн юрринче! Чĕлхепе те, нимĕнле купăспа та ун пек илемлĕн кĕвĕлеме пултараймăн. Итлесе тăранма çук.

Çав кунран пуçласа вара Гриша кашни ирех шăпчăк юррине итлесе киленет. Гриша кăна та мар, унăн юлташĕсем те чунтанах савăнаççĕ— вĕсен те садсем пур.

Пĕтĕм яла илем килчĕ иккен!

варĕсене, фланелевкисене, форменкисене, лучăрканнă ленточка вĕçĕсене пĕр-пĕринпе ăмăртмалла утюгланăччĕ. Пилоткисене пуçтарса чиксе, вĕсем бескозыркăсем кăларнăччĕ, шăртланнă сухалĕсене хырса якалнăччĕ, одеколонпа сĕрĕнсе пўлĕме тутлă шăршă сарнăччĕ. Анчах штабран приказ килчĕ. Вара шыв айĕнче çўрекен киммĕн тепĕр икĕ сехетрен тинĕсе тухма тиврĕ...

Подводниксем, шăппăн калаçнă хушăрах, таврари шăв-шава та итлеççĕ. Командир мостик çине Изратова чĕнчĕ. Пурте пĕр-пĕринчен — мĕншĕн те мĕншĕн тесе ыйтаççĕ.

Совет подлодкин шăршине сиснĕ тăшман сунарçисем ăна çур талăка яхăн йĕрлесе çўрерĕç. Тарăн шывра çурăлакан бомбисене темиçе хут та тĕл лекмелле пекех пăрахрĕç. Кисренсе сирпĕнекен шыв вăйĕ пуснипе икĕ электролампочка лап сўнчĕ. Прожектор урайне хăйпăнса ўксе çĕмĕрĕлчĕ. Ура пусма çук, кĕленче ванчăкĕсем. Çав хушăрах кимĕ хĕрĕх-хĕрĕх пилĕк градус таранах тайăлчĕ. Çинçен ўлесе янă сирена сасси чарăнсан, кимĕ ăшĕнче кĕскен команда панисем, чупкаланисем илтĕнсе тăчĕç. Унтан хĕвĕшў шăпланчĕ, каллех моторсем сĕрлеме тытăнчĕç. Кимĕ, хăйĕн çулне сасартăк улăштарса, тинĕс тĕпнелле хăвăртлăн вирхĕннине пурте ăнланчĕç.

Çакăн хыççăн кимĕ, темĕне перĕнсе, татах кисренсе-силленсе илчĕ. Çўлĕкри стакан, урайне ўксе, пин-пин тĕпренчĕкĕн сапаланчĕ. Калаçмалли трубкăра капитан-лейтенантăн хирĕлсе тухакан сасси илтĕнсе кайрĕ:

— Отсексене пăхмалла! Пирĕн çине тарăн шывра çурăлакан бомбăсем ыватаççĕ! Корпус çурăлман-и? Маччасене пăхăр! Шыв сăрхăнмасть-и?

Пăхрĕç — пурте чиперех. Шыв ниçта та — маччаран та, урайĕнчен те — сăрхăнмасть.

Кимĕ питĕ тарăна çиçĕм хăвăртлăхĕпе чăмрĕ. Моторсене майĕпенрех ĕçлеттерме тытăнсан, кимĕ грунт çине кăшăрт анса ларчĕ. Вăл малтанхи хăвăртлăхпах пынă пулсан, торпеда пекех çурăлса сирпĕннĕ пулĕччĕ-и, тен?!

Бомба çурăлнă сассем майĕпен-майĕпен лăпланчĕç. Юлашкинчен, пачах пĕтсе ларчĕç. Фашист йĕрлевçисен гидрофонĕсем шăпланнă кимме йăлтах çухатрĕç пулас. Халĕ ĕнтĕ иртĕхсе çеç, тăшман хăйĕн бомбисене унталла-кунталла тăккалать. Вĕсемшĕн, паллах, пĕтĕм Европа укçине хырса тунă снарядсем шел мар...

Акустик, таврара мĕн пулса иртнине лайăх сăнаса пынăскер, капитан-лейтенанта хыпар парсах тăрать. Вара капитан-лейтенант команда пачĕ.

— Тревога пĕтрĕ! Пурин те кимĕ пуçĕнчи отсека пухăнмалла! Калаçасса çурма сасăпа кăна калаçăпăр... Пирĕн вăхăт нумай ĕнтĕ!

Капитан-лейтенант каланă çĕре пурте пухăнчĕç. Сменăра тăракансем çеç хăйсен вырăнĕсенче юлчĕç.

— Юлташсем, — терĕ капитан-лейтенант Николькин.—Ыран—Совет флочĕн кунĕ. Эпир ăна мĕнле çитĕнўпе кĕтсе илĕпĕр-ха?..

Подлодка тинĕсĕн хăйăрлă тĕпĕнче лăпланса выртни халĕ питех те вырăнлă пулчĕ. Анчах нимĕн те тăвайман, моторсене чарса, ирĕксĕрех çĕр каçмалла. Гидрофонсем çўлте шыври сассене «хыпашласа» тăраççĕ,— халь ĕнтĕ «çывăрма» выртнинчен ырри мĕнех пур-ши? Шторм вăхăтĕнче тинĕс тĕпĕнче шăпăртах выртасси çав тери килĕшўллĕ ĕçчĕ те. Хăть тост çĕкле вара — никам та айăплаймĕччĕ.

Вăхăт вăраххăн шăвать. Кимĕ ăшĕнче сывлăш пăсăлнăçемĕн пăсăлса пычĕ, кислород çитми пула пуçларĕ. Пилĕкултă сехет иртсенех пуç çаврăнма тытăнчĕ. Апла пулин те, кимĕри тĕрлĕ механизмсене çурçĕр иртиччен юсарĕç. Кимме малалла ишме май паракан руле кăна шыв айĕнче юсаймарĕç.

Кислород пĕтсе пыни нумай асап кўчĕ. Чи малтанах ĕçре ывăннă матроссем тăнран кая пуçларĕç. Базăран тухнăранпа ура çинче пулнă командир та ĕшенсе çитрĕ. Вăл, хăй вырăнне Изратова хăварса, çывăрма выртрĕ. Старшина, ыттисенчен тĕреклĕрех пулнăскер, капитан-лейтенант хушнине пурне те тума тăрăшрĕ.

— Пĕр сехетрен вăратăр мана,— терĕ Николькин, хăйĕн сехетне старшина аллине парса.

Вăхăт çитсен, Изратов офицер патне пычĕ:

— Командир юлташ! А, командир юлташ!

Николькин илтмерĕ.

— Эсир вăратма хушнă вăхăт çитрĕ!

— Старшина?.. Изратов-и эсир?

— Командир юлташ... Эпĕ ку.. Эсир пĕр сехетрен вăратма хушнăччĕ,— офицер хулпуççийĕсене силлерĕ старшина.— Сире вăратма юрать-и?

— Ч-чудак,— мăкăртатрĕç Николькин тутисем. — Вăратсан — «вăратма юрать-и?»

— Капитан-лейтенант юлташ!.. Вăхăт çитрĕ!..

— Х-хорош-шо!

Командир тепĕр аяккине çаврăнса выртрĕ. Унăн пырĕнче темле кустăрма кăлтăртатнă пек, вăл тата вăйлăрах харлаттара пуçларĕ.

«Юрĕ. Çывăртăрах эппин тата çур сехет!... Анчах ан ятлатăрччĕ кайран».

Çур сехет аран-аран иртсе кайрĕ.

— Командир юлташ!..

— О-о!—тăсăлса илчĕ леш.— Нумай çывăрнă эп!

— Сехет çурă çеç çывăртăр-çке!

— Чиперех-и кимĕре?

— Пурте йĕркеллĕ!

— Тавтапуç сире!.. Халь ĕнтĕ эсир канăр!

Старшина пуçне кăшт сĕлтсе çеç ответлерĕ. Аллине çыхнă сехете вĕçертсе командира тыттарчĕ.

Изратов малаллине астумасть. Кимĕ тинĕс тĕпĕнчен хăпăнса уйрăлнине те асăрхаймарĕ вăл. Командир та урăх тĕккелемерĕ ăна.

Кимĕ çиеле тухсан çур сехетренех ылттăн шăллă пĕр лейтенант, хулне дежурнăйăн «РЦЫ» текен паллине çыхнăскер, компас тĕрĕслеме килсе пĕрмаях мăкăртатать, сура-сура ятлаçать.

— Штурман,— терĕ вăл,— мĕн пăхатăр? Берлина кайма пуçланă вĕт эпир!

— Мĕн, мĕн?

— «Мĕн, мĕн». Электрик отвертка тавраш хăварман-и кунта?

— Вăл пачах пулман!

— Компас мĕншĕн суять вара?

— Эсир тĕрĕслеме килнĕрен пуль?!..

Ревизорсене юратмасть вăл.

— Чипертерех калаçăр!.. Килĕр-ха, курăр! Компас-и ку? Кирлине мар, эпи карчăк хăçан çуралнине кăтартать пире, усал!

— Ан палкăр пустуя!..

— Мĕн «пустуя»? Ĕненмесен—килсе пăхăр!

Кĕçех кунта ытти офицерсем те пухăнчĕç.

— Кам кунта электропроводка карнă?—харах ыйтрĕ ылттăн шăлли.

Çав лейтенант хушнипех Изратов, кирлĕ хатĕрсене илсе килсе, электропроводкăна урăх çĕртен карса ячĕ.

— Айăпĕ проводран килмерĕ пуль? Магнит стрелки чиперех кăтартатчĕçке!—хирĕçрĕ штурман, тĕрĕслекен дежурнăй хăтланăвĕ пирки тарăхса.

Дежурнăй-офицер тĕрĕс кăтартакан компас патне янаххипе пырса тĕрĕнчĕ те, компас стрелкисем татах кăшт кăна чалăшса кайрĕç.

Штурман ун çине тарăхни вырăнлах пулнă-мĕн. Ăна малтанлăха хăй те пĕлмен, чăн-чăн айăпа тупма Изратовăн шўтле персе янă сăмахĕ çеç пулăшрĕ.

— Лейтенант юлташ, эсир ылттăн шăллă пулнăран юратмасть сире компас. Сирĕн шăлăрсене, чăнахах, çиелтен кăна ылттăнламан-и? Варринче, тем тесен те, хурçă пуль-ха?

Çак кимĕ çине икĕ эрне каярах çеç килнĕ офицер хĕп-хĕрлĕ хĕрелсе кайрĕ: «Намăслантаран çынна...»

Пĕтĕм мыскара дежурнăй шăлĕсене пула килсе тухни каярахпа пурне те паллă пулчĕ.

Кимĕ ишсе тухрĕ ĕнтĕ, анчах вăл малалла та, каялла та кайма пултараймасть,—руль пăсăлнă.

— Капитан-лейтенант юлташ, ирĕк парсамăрччĕ мостик çине хăпарма!

— Изратов?—пуçне кăмăллăн пăрчĕ командир.

Сигнальщик Токарев, биноклĕне куçĕ патĕнчен илсе, каялла çаврăнса пăхрĕ. Вăл, Изратов торпедиста курсан, юлташла кулса илчĕ, куçĕсене мăчлаттарчĕ.

Изратов хăй тусĕ çине пăхмарĕ те. Вăл тўрех, йăла тăрăх, таврана сăнаса пынă май, офицер патне кайрĕ. Сирĕлме пуçланă тĕтре çапах та иксĕлместха. Ку—пит те аван.

— Туртатăр-и, Изратов?—сасартăках сĕнчĕ Николькин.

Командир кăмăлĕ пăлханни унăн калаçăвĕнчен те, хăтланăвĕнчен те, сăнĕнчен те паллă.

«Эх, тĕтри хуть сирĕлминччĕ!—шухăшларĕ Изратов, инçетелле пăхса.— Ансăртран килсе тухма пултаракан хăрушă инкексенчен çав тĕтре хўтĕлесе хăваречĕ те. Кĕçех инçет курăна пуçласан; ăçта кайса кĕмелле? Çитменнине тата тăшманăн пысăк карапĕсем килсе тухас хăрушлăх та пур. Цистернăсене шыв тултарса ĕлкĕрме

ĭата шыв айне путса çухалма апла та, капла та вăхăт юлмасть. Чармак куçлă тăшман, кĕске дистанципе усă курса, совет подлодкине хытах сиен кӳме пултарĕ. Тĕттĕмре ремонт тăвассишĕн ишсе тухма каллех вара тинĕс тĕпĕнче каçчен кĕтмелле-и? Тем каласан та, апла тăвас килмест. Ĕнерхи йĕрлевçĕсем советсен шыв айĕнчен çӳрекен кимми путнах тесе шутлаççĕ ĕнтĕ. Çапла ара! Вăн лере, çурри таран буй тухса тăрать. Вăл — пирĕн виле хĕресĕ. Апла-тăк, çак кунсенче ЭПРОН экспедицийĕ çитессе кĕтсех тăр!..»

Паян Николькин тĕпчекен квадратпа фашистсен караванĕ иртсе кайма кирлĕ. Çакăн çинчен штабра та лайăх пĕлеççĕ,— тĕплĕн тĕпчене разведчиксем ăна виçĕмкунах пĕлтерсе хунă. Çав каравана вĕçертсен — ку вара Тăван çĕршыв умĕнче пысăк айăпа кĕниех пулĕччĕ.

Пĕтĕм лару-тăрăва шута илнĕ капитан-лейтенант Николькин, мĕнпур хăюлăхне пухса, умри пысăк хăрушлăха пăхмасăр, çирĕп тĕллев тытрĕ. Мĕн пулать те мĕн килет — вăл çав теветкеллĕ ĕмĕтрен кăшт та пăрăнас темерĕ. Горизонтальнăй руле тӳрлетме вăл, каç пуласса кĕтмесĕрех, çӳле, тинĕс çине хăпарма шутларĕ. Çитменне тата сывлăш та пĕтсе çитнĕччĕ. Каçчен кĕтес пулсан, экипаж членĕсем те йăлтах анкă-минкĕленсе юлĕччĕç.

Карап капитанĕ хăйĕн ĕçне кĕске хушусемпе приказсем панинчен пуçларĕ.

Акă мостик çине аялтан инструментсем пачĕç.

Офицер старшина патне пычĕ те аллине Изратов хулпуççийĕ çине хучĕ. Çапла вăл, чылай вăхăт хушши чĕнмесĕр, кăтра çӳçлĕ йĕкĕт çине, чăваш ачи çине пăхса тăчĕ. Пысăк чинлă офицерăн хăтланăвĕ, пирус туртса пĕтернĕ старшинана çав териех ачашлани аякран пăхса тăраканшăн ытла та килĕшмен пек туйăнать.

— Пытармастăп, Изратов юлташ,— асăрханса пуçларĕ подводниксен командирĕ.— Сирĕн паттăрла ĕçĕрсене пурне те шута илетĕп эпĕ. Анчах, маттур лаша туртарах парать, çавăнпа ăна ытларах кӳлеççĕ... Халĕ эсир киммĕн чи вĕçне, кормăна, каятăр. Вăл рубкăри люкпа юнашарах. Атту, хăпарма хăпартăмăр,— халь ак — ни унталла, ни кунталла. Ишме пултараймастпăр. Сирĕн тата çакна пĕлмелле: тăшман пĕрте-пĕр килсе тапăнсан, эпир тӳрех шыва анатпăр. Сире вара çиелте пĕччен тăрса юлма тивет. Анчах...— командир кулса ячĕ,— пурнăçри пур инкексенче те «анчах» пур. Вăл — икĕлентерекен шанчăксенчен пĕри. Çапла... Эпир лайăх ĕмĕте кăна шанса пурăнма пултаратпăр.

Офицер тĕпчекен куççемпе татах Изратов çине пăхрĕ.

— Пултараймасан — урăххи каять. Эпĕ ку ĕçе тума вăйпа хистеместĕп, хăйсен ирĕкĕпе килĕшекенсене çеç суйлатăп.

Изратов кăртах сикрĕ:

— Командир юлташ, мана шанмастăр-и вара?

— Ĕненетĕп сире, Изратов, чĕререн шанатăп... Эп ахаль кăна ыйтрăм, сирĕн шухăшăра пĕлесшĕн çеç... Тен, ытла ывăннă е чирлĕ пулĕ эсир?! Ун пекки пулать вĕт?

— Чирлес тесе шухăшламанччĕ-ха.

— Эсир оптимист иккен. Апла-тăк, ăнăçу сунатăп. Ĕçĕре хăвăрт та татăклă тăвăр!

— Итлетĕп, командир юлташ!

Старшина вăрт çаврăнса капитан хушнă çĕре кайрĕ. Ĕçĕ—çын тума пултарайман ĕç мар иккен. Çапах та тертленмелли çителĕклех. Пысăк гайкăпа аппаланса, вăл чăм шыва ӳкрĕ. Кивĕ гайка вырăнне çĕннине, тутăхманнине, хытарса лартрĕ. Киввине шывалла вăркăнтарчĕ...

Иккĕмĕш статьяри старшина хăйне хăй хистесе ĕçлерĕ. «Так, питĕ лайăх! Тата тепре...» тесе пĕччен çи каласать, хавшакан вăйне хытарать. Ялтисем вырăнтан хускатмалли пĕр-пĕр йывăр япалана пиллĕкĕн-улттăн тытатчĕç те: «тытар-и те йăтар-и, йăтса илсе хурар-и? Хо-оп!» тесе такмакласа туртатчĕç. Старшинан кунта пĕччене аппаланас пулать... Ак ăна пит те пăчă пула пуçларĕ. Вăл çамки çинчи тарне фланелевка çаннипе шăйăрттарса шăлчĕ. Пĕшкĕнсе, ывăниччене ĕçленĕ хыççăн, кăштах тӳрленсе сывлăш çавăрчĕ. Пуçне каçăртса тӳпенелле пăхрĕ. Ăна тĕлĕнмелле ырă хĕвел курăнса кайрĕ.

«Тĕтре сирĕлнĕ те-и?»

Вăхăтлăха тăшман аллине лекнĕ тинĕс, хăй çĕршывĕн подлодкине курса, палăри-палăрми савăнăçлăн силленсе выртать. Ирхи тĕтрен нимĕнле йĕрĕ те юлман, пирус тĕтĕмĕ евĕрех сирĕлсе пĕтнĕ.

Изратов мостик çине пăхса илчĕ: Токарев куçĕ патне бинокль тытнă. Вăл тем тинкерсе сăнать, сигнальщикăн яланах сăнамалла. Палуба хĕрринчи командир, пĕчĕк тимĕр карлăк евĕрлĕ леер çине тĕренсе, йăлтах урăх çĕрелле тинкерет. Вăл сасартăк пуçне Изратов еннелле пăрчĕ: «Ну, час пĕтеретĕр-и?» тесе ыйтнăнах курăнаççĕ унăн канăçсăр куçĕсем.

— Тепрер минутранах пĕтет!—терĕ Изратов, офицер чăнласах ыйтма пултарассине сиссе.

Тĕтре тени ытти чух моряксемшĕн яланах тăшман пулаканччĕ. Вăл, сирĕлсе пĕтмен пулсан, халь тăшмантан тем пекех хӳтĕлĕччĕ, анчах çав сыхлавçă хальхинче, чи кирлĕ самантра, сутăнчăк пекех хăтланчĕ.

Изратовăн ремонта вĕçне çитерес тесен, çăрапа çырттарса хĕстернĕ пысăк гайкăна тата тăват-пилĕк хут çавăрса илмелле пулчĕ. Вăл, ĕçленĕ май çан-çурăмĕ тăрăх шиклĕ çӳçенчĕк сăрăлтатса иртнине сисрĕ. Анчах дизелĕн тикĕс шавĕсĕр пуçне таврара урăх нимĕнле сасă та çук. Сасартăк ун хăлхи темле хăрăлтатнă сасса, унтан çав сасă, тăруках шăпланса, урăхланнине илтрĕ. Ак кĕтмен çĕртен темĕн шăхăрса, чăшăлтатса тухрĕ, балластнăй цистернăна шыв сăрхăнса кĕни илтĕнчĕ. Подлодка силленсе, чĕтренсе илчĕ.

— Мĕн хăямачĕ ку?.. Неушлĕ путать?

Ун ăшчикĕ пĕрре шăнса, тепре вĕриленсе кайрĕ, чĕри пăчăртанса илчĕ. Вăл, юлашки хут пĕтĕм вăйран чăрсăрланса, аллинчи уççине картлаттарса туртрĕ кăна, самантрах ун урисем шыва путрĕç. Старшина, тинĕс çине юлас тесе, çӳлелле талпăнчĕ. Куç умĕнчех кормăри антенна юписем, кĕскелнĕçемĕн кĕскелсе, шыва тирĕнсе анчĕç. Тинĕс шыва чалăшшăн çуракан перископа та çăтать, ак çав перископран ывăçласа пăрахнă юр пысăкăш шыв кăпăкĕ кăна тăрса юлчĕ. Торпедист, темрен ярса тытас пекех, аллисене тăсрĕ. Анчах ăна шыв авăрĕ путарас пек çаврăрма тытăнчĕ. Кимме мĕн пулнине вăл кайрантарах тин тавçăрса илчĕ.

— Васкавлă погружени! Тарăна хăвăрт анмалла пулнă иккен!—пĕр йăнăшмасăр шухăшларĕ вăл.— Манран пĕле тăркачах уйрăлчĕ. Апла пулсан, кĕтмен хăрушлăх килсе тухнă.

Çак шухăша çирĕплетсе панă пекех, таçта моторсен кĕрлевĕ илтĕнсе кайрĕ, вара сасартăк Изратов çийĕн виçĕ самолет мĕкĕрсе уласа иртсе кайрĕ. Вĕсем, кустăрмисене хурчка пек лăпчăтса лартнă, мăка çунатлă хурçă кайăксем, шыври карапсем пек кильватернăй колоннăпа мар, сăнă пулса, виçкĕтеслĕн йĕркеленсе, вĕçеççĕ. «Кусем хейнкельсем-ши? юнкерссем-ши? е мессершмитсем-ши?» Кашнин çуначĕ çинчех хура тата сарă тĕспе сăрласа тунă хĕрессем пур. Торпедист çăхансене палласа илчĕ те пуçне хутлатса лартрĕ.

«Торпедоносецсем!»—хăрушă шухăш вĕçсе иртрĕ ун пуçĕнче.

Изратов çак йывăрлăха лекнĕшĕн кулянма мар, савăнса кайрĕ. Фашистсен сывлăшри карапĕсене вăхăтра асăрханисемшĕн пĕтĕм чунĕпе хĕпĕртерĕ. «Маттур, Токарев!.. Захватчиксен бомбисемпе торпедисенчен подлодкăна маларах хăтарма пултарнăшăн çĕр хут тавтапуç!»—савăнчĕ вăл.

Самолетсем, пĕчĕкленнĕçемĕн пĕчĕкленсе, пăнчă пысăкăш кăна юлсан, унăн савăннă чĕри ыратса кайрĕ.

— Юлташсем мана илме каялла тухиччен шывра тытăнса тăрайăп-ши? Тӳсĕмлĕх çитĕ-ши? Эх, хул айĕнче пробкаункă пулсан...

Каллех моторсем улани илтĕнчĕ. Изратов кăкăр тулли сывлăш çăтрĕ те шыва чăмрĕ. Мĕн чухлĕ шăнăçнă ăшри сывлăша вăл час кăларса пĕтермерĕ, ăна нумая перекетлеме тăрăшрĕ. Юлашки кислорода кăларса ярсан та, çирĕме çити шутласа çитермесĕр, тинĕс çине тухмарĕ вăл. Тен, ун тăнĕ çухала та пуçланăччĕ пуль, анчах ăна, тинĕс таппи çӳлелле тапса кăларнă хыççăнах, уçă сывлăш уçăлтарса ячĕ. Вилĕм кӳресех тесе, антăхса кайса шыракан самолетсене вăл куçĕпе таçта çити ăсатса ячĕ. Подводник çăлăнăç тупас шанчăкпа, куçне пур еннелле те çивĕччĕн пăркаларĕ, ишсе пĕр пысăк çаврăм турĕ. Анчах çакă ăна пĕртте усă памарĕ: тинĕспе тӳпесĕр пуçне таврара урăх нимĕн те асăрхаймантан хăйне хăй ывăнтарни кăна пулчĕ.

Юлашкинчен, халтан кайнӑ торпедист ҫурӑмӗ ҫине выртрӗ. Ӳт ҫумне ҫат ҫыпҫӑнса ларнӑ кӗпе-тумтир, ытла та тӑвӑрланса ҫитсе, ҫан-ҫурӑма пур енчен те хӗстере пуҫларӗ. Урари хром пушмаксем кире пуканӗсем пекех йывӑрланчӗҫ,— вӗсем хӑйсен хуҫине пӗрмай аялалла сӗтӗреҫҫӗ. Старшина, ҫӑварне кӗрекен шыва сура-сура, хӑрах уринчи пушмакне хывса пӑрахрӗ. Пушмак татӑлса аялалла анса кайсан, ура ҫӑмӑлланса юлчӗ. Анчах тепринпе ун нумай тертленмелле пулчӗ, шнурӗ салтӑнманни — тӑлланса ларнӑ пулас— пушшех те халтан ячӗ. Вӑл ҫав ылханлӑ пушмака темле намӑс сӑмах та каласа вӑрҫрӗ.

Изратовӑн пулӑшу ыйтса кӑшкӑрасси тата юлташӗсен вайлӑ аллисене туясси килчӗ. Тухман ӗҫе тӑвасшӑн вӑл тепӗр хут аппаланса пӑхрӗ. Пушмак шнурӗсене салтас тесе, вӑл пӳрнисене ури патне ячӗ, хӑй чӗрӗп пекех хутланса илчӗ. Асапланни усӑллӑ пулчӗ-пулчех: урари пушмакӗ тинех хывӑнса ӳкрӗ. Пушмак тинӗс тӗпне анса кайнӑ чух, хуҫи умне ик-виҫ хӑмпӑ кӑларса хӑварчӗ. Халӗ ӗнтӗ шыв ҫийӗнче тытӑнса тӑма нумай ҫӑмӑлланчӗ.

— Мӗн тӑвас? Ӑҫталла ишес?—ыйтрӗ моряк хӑйӗнчен хӑй. Хӗвел ҫути унӑн кӗлеткине витӗрех ҫутатнӑ пек курӑнчӗ.

Хӑш еннелле кӑна ан пӑх, пур ҫӗрте те Балтика ҫийӗ ҫуталса выртать. Ҫывӑхра хуть пӗр-пӗр утрав пекки пулсанччӗ! Горизонтӑн пӗр-пӗр енчи ҫыранне ишсе ҫитме пулӗ-ши?

Изратов ишме чарӑнчӗ. Ниҫта этем чунӗ курӑнман тавралӑха тимлӗн итлерӗ. Кӑвакарса кайнӑ пӗр ватӑ чайка аялтанах ҫуйӑхса иртрӗ. Ҫав ҫемҫе чунлӑ кайӑк моряка хӗрхеннӗ пек туйӑнчӗ. Унӑн вӑйӗ ҫитсен, вӑл Изратова тем пек пулӑшнӑ пулӗччӗ, мӑнтарӑн. Акӑ ишевҫӗ умӗнчех тепӗр пӗчӗк шурӑ чайка (лешӗн чӗппи пулас) чул пек персе анчӗ те пуҫне шывра чӳхесе илчӗ. Чайка перӗнсе ҫапӑннӑ вырӑнтан кӑшӑл пысӑкӑш хитре хум сарӑлчӗ. Ҫакнашкал ҫавринкке илемлӗ хумсене Изратов пӗчӗк чухне юханшыв хӗрринче кӑларма юрататчӗ. Вӑл пӗр-пӗр ҫӳхе чакма чулӗ илетчӗ те шыв ҫийӗпе тикӗссӗн вӑркӑнтаратчӗ. Лаптак енӗпе шыва вирлӗн ҫапӑннӑ чул тӳрех путмастчӗ, кӑвакал чӗппи шӑна хыҫҫӑн хӑваласа чупнӑ пекех, шыв ҫийӗн ҫӑтӑлтаттарса таҫта ҫитиех ыткӑнатчӗ, шыва кашни хут пырса ҫапӑнмассерен кӑшӑл еврӗлӗ хитре хумсем кӑларатчӗ. Александр хӑй вӑркӑнтарнӑ чул миҫе хут сиксе илнине ҫеҫ шутлатчӗ, вара ҫӳхе чул мӗн чухлӗ ытларах сикетчӗ, вӑл та ҫавӑн чухлӗ ытларах савӑнатчӗ.

Ҫамрӑк чарлан ҫӳлелле пӗрхӗннине курсан, матрос савӑнсах кайрӗ. Тинӗсри анлӑ ирӗкӗн тусӗсем! Ӑҫтан чӑтӑн хӗпӗртемесӗр? Ав, мӗнлерех ярӑнаҫҫӗ те вӗсем: штиль[1] вӑхӑтӗнчи катерсем пекех.

— Эх, эсир... эсир!.. Нимӗн те ӑнланмастӑр мана...

Старшина месерле ҫаврӑнса выртрӗ. Пуҫ мимине пӗрмаях пӗр ыйту пӑталаса тӑрать:—Мӗн тӑвас?» Анчах, ответ ҫук. Чӗрене, сӳнекен кӑвар хӗлхемӗ евӗр, пӗр пӗчӗк шанчӑк кӑна нумай мар ӑшӑтса илет. Ку вӑл— хӑрушлӑх иртсе кайнӑ хыҫҫӑн шыв айӗнчи карап каялла хӑпарасса ӗнентерекен шухӑш. Ак йӳрӗк Токарев пӗрпӗр каната сулмаклӑн сулса ярӗ те торпедист аллине тыттарӗ, ҫирӗп те шанчӑклӑ аллисемпе мостик ҫине туртса илӗ, шала йӑтса кӗрӗ. Кӗҫех тухтӑр пырса ӑна пӗр стакан хӗрлӗ эрех, «Шемаха» текен пӗрремӗш сортлӑ кагор, сыптарма хушӗ. Ҫав эрех ӳтпӗве ӑшӑтсах ярӗччӗ. Тен, «тата кирлӗ-и?» тесе те ыйтӗччӗ. «Кирлӗ» тесен, татах тултарса парӗччӗ. Эрех ҫук пулсан, пилюля пекки ҫӑттарӗччӗ. Ҫапла вӑл шӑнса пӑсӑласран сыхланса юлӗччӗ. Тутлӑ кагор ӗҫтернӗ пулсан, вӑл какӑрма пулӑшӗччӗ. Кӑштах самайлансан, сунасласа та илӗттӗн. Медик хушнипе, юлашкинчен, ӑна икӗ хут сарнӑ таса простӑньлӑ тӳшек ҫине вырттарӗччӗҫ. Чирлӗскер патне, тен, Никольскин командир та пырӗччӗ. Вӑл вара, юнашар ларса: «Ну, мӗнле, ӑмӑрткайӑк? Чӗрӗ-и, Сашок?» тесе ӗмӗрте пӗрремӗш хут ятран чӗнсе ыйтӗччӗ. «Ак тата! Пирӗн вилме юрать-и вара, командир юлташ?!»—ҫирӗппӗн ответлӗччӗ иккӗмӗш статьяри старшина Александр Изратов чӑн-чӑн балтиецла.

Вӑл йӗпе аллаппипе питне сӑтӑрса илчӗ, картах туртӑнса, ӳпне ҫаврӑнса выртрӗ. Тӗреклӗ аллисене чавса сыппи тӗлӗнчех хутлатмасӑр тӳррӗн тӑсса, вырӑсла хӑвӑрттӑн хӑлаҫланса, малаллала ишрӗ. Пӗвӗ ҫӗлен пек авкаланса, йӑр-йӑр йӑрӑлтатса шуса кайрӗ. Ҫурӑмӗпе хулӗсем ҫинчи мускулӗсем выляреҫ.

Каллех таҫта самолет моторӗ сывлӑша чӗтретет. Унӑн сасси резонатортан та хӑватлӑ-и, тен?!. Ҫук, халь подлодкӑн, мӗн каласан та, шыв ҫине тухма юрамасть: Хӑрушӑ! Халь тин мана ҫӑлас тесе ан хӑтланччӑр та... Кам пӗлет, тен, подлодка ҫывӑхрах пуль. Ун ӑшӗнчисем хӑйсен торпедисчӗ мӗн хӑтланнине те перископ витӗрех сӑнаса тӑраҫҫӗ-тӗр. Тен, вӑл ман айрах пуль, эпӗ шӑпах ун перископӗ тӗлӗнче пуль?!

Моряк, тинӗс айӗнчи хурҫӑ пулӑ шавӗ илтӗнмест-ши тесе, хӑлхине тата хытарса итлерӗ. Подлодка ӑҫтарахрине чухласа илесшӗн вӑл, майне пӑркаласа, пӗтӗм куҫ вӑйӗпе тинӗс сийне сӑнарӗ. «Шывран окуляр йӑлтӑркки курӑнмасть-и таҫта? Е шыв перископ хыҫҫӑн вӗттӗн чӗтренсе юлни палӑрмасть-и?» Анчах куҫ нимӗне те тытаймасть.

Пуҫра пӑтранчӑк шухӑшсем. Изратов хӑй айӗнчи шыв тарӑнӑшӗ миҫе метрне пӗлесшӗн: «Лотпа виҫсе пӑхнӑши кунта? Ҫӗр метр пулать-ши е ҫухрӑм та ытла? Ак, тата кӑшт асаплансан, пуҫӑмпах путӑп, тӗттӗм тамӑка лекӗп. Сарана тӗслӗ шыв курӑкӗсем хушшинче медузӑсемпе спрутсем тата ытти тискерсем ҫисе ярӗҫ». Ҫак хӑрушла шухӑша пула моряк ӑшчикӗ шӑнса кайрӗ. Кун хыҫҫӑнах ӑна урӑхла шухӑшсем ытамласа илчӗҫ: вӑл ҫак ӗҫе тума тухиччен кӑна амӑшӗ патне ҫыру ҫырас тенӗччӗ. Анчах юлашки приказа пула (ҫӑннипе ку приказ та марччӗ, хӑв ирӗкӳпе тумалли ӗҫ кӑначчӗ) ҫырма пуҫланӑ ҫырӑва пӑрахма лекрӗ. Халь ҫав вӗҫленмен ҫыру подлодкӑрах, команда кубрикӗнчи минтер айӗнчех тӑрса юлчӗ. Ӑна хуҫлатса лӳчӗркес мар тесе, «Шкул» ятлӑ кӗнеке хушшине хурса хӑварнӑччӗ. Кӗнеке хуплашкийӗ ҫинче — Аркадий Гайдар. Ӑна вуласа тухма мичман, парторганизаци секретарӗ, сӗннӗччӗ. «Кӗнеке питӗ лайӑх, усӑллӑ. Ҫынна паттӑр пулма вӗрентет»,— тесе каланӑччӗ вӑл. Ҫав кунах командир та «Похода кайса килсен, сире лайӑх службӑшӑн отпуск парӑп. Кӑҫал хӑвӑр аннӗре те, чӑваш ҫӗршывне те курасах пулать сирӗн», тенӗччӗ.

Шухӑшсем ҫак вырӑнта татӑлса кайрӗҫ. Матрос шӑмӑ варринченех шӑннине туйрӗ. Ӑшӑ пулсан, шӑлсем хӑйсем тӗллӗн шаккаман пулӗччӗҫ, янах та чӗтренмӗччӗ.

Унӑн тӑртанса ывӑннӑ урисем паҫӑрах ҫывӑрса кайнӑ. Вӗсем тимӗр тӑлӑпа тӑлланинчен те ытларах йывӑрланчӗҫ. Аллисем те, хавшакланса, лӗнчӗрех усӑнчӗҫ, сыпӑ шӑнӑрӗсемпе хулпуҫҫисем туртса ыратакан пулчӗҫ. Моряк шыв ҫинче аран-аран тытӑнкаласа тӑрать. Ӗнтӗ вӑй иксӗлсе пынӑран шыв таппи та ҫӗклесе тӑман пек туйӑнать. Малашне вӑл, вӑйне ытларах упрас тесе, месерле выртса вӑхӑт ирттерме тӑрӑшрӗ. Асапсене минутлӑха та пулин манас шутпа, куҫӗсене уҫмасӑр выртрӗ вӑл. Ӑна лӑпкӑ хумсем сӑпкари пек ачашшӑн та ыррӑн сиктереҫҫӗ. Изратовӑн халь тесен халь вилнӗ пек тутлӑн ҫывӑрса каяс килет. Вӑл ыйхӑ пусса килнине куҫ уҫма йывӑрланнинчен пӗлчӗ. Тӗлӗрсе кайсан, путма-путма тытӑнать те, ҫӑварне шыв лексенех, пӗтӗм пӗвӗпе шартах сиксе, ыйхӑ ӗнтрӗкне сирсе ярать. Апла пулин те, ҫак кӗске канӑҫра кӑшт ҫӑмӑлланнӑнах, вӑй пӑртакҫӑ хутшӑннӑнах туйӑнать ӑна.

Ӑшӑнас тесе, тата тепрер ҫаврӑм ишме кӑна пикеннӗччӗ вӑл, сасартӑк, вутпуҫҫине шыв сапса сӳнтернӗ пекех, таҫта темскер чӑшӑл-чӑшӑл чӑшлатса ҫывхарни илтӗнчӗ. «Мӗн ку?» Анчах Изратов ҫав тӗлӗнтермӗш мӗнне пачах пӗлеймерӗ. Тем хӑямачӗ ҫумранах чашкӑрса иртрӗ. Шывран ҫурӑлса тухнӑ тискер сасӑ моряка хӑратсах пӑрахрӗ. Ман айри подлодка ӑшӗнче взрыв пулмарӗ пулӗ-ҫке? Неушлӗ хаклӑ юлташӑмсем пӗтрӗҫ? Вӗсем сирпӗнчӗҫ пулсан, айӑмри кимме пӗвӗмпе мӗншӗн хӳтӗлеймерӗм вара? Вӗсен пурнӑҫӗ ӑнӑҫлӑ пултӑр тесех, пӗтӗм йывӑрлӑха хам ҫине илме тӑрӑшрӑм. Эпӗ тӑрӑшни мӗне тӑчӗ ӗнтӗ? Ӑна пӗлнӗ пулсан, гайкӑпа та асапланас ҫукчӗ. Юлташсем ҫухаличчен ытах хамӑн пӗтес пулнӑ... Е урӑх япала пулчӗ-ши? Неушлӗ ҫӑткӑн пулӑ шӑллӑ ҫӑварне карса персе тухрӗ?—Изратовӑн пӗтӗм ывӑнни, пӗтӗм ыйхи иртсе кайрӗ.— «Хӑлхасем йӑнӑшмарӗҫ пулӗ-ҫке? Ҫук, тем тесен те, ку — ашкӑнчӑк сасӑ; ҫивӗч хӑлхасене лайӑх илтӗнчӗ».

Месерле выртаканскер, тӑруках «ура ҫине» тӑчӗ. Умрах, виҫӗ утӑмра пек

[1] Штиль—тинӗс ҫинчи тӳлек ҫанталӑк.

ЁМЁТ ÇИТРЁ!

Икĕ çул каялла, çиччĕмĕш класран вĕренсе тухсанах, Геннадий Полуботьевпа юлташĕсем хушшинче çакăн пек калаçу пулса иртнĕ:

— Малашне ăçта каймалла?

Пĕрисем вăтам шкула вĕренме кĕме ĕмĕтленнĕ, теприсем техникумсене каясшăн пулнă.

— Эпĕ токарь пулатăп, завода ĕçлеме кĕретĕп, — тенĕ татăклăн Геннадий.

Ун чухне юлташĕсем унăн шухăшне тиркенĕччĕ, вĕренÿри йывăрлăхсенчен хăраса ÿкрĕн,—тенĕччĕ вĕсем. Анчах Полуботьев хăйĕн шухăшне пăрахман.

Халĕ ĕнтĕ Геннадий—токарь. Нумаях та пулмасть вăл хăйпе пĕрле вĕреннĕ юлташĕсемпе цехра тĕл пулчĕ. Шупашкарти 22-мĕш номерлĕ вăтам шкулта, 9-мĕш класра вĕренекенсем электроаппаратура заводне экскурссие пынă.

— Ёмĕтленнĕ ĕмĕтĕм çитрĕ, халĕ эпĕ, ĕçленĕ хушăрах каçхи вăтам шкулта вĕренетĕп,—пĕлтерет Полуботьев хăйĕн юлташĕсене.

Ÿкерчĕкре: (сылтăмран сулахаялла) Геннадий Полуботьев, Сергей Васильев, Юрий Сергеев электроаппаратура заводĕнче.

Б. Тимкин фотоÿкерчĕкĕ.

кăна пулĕ, вăл кăпăклă çул йăранне асăрхарĕ.

— Мĕн ку?!.. Торпеда йĕрĕ?!

Вăл пуçне сылтăмалла пăрчĕ — нимĕн те çук. Сулахаялла пăрчĕ — куçпуç чарăлсах кайрĕ, çÿç вирелле тăчĕ: тинĕс тăрăх питех те пысăк карап пырать. Ку — икĕ мачтăллă лÿппер транспорт. Ячĕ те кăштах курăнать: «HAUSSA».

— «Хаусса?» — вăл тата хытă тинкерчĕ.— Чăн та, силуэчĕ те, надстройки те—çавăнах. Ара, вăл латыш чĕлхипе çырнă хамăр карапчĕ-çке? Мĕншĕн вара ялавĕ фашистсен?

Изратов йăлтах тавçăрса илчĕ:

— Йытăсем!.. Тинĕс çинче те ют çын аллипе кăвар туртаççĕ!

Моряк, аллисемпе хăлаçланса, торпеда чĕрсе хăварнă çул тĕлне пычĕ. Çав торпеда, паллах, хамăрăн подлодкăран тухса вĕçнĕ.

Акă вăл — торпеда çурса-сухаласа кайнă шурă йĕр. Моряк ерипен çухалса пыракан йĕр çине пуçне хучĕ, ăна чуптăвас килсе кайрĕ.

Изратов тÿрĕ йĕр ăçталла кайнине хăрах куçне хупса тĕллерĕ: торпеда, шыв çийĕн кăпăклă çинçе сукмак хăварса, экспресс хăвăртлăхĕпе фашист транспорчĕ еннелле таптарнă...

...Старшина тăватăмкун каç нарядра пулнăччĕ. Вăл хăйĕн отделенийĕпе, ырана валли тесе, улма шуратма кайнăччĕ. Кок пĕчченçи ĕлкĕреймест-çкеха. Александр аллинчи çĕрулми хуппи вăрăм лента пекех усăна-усăна анчĕ, унтан тăсăлнăçемĕн тăсăлчĕ те тÿрех урайне татăлса ÿкрĕ. Çак торпеда йĕрĕ те, туртса карăнтарнă лента пекех, тÿп-тÿрĕ.

Изратов тепĕр май çаврăнчĕ: «Инçе-ши кунтан юратнă подлодкăм? Эх, типçĕр çинчи пек пулсан, чупса кайса пăхăттăм: торпеда тухса кайнине палăртакан йĕр вĕçĕ ăçтине, пуçламăшне курăттăм».

Акă взрыв сасси кĕрлерĕ: вăл тĕнче шăплăхне путлантарса лартрĕ. Моряк кисренÿ-шартлату енне пăхрĕ те, çав транспорт тĕлĕнче варинкке евĕрлĕ хура тĕтĕм, тимĕр татăкĕсемпе шыв тата вут-çулăм фейерверкĕ çĕкленни çеç курăнчĕ. Кунта пушарăн хĕрлĕ çулăмĕ те, мăкăрланакан йÿçĕ тĕтĕмĕ те, тĕм хура хăрăмĕ те — пурте пĕрлешнĕ. Захватчиксене çавă кирлĕ те!

— Ку шăпах уяв кунĕ тĕлне кирлĕччĕ. Халĕ ĕнтĕ çуттине сыпма та кăмăллă. Тен, ăна ĕçрĕç те пулĕ халиччен?! Шав кăларакан шампански пăккине тăшман хăлхи илтесрен, кĕçех шартлатса çурăлма пултаракан минăран шикленнĕ пек, асăрхана-асăрхана уçрĕç пуль?!..

Тинĕсри гитлеровецсем ытла та иртĕхнĕ. Асăрханса çÿремешкĕн кăштах вĕрентмелле вĕсене. Балтикăна тытса илтĕмĕр тенĕ те, епле хăюллăн çÿреççĕ вĕсем. Транспорт самолечĕсемсĕр пуçне, шывра конвоир та çук. Прогулка мар — шитка-крышка! Ку — леш тĕнчене кайни пулчĕ, пирĕнле каласан. Çитменнине тата, пĕтекен карап патĕнче сывлăшри торпедоносецсем те çук. Таçта вĕçсе кайнă! Мурĕ пĕлет! Карапĕ çумне çыхса хуман вĕт вĕсене.

Торпедист Изратов юлташĕсен ăнăçлă çĕнтерĕвĕшĕн калама çук хаваслантăнчĕ. Хăй çав чыслă ĕçе хутшăнайманнишĕн, торпедăна хăй аллипе кăларса ярайманнишĕн çеç кăштах пăшăрханчĕ. Çапах та, транспорт çурмалла хуçăлса, «пырши-пакартине» сывлăша сирпĕтсе путнине курсан, вăл «урра!» кăшкăрчĕ, шыв çине аллаппипе çапкаларĕ. Таçтан тĕлĕнмелле хăват килсе кĕчĕ ун чĕрине.

— Маттур, юлташсем! Маттур!

Моряка хайхи гайка аса килчĕ, горизонтальнăй руле пĕчченçиех йĕркене кĕртнине ăнланса илчĕ вăл.

— Питĕ лайăх турăм. Манăн ÿкĕнмелли çук. Тавтапуç, çийĕнчех тÿрлетсе ĕлкĕртĕм,— калаçса илчĕ вăл сасăпах.

Тăшманăн сывлăшри икшер моторлă пирачĕсем подлодкăна урса кайсах пыраççĕ. Вĕсен пуçĕсем, маларах тухса тăнипе, майракисемпе хăмсарса, кĕçвĕç сĕкĕшме хатĕрленнĕ качака пуçĕсем евĕрех туйăнаççĕ. Вĕсем стройра юлташĕсемпе юнашар, çунатран çунат уйрăлмасăр, флагманĕ хыççăн пыраççĕ. Халь иртсе каякан сывлăшри виçĕ патрульăн тăсмака торпедисем хăйсемпе пĕрлех: вĕсем «хурчка» хырăмĕ айĕнчех, кĕç татăлса анас пек, çакăнса тăраççĕ. Çав гидросамолетсем, пирĕн подлодкăна тупса, тем туса тăкĕччĕç. Авиаци моторĕсен вăйлăланнăçемĕн вăйлăланса пыракан сасси çырана çапăнакан тăвăлри хумсен шавĕ пек йлтĕнсе тăчĕ.

Изратов, ним сиккеленмесĕр, тÿпенелле пăхса выртать: çÿлтен фашистсен торпедисем ÿкессинчен вăл хăнк та тумасть.

Анчах подводникĕн каллех вăйĕ пĕтсе килчĕ те, вăл куçне хупрĕ. Тĕнчери пĕтĕм йывăрлăх хăй çине тиеннĕ пек туйрĕ вăл...

— Пĕр-пĕр хытă япала çине выртасчĕ, лайăх кăна ăшăнса канлĕн çывăрса каясчĕ,— моряк куç хупаххисене йывăррăн уçса хупрĕ. Кĕçех ун умне Токарев пырса тăчĕ те: «Эс кан, Саша! Юлташсем пурте сана канма сĕнеççĕ. Эсĕ, ав мĕнлерех гайкăна пăрса кĕртрĕн, руле тÿрлетрĕн. Унччен çĕрлехи вахтăра тăтăн. Хамăрăн подлодкăна, чăннипе, торпедоносецсенчен эсĕ çăлтăн». Николькин капитан-лейтенант та пырса кĕчĕ: «Эпĕ сире валли, Изратов юлташ,— тет вăл, ăшшăн кулса,— награда памалли хут çыртăм. Эсир—чăн-чăн герой». Кок Лешка Дубинин сивĕнмен компотпа какао тултарнă стакансене поднос тулли йăтса килчĕ: «Ĕç,—сĕнет вăл, чирлĕскере ырă тăвасшăн.—Ĕç. Санăн температура пысăк, сивĕ шыв ĕçме юрамасть. Ĕçессÿ килнине пĕлсех, кусене эпĕ сан валли вĕретрĕм».

Изратов куçĕсене аран-аран уçрĕ. Хĕвел шупка-кăвак пĕлĕтре шунăçемĕн тасалса-çуталса пырать. Таса тÿпере сăтăрăнса, çăл шывĕнче чÿхеннĕ пекех çăвăнать вăл.

Ăшă сапакан хĕвел, чи çÿле хăпарса çитсе, паçăрах аялалла анма тытăннă ĕнтĕ. Çапах та халь хăйăр çинчи ваннăра пулсан, пиçсе вилмелле. Изратов пур — шăнса вилет, тутисем кăвакарса кайнă ун, шăлпа шăл та хирĕç лекмест.

* * *

Кимĕ вунă-вунпилĕк метр тарăнăшĕнче çеç лăпкăн та тикĕссĕн шуса пырать. Рульсен указателĕсем, çукран пур сасă тăвас килмен пек, илтĕни-илтĕнми саспа шăплатса илеççĕ. Тин çеç çинĕ касхи апат шăрши килти евĕр сăмсаран перет. Пĕр шухăшласан, кимĕ вĕренӳри походра ишнĕ пекех туйăнать. Киммĕн йĕпере чĕрĕлсе кайнă борчĕсене тата путнă транспортсен вырăнĕсене хĕреспе паллă тунă штурман сĕтелĕ çинчи карттăна курсан çеç, подлодка çапăçăва тухнине тавçăрса илме пултарăн. Тен, базăна таврăнма та вăхăт мар-и ĕнтĕ: пысăк ĕç те тунă — киле таврăнсан та никам айăпламĕ, анчах подводниксен нимĕн те иксĕлмен-ха. Снаряд та, торпеда та, провизи те çителĕклĕ. Подлодка, тен, паян-ыран сенче тăшман карапĕсенчен татах тепрерĕшне путарĕ. Тăшман умĕнче пысăк «парăмра»-ске-ха вăл!

Кăнтăрла куç хупса çывăрнă çăлтăрсем касхине тӳпе тулли ялкăшма тытăнсан, кимĕ çиелелле тапса тухрĕ. Хăй çинчи шыва силлесе тăкрĕ.

Мостик çинче каллех икĕ çын — Николькин капитан-лейтенантпа сигнальщик. Шыв айĕнчен çӳрекен кимĕ Александр Изратова кăнтăрла иртесре антарса хăварнă вырăн таврашĕнче çаврăм-çаврăм тума пуçларĕ. Токарев кĕçĕрхи кас тавралăха куç тымарĕсем ыратакан пуличченех тинкерсе сăнарĕ. Вăл бинокльне пĕрре усса, тепре çĕклесе, пĕрехмай бортран борта куçкаларĕ, шыв çийĕнче тĕмеске пекки курмăп-ши тесе, чĕркуçленсе пăхрĕ, ансăр палуба çине выртса та сăнарĕ, чи çӳлĕ вырăна та хăпарса тăчĕ. Командир та, сигнальщик пекех, ларатăра пĕлмерĕ.

Шыв айĕнче çӳрекен карап умĕнче, кĕтмен сĕртен тенĕ пек, темĕн мĕлтлетсе илчĕ. Хыпăнса ӳкнĕ Токарев офицер регланĕнчен ярса тытрĕ:

— Капитан-лейтенант юлташ, пăхăр-ха, ав, çавăнталла! Тем хури курăнать!

— Ку — çын мар, фашист карапĕнчен путмасăр юлнă пĕр-пĕр анкерок[1].

Вĕсем фашист карапĕн ванчăкĕсене татах та асăрхарĕç: е сасартăк урисене çӳлелле тăратнă сакă, е пичĕпе шыв тĕпнелле ӳпĕннĕ нимĕç вилли хăма çинче выртать, е кăмрăкланнă темле ещĕк юхăма май чăма-чăма илет.

Хурçă кимĕ галс[2] хыççăн галс тăвать. Шалта, отсексенче, мостик çинчен сигнал парасса кĕтсе, Изратов юлташĕсем тревогăри пек хытса тăраççĕ, «Человек за бортом!» текен савăнăçлă приказ парас вăхăта кĕтеççĕ.

Ак тинĕспе пĕлĕт пĕрлешнĕ вырăнта, инçетре-инçетре мĕл-мĕл çутă курăнса кайрĕ:—Карап!

Кимĕ ăшĕнче кĕçех тревога çĕклерĕç. Вара Николькин приказ парсанах, кимĕ, перископ витĕр пăхса пыма май пулнă таран, шыв айне путрĕ. Шурăмпуç хĕрелсе килме пуçланă вăхăталла лăпланнă яка тинĕсе подлодкăн куçĕ кăна чĕрме тытăнчĕ. Окуляр умĕнче — командир. Вăл пăртакранах хайхи карапăн пĕрмаях ӳсекен мачта урлашкийĕсене асăрхарĕ.

«Мĕнле карап-ши ку?»

Капитан-лейтенант çав карапăн силуэтне, листасене хăвăрт-хăвăрт уçкаласа, хулăн альбомра шырать.

— Миноносец № 4,— шухăшларĕ вăл.— Час ак кăнтăпăр сана. Ют шывра çӳренĕшĕн леш тĕнчене демобилизовать тăвăпăр!

Капитан-лейтенант торпедистсене приказ пачĕ:

— Торпедăлама хатĕрленĕр!

— Есть!

Тăшмана вилĕм сĕнекен команда парсанах, аппарат умĕнчи хура пилоткăллă моряк гашетка çине пусрĕ.

Николькин вилĕм çинчен аса та тытман миноносеца куç хупми тинкерчĕ. Ак миноносец чарăнса тăчĕ те шартлату сассипе пĕрле çурăлса кайрĕ.

Вилекен тăшман боецшăн хăрушă мар. Шăпах çакна шута илсе пулас, кимĕ хырăмĕ таранах çӳле персе тухрĕ. Люкран тухаканнисенчен чи малтанхи подводниксем, яланхи пекех, командирпа сигнальщик пулчĕç. Командир, пуçне уçă сывлăша кăларсан, шартах сикрĕ. Ăна путакан миноносец мар, урăххи хăратрĕ: кимĕрен икĕ утăмра кăна пуç хĕрлĕ выртакан тенкел курăнса кайрĕ. Тенкел урисенчен хирехирĕç пăхакан икĕ çын ярса тытнă. Тĕлĕнмелле! Анчах çыннисем мĕншĕн-ха подлодка çине пăхмаççĕ? Неушлĕ юри курмăш пулнă?

Николькин Токарев урлă шалтан иквиç матроса чĕнтерсе кăларчĕ. Пĕри вара багорпа тенкеле хăюллăнах çаклатса илчĕ те хăй еннелле туртрĕ. Лап-лачăкам пулнă «çулçӳревçĕсем» хăнк та тумарĕç. Вĕсем, Токарев каларĕш «çĕр йĕри-тавра çаврăнма тухнăскерсем», йăлтах тăнран каяс патне çитнĕ-мĕн. Иккĕшĕ те — моряк. Иккĕленмелли çук: вĕсем, паллах, ĕнер путарнă карапран.

— Изратов!—сасартăк кăшкăрса ячĕ сигнальщик.

Тен, çак сасăпах мар-и, пĕр «нимĕçĕ» пуçне кĕтмен сĕртен йăлт! çĕклерĕ. Анчах вăл хăйĕн нимле шухăша та палăртман куçĕпе малтанах умĕнчи «юлташĕ» çине пăхса илчĕ. Вара туйăмăн темле азбукипе калаçма пултарнăнах, кун çине лешĕ те пуçне йăтса пăхрĕ.

— Аç!—терĕ малтан вăранни.

— Гут!—терĕ куна хирĕç лешĕ, питкуçĕнчен пăхсан шалтах хăраса ӳкнĕскер.

Айланас вăхăта вăраха тăсмарĕç подводниксем.

Токарев тĕлĕнсе кăшкăрни, чăн та, тĕрĕс пулчĕ: пĕри — Изратов! Тепри вара — нимĕç матросĕ. Вĕсене иккĕшне те, санитарсем пек, кимĕ çине йăтса кĕртрĕç. Врачсем хушнипе, ĕнтĕркенĕскерсене çийĕнчех спиртпа сăтăрса типĕ кĕпе-йĕм тăхăнтартрĕç.

Пĕлместĕп! Пĕрне-пĕри чĕререн курайман икĕ тăшман мĕнле майпа хирĕç лекнĕ, тӳпелешнĕ-ши, вĕлерешĕн пулнă-и пĕр-пĕрне, е вăйран-халтан кайнăскерсем, мирлешме те, çапăçма та пултарайман-и,—пĕлместĕп. Эпĕ паян кун çакна кăна пĕлетĕп: флотран демобилизаципе киле таврăннă чăваш ачи, подводник Изратов, халĕ Хĕвелтухăç Германире, Демократилле Германире, пурăнакан нимĕç рабочийĕпе çыру çӳретет. Вăл—Альфред Круц, иртнĕ вăрçăра Изратовпа тинĕсре ишекен тенкел çинче тĕл пулнăскер. Телее асап кӳрет теççĕ халăхра,—тĕрĕс иккен!



[1] Анкерок — ĕçме юрăхлă шыва тултармалли пичке.

[2] Галс — маневр, урăхла каласан, кĕске вăхăт хушшинче пĕр курсран тепĕр курс çине куçса пыни.

Чăваш совет писателĕсен тăваттăмĕш съезчĕ

Июнĕн 3—5-мĕш кунĕсенче Шупашкарта чăваш совет писателĕсен тăваттăмĕш съезчĕ пулса иртрĕ. Съезд чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн тата ревизи комиссин отчечĕсене итлерĕ, Чăваш совет писателĕсен Союзĕн ертсе пыракан органĕсене суйларĕ, Совет писателĕсен пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съездне делегатсем суйларĕ.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правлени председателĕ М. Шумилов (Уйăп Мишши) отчетлă докладра малтанах чăваш совет литератури совет писателĕсен Пĕтĕм Союзри пĕрремĕш съезчĕ пулнăранпа иртнĕ ҫирĕм ҫул хушшинче епле аталанса пыни ҫинчен каласа парĕ.

Шумилов юлташ пуринчен ытла чăваш совет литератури чăваш писателĕсен виҫҫĕмĕш съезчĕ пулнăранпа иртнĕ юлашки икĕ ҫул хушшинче тунă ĕҫсем ҫинче чарăнса тăчĕ.

Юлашки ҫулсенче пирĕн ҫĕршыв пурнăҫĕнче историллĕ паллă ĕҫсем пулса иртрĕҫ. Коммунистсен партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсем, КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти, февральпе мартри Пленумĕсен решенийĕсем, партипе правительство юлашки вăхăтра кăларнă паллă решенисем совет ҫĕршывĕн экономикине хăватлăн малалла аталантармалли, совет халăхĕн пурнăҫне лайăхлатмалли аслă программа пулса тăраҫҫĕ.

— Коммунистсен партийĕ,—тет докладчик,—совет литературипе искусстви умне пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ: писательсен совет ҫыннисен сăнарĕсене, пирĕн пурнăҫа туллин те тĕрĕс сăнласа памалла. Литературăпа искусствăра ĕҫлекенсем массăсене воспитани памалли ҫивĕч хĕҫпăшал пулса тăракан критикăпа анлăн усă курмалла, писательсем хайсен произведенийĕсенче пирĕн пурнăҫри хирĕҫӳсемпе конфликтсене тарăннăн та уҫҫăн ҫутатса памалла, ҫитменлĕхсемпе киревсĕр ĕҫсене хирĕҫ ҫивĕччĕн кĕрешмелле. Совет литературин ҫитменлĕхĕсемпе вайсăр енĕсене парти хăюллăн та тĕрĕс кăтартса пачĕ.

Чăваш совет литератури отчетлă тапхăрта хăшпĕр ҫитĕнӳсем турĕ. Вăл прозăпа поэзире тата драматургире ҫĕнĕ произведенисемпе пуянланчĕ. Ҫапах та чăваш совет литератури аталанăвĕнче пысăк ҫитменлĕхсем пур-ха. Чăваш литературинче япăх, шупка произведенисем, совет обществин пурнăҫне питех те ҫителĕксĕр, чухăнлатса, хăш чухне пачах тĕрĕс мар кăтартакан произведенисем халĕ те пулкалаҫҫĕ-ха. Чăваш писателĕсенчен чылайăшĕ литературăра совет обществин пурнăҫне тĕрĕс, тарăннăн ҫутатса параймаҫҫĕ, схема тăрăх кăна, ҫиелтен кăтартаҫҫĕ, вĕсен литература ăсталăхĕ ҫителĕксĕр.

Чăваш совет литературин тĕп ҫитменлĕхĕ — вăл пурнăҫран, тăван ҫĕршыври коммунизм строительствин практикинчен чылай юлса пыни пулать. Пирĕн литературăра паянхи пурнăҫа, рабочисен, колхозниксен, машина-трактор станцисенчи механизаторсен, интеллигенцин, ҫамрăксен, ачасен пурнăҫне тĕплĕн кăтартса паракан, идея тĕлĕшĕнчен паха произведенисем питех те сахал. Ку ĕнтĕ пуринчен малтан пирĕн писательсем халăхпа тачă ҫыхăнманнинчен, халăх пурнăҫне тарăн тĕпчесе вĕренменнинчен килет. Отчетлă тапхăрта прозăпа пичетленсе тухнă паллăрах произведенисем ҫаксем пулаҫҫĕ: С. Эльгерĕн «Шурăмпуҫ килсен» романĕ, Ф. Уярăн «Шурча таврашĕнче», романĕн пĕрремĕш кĕнеки, А. Талвирĕн «Эсĕ инженер пулатăн» повеҫĕ тата «Пăва ҫулĕ ҫинче» ятлă романĕн пĕрремĕш кĕнеки, А. Артемьевăн «Хĕрлĕ ҫăлтăр» повеҫĕ, «Юрату юррисем» ятлă повеҫсемпе калавсен кĕнеки, Н. Ильбекĕн «Тăватă кун» ятлă повеҫĕ, В. Садайăн «Летчиксем» романĕн пĕрремĕш кĕнеки, унăн «Юр ирĕлет» ятлă повеҫсемпе калавсен кĕнеки, Л. Агаковăн «Ырă кăмăллă ҫынсем» ятлă кĕнеки, М. Трубинан уйрăм кĕнекепе кăларнă ача-пăча калавĕсем, А. Алган «Юлташпа юнашар» ятлă калавсен кĕнеки, В. Долговăн, Г. Харлампьевăн, М. Ухсайăн, С. Павловăн, А. Лазаревăн ача-пăча калавĕсем, С. Асланăн «Вăтăрмĕш ҫулсем» ятлă романĕн, П. Щипцовăн «Пĕр колхозра» ятлă повеҫĕн уйрăм сыпăкĕсем пичетленсе тухнă.

Ҫамрăк авторсен — В. Алендейăн, В. Ухлин, В. Бурнаевскин, Н. Мартыновăн, И. Григорьевăн, П. Михайловăн малтанхи калавĕсем вулакансене интереслентерчĕҫ.

Вулакансем А. Артемьевăн «Улма йывăҫ авăнать» ятлă повеҫне кăмăллăн кĕтсе илчĕҫ. Ҫак повеҫре автор мичуринецсем морганизм-менделизмăн реакцилле теорине хӳтĕлекенсене хирĕҫ кĕрешнине кăтартма тăрăшать. А. Артемьев «Салампи» ятлă ҫĕнĕ повеҫĕнче те колхозлă ял ĕҫченĕсен паянхи пурнăҫне сăнласа парать. Артемьева ку чухнехи пурнăҫран илнĕ темăсемпе ҫĕнĕ произведенисем ҫырас ĕҫре тимлĕн пулăшмалла, ҫав вăхăтрах ăна пурнăҫа тарăнраххăн тĕпчесе пĕлмешкĕн тăрăшма кирлине те асăрхаттармалла.

Ф. Уярăн «Шурча таврашĕнче» романĕн пĕрремĕш кĕнекине вулакансем лайăх йышăнчĕҫ. Анчах кĕнекере тĕрĕсех мар шухăшсем те пур, художествăлла пахалăх енчен те ҫитменлĕхсем пур. Сăмахран, автор халăх хушшинчи хăюллă та харсăр ҫынсен сăнарĕсене туллирех ӳкерсе кăтартмалла.

Вулакансем А. Талвирĕн «Пăва ҫулĕ ҫинче» романĕн пĕрремĕш кĕнекине килĕштерчĕҫ. Ҫак романа автор тахҫантанпах ҫырать. «Пăва ҫулĕ ҫинче» романăн пĕрремĕш кĕнеки хайĕн идейăлла художествăлла пахалăхĕпе А. Талвир халиччен ҫырнă ытти произведенисенчен чылаях ҫӳлте тăрать. Кĕнекен ҫитменлĕхĕсен шутĕнче докладчик ҫакна палăртать: унта хăшпĕр тĕлте ытлашши тăсса кăтартнă вырăнсем пур, вулакансене вĕсем ывăнтараҫҫĕ, автор хăш чухне детальсене те ытлашши кĕртсе тултарать.

Докладчик Н. Ильбекĕн «Тăватă кун» повеҫне тишкĕрсе тухать, унăн лайăх енĕсемпе ҫитменлĕхĕсене палăртать, повеҫе, пĕтĕмĕшпе илсен, ырлать.

Шумилов юлташ чăваш литературинче сатирăпа юмор аталанма пуҫланине палăртать. Ку енĕпе проза жанрĕнче Л. Агаков тимлĕн ĕҫлет, унăн сатирăллă калавĕсене вулакансем интересленсе йышăнаҫҫĕ.

Хальхи вăхăтра чăвашсен паллă прозаикĕсем пысăк произведенисем ҫырас тĕлĕшпе ытларах ĕҫленĕ май, калавсемпе новеллăсем сахал ҫыракан пулчĕҫ. Ку жанрпа халь ҫамрăк писательсем ытларах ĕҫлеҫҫĕ. Юлашки вăхăтра тухнă хăшпĕр калавсемпе новеллăсем япăхах мар пулин те, вĕсенчен нумайăшĕ идейăпа художествăллă пахалăх тĕлĕшĕнчен тивĕҫлĕ ҫӳлĕ шайра тăмаҫҫĕ.

Прозаиксен идейăлла шайĕпе художество ăсталăхне ӳстересси ҫине уйрăмах тимлĕн пăхмалла. Ҫак тĕлĕшпе вырăс классикĕсен, вырăс совет писателĕсен тата тăванла халăхсен чĕлхе ăстисен опытне тарăнрах та тĕплĕн тĕпчесе вĕренмелле.

Поэзи ҫинчен каланă май, докладчик чăваш поэчĕсен юлашки вăхăтра тухнă ҫак произведенийĕ палăртать: С. Эльгерĕн ҫĕнетсе ҫырнă «Вунсаккăрмĕш ҫул» драмăлла поэми, Я. Ухсайăн «Ҫул» ятлă сăвăлла романĕ тата «Кĕлпук мучи» поэми, П. Хусанкайăн «Чĕре юрри» ятлă сăвăсемпе поэмăсен кĕнеки, С. Шавлин сăвăсемпе поэмăсен кĕнеки тата «Октябрь поэмипе» «Сталинград сăввисем». М. Уйăпăн «Телейлĕ ачасем» ятлă ача-пăча сăввисен кĕнеки, А Алган «Ҫулталăкĕ», унăнах «Юратсан» ятлă лирикăлла драми, А. Кăлканăн «Эсĕ ĕнтĕ пысăк» кĕнеки тата «Сар Иван» поэми, Н. Евстафьевăн «Пирĕн Шупашкар», В. Алендейĕн «Пирĕн кил» ятлă кĕнекисем. Унсăр пуҫне хаҫатсемпе журналсенче Г. Лисин, А. Клементьев, Г. Орлов, М. Волкова, В. Синицын (Кăсăя) тата ытти ҫамрăк авторсен сăввисем чылай пичетленнĕ.

Поэзири пур произведенисем те, тĕпрен илсен, паянхи куна ҫутатса параҫҫĕ. Ку тĕлĕшпе поэтсен ĕҫĕ маларах вырăнта тăрать.

Чăваш халăх поэчĕн Я. Ухсайăн «Ҫул» романĕ чăвашла та, вырăсла та пичетленсе тухни чăваш поэзийĕн тата чăваш литературин пурнăҫĕнче паллă событи пулса тăчĕ. Поэт ҫак романра коллективизаци вăхăтĕнчи чăваш ялне сăнласа кăтартнă. Ухсай вăтам хуҫалăхпа пурăнакан хресченĕн Калля пиччен ăс-хакăлне питĕ ăста, тарăн уҫса кăтартма пултарнă.

П. Хусанкайăн «Чĕре юрри» ятлă пысăк кĕнеки пичетленсе тухни те чăваш поэзийĕнче паллă явлени. Поэт хайĕн сăввисенче пирĕн пурнăҫа, совет ҫыннисен таса, пархатарлă шухăш-туйăмне сăнласа кăтартать. Ҫак кĕнеке автор идейăпа художествăлла ăсталăх тĕлĕшĕнчен малалла ӳснине кăтартса парать. Анчах кĕнекере начар енсем те пур. «Чĕре юрри» поэма тата ытти хăшпĕр сăвăсем сюжетсăр. Хусанкая хайĕн творчествăлла ĕҫĕнче халăхпа куллен ҫыхăнса ĕҫлени, республикăн паянхи пурнăҫне тĕплĕн пĕлни кирлĕ.

С. Шавлин «Сталинград сăввисен» ярăмне те ырламалла. «Октябрь поэмине» автор ҫĕнĕ шухăшсем нумай кĕртнĕ, ăна пысăк туйăмпа, хавхаланса ҫырнă. Ҫитменлĕхсенчен докладчик поэма сюжетсăр пулнине кăтартса парать. Вăл пĕр-пĕринпе сахал ҫыхăнса тăракан е пачах ҫыхăнман сыпăксенчен тăрать, тет.

Чылай ҫамрăк сăвăҫсен творчествинче чĕлхе ăсталăхĕ начарри пысăк ҫитменлĕх пулса тăрать.

Пирĕн поэтсем юрăсем валли лайăх текстсем ҫырас тĕлĕшпе те ҫителĕксĕр ĕҫлеҫҫĕ-ха.

Докладчик малалла чăваш драматургийĕ ҫинчен калать. Чăваш парторганизацин кăҫалхи февраль уйăхĕнче пулнă XXV-мĕш конференцийĕ чăваш драматургийĕ кая юлса пынине ниҫтан та чăтма ҫук

тесе палăртнине аса илтерет.

Отчетлă тапхăрта чăваш драматургĕсем: А. Эсхель «Виçĕ туй» ятлă музыкăллă комеди, К. Пайрашпа Н. Айзман «Чавса çывăх та çыртма çук» ятлă сатирăллă комеди, Л. Родионов «Сенкер кўлĕ» тата «Юратнă хĕр» ятлă пьесăсем, И. Максимов-Кошкинский «Константин Иванов» пьесăн çĕнĕ вариантне çырса пĕтерчĕ. Пĕр пайлă пьесăсем те чылаях çырнă. Анчах çакă вăл питех те çителĕксĕр. Пирĕн театрсене, художествăлла пултарулăх кружокĕсене çĕнĕ те лайăхрах пьесăсем çав тери кирлĕ.

Чăваш драматургине малалла аталантарас ĕçе чăваш литературинче театр критики вăйсăрри питĕ кансĕрлет.

Пирĕн пурнăçра çĕннипе кивви хушшинче пыракан кĕрешĕве кирлĕ пек тĕплĕн пĕлсе çитменнине пула, хăшпĕр драматургсем хăйсен произведенийĕсенче хирĕçўсене ытла çăмăллăн татса параççĕ, çакă вара чăнлăха тĕрĕс мар кăтартса парасси патнех илсе пырать, пьесăсен витĕмлĕх хăватне чакарать. Г. Харлампьевăн «Кайса курсан», Г. Пласкинăн «Пĕччен Петĕр» ятлă пĕр пайлă пьесисенче кая юлнă çынсене питĕ çăмăллăн воспитани панă пек туса кăтартнă.

Чăваш драматургийĕн пысăк çитменлĕхĕсенчен пĕри вăл—тематика ансăрри.

— Эпир,—тет Шумилов юлташ, — чăваш драматургийĕнче малта пыракан çынсен сăнарне тума пĕлетпĕр тесе мухтанма пултараймастпăр-ха. Уйрăмах массăсене ертсе пыракансем пулса тăракан коммунистсен сăнарĕсене кăтартас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçленĕ. Кунта пире схематизм текен çитменлĕх хытă кансĕрлет.

Драматурги юлса пынине пĕтерме пур енĕпе те кирлĕ пек мерăсем йышăнмалла, драматурги искусствине вĕренсе алла илес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлемелле

Ача-пăча литератури çинчен каланă май, докладчик çак жанр чăваш литературинче кая юлса пынине палăртать. А. Алга, А. Кăлкан, М. Трубина, С. Эльгер, Н. Евстафьев, В. Алендей, И. Малгай ачасем валли чылай произведенисем çырчĕç. Ачасем валли произведенисем çырас тĕлĕшпе Л. Агаков, П. Хусанкай, Я. Ухсай, Г. Харлампьев, С. Павлов юлташсем те халиччен ĕçлерĕç, анчах юлашки вăхăтра çак ĕçре вĕсем хăйсене палăртсах каймарĕç.

Докладчик малалла чăваш литературинче критикăна вăйлăлатас ыйту пирки чарăнса тăрать, М. Сироткин, В. Долгов, Н. Данилов тата ытти критиксем усăллă ĕçсем тунине палăртать. Чăвашсен литература критики хăй умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлаймасть-ха. Пирĕн литература критики совет литературине малалла аталантарас тĕлĕшпе тăракан проблемăллă пысăк ыйтусене хускатманпа пĕрех. Çĕнĕрен тухакан произведенисене паянхи кун хушнă пек хакламасть, писательсен ĕçĕнчи паха енсене çителĕксĕр палăртать, чĕлхери кăлтăксене хирĕç кирлĕ пек çирĕппĕн кĕрешмест.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕ кăларса тăракан «Ялав» журналăн тата «Тăван Атăл», «Дружба» альманахсен ĕçне çине тăрсах лайăхлатни кирлĕ.

Правленин пысăк çитменлĕхĕ çамрăк писательсемпе вăйсăр ĕçлени пулать.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн ĕçĕсем çинчен каланă май, докладчик правлени ларусем нумай иртнине, паха решенисем йышăнса, вĕсенчен нумайăшне пурнăçламасăр хăварнине палăртрĕ. Творчествăлла секцисен ĕçне тивĕçлипе йĕркелеймен. Писательсене идейăлла-политикăлла воспитани парасси кирлĕ пек пулса пырайманни правлени ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх пулать.

— Писательсен пĕр пайĕ,—тет Шумилов,—хăйсене юрăхсăр тыткалаççĕ. Пирĕн хăшпĕр литераторсем хăйсене йĕркеллĕ тыткаламаннине хирĕç çирĕп кĕрешмелле, хамăр хушăри çавнашкал юрăхсăр ĕçсене çине тăрса пĕтерсе пымалла.

Совет литератури коммунизм строительствинче пысăк вырăн йышăнса тăнине палăртса, Шумилов юлташ юлашкинчен çапла каларĕ:

— Чăваш совет писателĕсен тивĕçĕ — хăйсен задачисене тата ответлăхне туллин туйса илесси, хăйсен пĕтĕм пĕлĕвĕсемпе вăйĕсене Коммунистсен партийĕпе совет халăхĕн ĕçĕшĕн кĕрешме парасси, паттăр совет халăхне тивĕçлĕ произведенисем çырасси пулать.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн ревизи комиссии председателĕ А. Кăлкан отчетлă доклад туса панă хыççăн прени пуçланчĕ. Прение пурĕ 28 çын тухса каларĕ.

В. Ржанов драматург чăваш драматургийĕ юлса пынине пĕтересси çинчен каларĕ. Конфликтсăрлăх «теорийĕ» сиенли çинчен вĕççĕрех каласма кирлĕ мар, терĕ оратор, ун вырăнне çав «теорие» сĕтĕрекеннисене, çав «теорирен» хăтăлса çитейменнисене хирĕç татăклăн кĕрешмелле, драматурги ăсталăхне пĕлсе çитмелле, халăх пурнăçне тарăнрах та лайăхрах вĕренмелле, пьесăсем çырнă чухне пирĕн пурнăçра пулакан хирĕçлĕхсене якатса лартмалла мар, партипе халăха кирлĕ çăмаха вăхăтра каламалла.

Ржанов юлташ Г. Харлампьев çырнă «Кайса курсан» ятлă пьесăри çитменлĕхсене критиклет.

А. Талвир писатель чăваш литературинче проза жанрĕ юлса пыни çинчен калать. Проза юлса пынин тĕп сăлтавĕсенчен пĕри вăл — литература критики начаррăн килет.

Талвир юлташ Л. Агаковăн творчествине тишкĕрет. Вăл, Л. Агаков писательсен иртнĕ съездĕнче хăйне критикленине шута илменни çинчен калать. Унăн халь тухнă «Ырă кăмăллă çынсем» кĕнекинче 80 процент таран халиччен пичетленнĕ вăйлă мар калавсем кĕрсе тулнă. Çак кĕнекери икĕ çĕнĕ калав — «Этем телейĕ» тата «Ырă кăмăл»—вăйсăр пулса тухнă.

А. Талвир хăшпĕр писательсем чăвашсен нацилле уйрăмлăхĕсене кăтартма пĕлейменнине критиклет, писательсен политикăлла тата литературăлла пĕлĕвне ўстерме кирлине палăртать.

— Эпир ССР Союзĕнчи писательсен союзĕпе писательсен Пĕтĕм союзри иккĕмĕш съезчĕ умне çакăн пек ыйту лартма кирлĕ тесе шутлатпăр, — тет Талвир юлташ:—Литература институтĕнче, Мускаври государство университетĕнче, Ленинградри, Хусанти, Куйбышеври аслă шкулсенче тăлмачсем (куçаракансем) хатĕрлекен уйрăмсем уçмалла.

Чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕн ĕçне критикленĕ май, оратор правлени писательсене творчество енĕпе ўсме кирлĕ пек пулăшайманни çинчен калать.

С. Шавли поэт Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн председательне М. Шумилова (Уйăп Мишши) писательсен массипе тачă çыхăнса ĕçлеменшĕн, хăйĕн творчествăлла активлăхне çителĕклĕ палăртманшăн критиклет. Чăваш писателĕсем çамрăксене вĕрентсе ўстерес тĕлĕшпе сахал ĕçлеççĕ, тет вăл. Паллă поэтсем — Эльгер, Хусанкай, Ухсай хăйсен творчествăлла опычĕ тăрăх çамрăк писательсене пĕрмаях вĕрентсе пымалла.

Чăваш писателĕсем ытти тăванла халăхсен писателĕсемпе туслă çыхăну тытса ĕçлесси çинчен Чăваш АССР халăх поэчĕ **П. Хусанкай** каларĕ. Уйрăмах Украина Российăпа пĕрлешнĕренпе 300 çул тултарнине уявланă май Украина писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас, чăвашларан хамăр произведенисене украинла куçарас енĕпе чылай ĕç тунă.

Хусанкай юлташ пирĕн писательсем чăваш халăх чĕлхине вĕренес енĕпе начар ĕçленине, ку тĕлĕшпе вĕсене Ашмарин пухса хатĕрленĕ чăваш сăмахĕсен нумай томлă словарĕ пысăк пулăшу пама пултарнине палăртать.

В. Долгов критик чăваш литературинче критика жанрĕ мĕнле аталанса пыни çинчен чарăнса тăрать. Пирĕн литература критики ытла та вăйсăр, вăл чăваш литературине, писательсене ўссе пыма, çитменлĕхсене пĕтерме пулăшаймасть. Критика вăйсăрри çинчен час-часах калаççĕ, анчах ăна вăйлăлатас пирки çине тăрса ĕçлени курăнмасть-ха. «Тăван Атăл» альманахра пичетленсе тухнă статьясенчен нумайăшне авторсем çиелтен çырнă.

И. Тукташпа Н. Любимов, Яков Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэми çинчен çырнă статьясем поэмăна тĕрĕс мар хак параççĕ, ытлашши хурласа тăкнă, тесе шутлать оратор. Альманахăн юлашки номерĕнче Ухсайăн «Çул» поэми çинчен Л. Терентьев пăтраштарса çырнă статьяна пичетленĕ.

ССР Союзĕнчи совет писателĕсен союзĕн правленийĕн членĕ **К. Горбунов** юлташ ССР Союзĕнчи совет писателĕсен тата Мускав писателĕсен ячĕпе съезда саламларĕ.

Горбунов юлташ Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн организацилле ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртрĕ. Чăваш писателĕсен союзĕнче творчествăллă лару-тăру пулман, çавăнпа чăваш писателĕсем сахал çыраççĕ. Уйрăмах партипе правительство ялхуçалăхне хăвăрт аталантарас тĕлĕшпе йышăннă постановленисем мĕнле пурнăça кĕрсе пынине кăтартакан произведенисем сахал. Чăваш писателĕсем пурнăçри чи кирлĕ ыйтусене аякка тăратса хăвараççĕ.

Горбунов юлташ çавăн пекех драматургири, критикăри пысăк çитменлĕхсене палăртать, çамрăк писательсемпе ытларах ĕçлеме кирли çинчен калать, уйрăм писательсем мораль тĕлĕшĕнчен пăсăлнине хирĕç хытă кĕрешме кирлине асăрхаттарать.

— Произведенисене чăвашла куçарасси питĕ пысăк ĕç, анчах пирĕн чăваш литературинче çак ĕç кая юлнă ĕçсенчен пĕри,—тет **Н. Данилов** литературовед.—Произведенисене чăвашла куçарас ĕçе çĕнĕ вăйсем хутшăнни аван, анчах чылай тăлмачăсен куçару ăсталăхĕ çитмест, вĕсем питĕ начар куçараççĕ.

Юлашки çулсенче писательсен союзĕ произведенисене чăвашла куçарас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçлерĕ. Ку ыйтупа «Ялав» журнал тата «Тăван Атăл» альманах критикăлла статьясем те сахал мар пичетлерĕç. Анчах куçару ĕçне тĕпрен йĕркелесе лайăхлатас тĕлĕшпе тăрăшни халĕ те курăнмасть-ха.

Комсомол Чăваш обкомĕн секретарĕ **Шибаев** юлташ сăмах илет.

— Коммунистсен партийĕ совет писателĕсене пирĕн çамрăк ăрăва хăюллă, хастарлă пулма, коммунизм ĕçне парăнса тăма, нимĕнле йывăрлăхсенчен те хăраман, пур тĕрлĕ йывăрлăхсене те çĕнтерме пултаракан çынсем пулма вĕренг-

се çитĕнтерекен произведенисем çырма чĕнет. Çавăн пек произведенисем çырма писательсен пирĕн çамрăксен пурнăçне, ĕмĕт-шухăшне, вĕсен ĕçĕсене лайăх пĕлмелле, халăхпа тачăрах çыхăнмалла. Çамрăксемпе писательсен тĕлпулăвĕсем — коммунизмăн çамрăк строителĕсемпе яланах çыхăнса тăмалли меслесенчен пĕри. Анчах писательсен союзĕ те, писательсем хăйсем те çав тĕлпулусене ирттерме начар хатĕрленеççĕ, çавăнпа та çак тĕлпулусем кирлĕ пек усăллă иртмеççĕ, вĕсенче ĕçлĕ калаçу сахал пулать.

— М. Шумилов юлташ,—тет **Л. Агаков** писатель,—хăйĕн сăмахĕнче пирĕн литературăн уйрăм участокĕсем çинчен, çав участоксене малалла ярас тĕлĕшпе правлени тата писательсем мĕн туни çинчен сахал каларĕ. Докладчик та, пренире тухса калакан юлташсем те журналсем çинчен чарăнса тăмарĕç. Пирĕн пĕтĕм ĕçе журналсем куçкĕски пекех кăтартса параççĕ. Пирĕн журналсем япăх ĕçленин тĕп сăлтавĕ — ĕçсене коллегилле йĕркепе туса пыманни. Журналсене редакцисем мар, уйрăм çынсем кăларнă. Çавăнпа та вĕсенче начар, пулса çитмен произведенисем пичетленнĕ. Пирĕн организацири малта пыракан писательсем журналсем валли сахал çыраççĕ.

— Писательсем час-часах хăйсен произведенийĕсенче чăн-чăн пурнăçа тĕплĕн сăнласа кăтартмаççĕ,—тет Мускавран килнĕ критик **С. Трегуб**.—Пурнăçра мĕн курни тăрăх пурнăçран илсе мар, литературăра курни тăрăх çыраççĕ, пĕр пьесăна курса тепĕр çавăн пек пьеса, пĕр сăвва курса тепĕр çавăн пек сăвă çыраççĕ.

Парти писательсене яланах пурнăçра мĕн пулса иртни çинчен, чăнлăх çинчен çырма вĕрентет. Паллах, тет оратор, чăнлăха çырса кăтартасси пурнăçра пулса иртекен ĕçсене тĕлли-паллисĕр ўкерсе илмеллине пĕлтермест. Халĕ пирĕн умма социализмла реализм ыйтăвĕсем питĕ çивĕччĕн тухса тăчĕç, вĕсем çине пирĕн питĕ тимлĕн пăхмалла. Парти пире малалла кайма чăрмантаракан çитменлĕхсене сатира вут-хĕмĕпе çунтарса кăларма чĕнет. Çак чĕнўпе витĕнсе, хăшпĕр драматургсем пурнăçа пăсса кăтартакан пьесăсем те çырчĕç. Совет çĕршывĕнчи пурнăçа совет çынни пек, парти вĕрентнĕ пек хаклама кирлине нихçан та манас пулмасть. Пурнăçра малта пыракансемпе кая юлнине тĕрĕс курса асăрхаса пĕлме вĕренес пулать. Ку вăл чăнлăх çинчен тĕрĕс çырма кирлине пĕлтерет. Çак пахалăхсăр, пурнăçа тĕрĕс хаклама пĕлмесĕр социализмла реализм пулма пултараймасть.

Юлашкинчен Трегуб юлташ писательсен союзĕ чăваш писателĕсен организацине малашне те пулăшу парасси çинчен шантарса каларĕ.

Съездра КПСС чăваш обкомĕн секретарĕ **С. М. Ислюков** юлташ сăмах тухса каларĕ.

— Совет халăхĕ коммунизм патне малалла хăватлăн пынă çĕрте,—терĕ вăл,—совет интеллигенцин хисеплĕ отрячĕ — писательсем паллă вырăн йышăнаççĕ, вĕсем этем чунĕн инженерĕсен ятне илсе партипе халăх шанăçне тивĕçлĕ пулчĕç

Партин XIX-мĕш съезчĕ литературăпа искусство работникĕсене пирĕн аслă халăха тивĕçлĕ произведенисем çырма, общество членĕсем хушшинче сарăлнă çитменлĕхсене, чир-чĕрсене тăрă шыв çине кăларма, малта пыракан, тўрĕ кăмăллă çынсен паха енĕсем çинчен çырса, çĕнĕ йышши çынсен чунĕн илемне туллин сăнласа кăтартма чĕнчĕ.

Пирĕн писательсен ăнăçлăн ĕçлеме мĕн кирли пурте пур. Çавăнпа та ĕнтĕ, совет писателĕсенчен нумай ытларах ыйтаççĕ те.

Ислюков юлташ çакна палăртать: Шумилов юлташ докладĕнче чăваш литературин çитĕнĕвĕсем çинчен калама кирлинчен ытларах каланă. Докладра чăваш литературинчи çитменлĕхсене тĕплĕн критиклемен, чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсемпе йăнăшсене тĕплĕн кăтартса парайман. Çакă вăл писательсен Союзĕн правленийĕ хăйĕн ĕçне критиклесе хак паманнине пĕлтерет. Чăваш писателĕсен организацийĕ партин XIX-мĕш съезчĕ панă кăтартусенчен тивĕçлĕ выводсем туман, хăйĕн ĕçĕсене партин Центральнăй Комитечĕн сентябрьте тата февральпе мартра пулса иртнĕ Пленумĕсем йышăннă решенисенчен тухса тăракан требованисем тăрăх вăраххăн урăхлатса çĕнетет.

Чăваш совет литератури партипе ĕççыннисем ыйтнинчен юлса пырать. Чылай чăваш писателĕсем юлашки çулсенче мĕн чухлĕ те пулин паллă произведенисем çыраймарĕç. Чăваш писателĕсен творчествăлла ĕçĕ начар пулса пыни çинчен «Литературная газета» хаçат тĕрĕс кăтартса панă. Чăваш литератури кая юлса пынин тĕп сăлтавĕ писательсем республика пурнăçне тивĕçлипе вĕренменни пулать. Сăмахран, чылай писательсем колхозсемпе МТС-сене темиçешер çул хушши тухса курмаççĕ.

Пирĕн литературăри пысăк çитменлĕхсем писательсен союзĕн правленийĕ çителĕксĕр ертсе пынинчен килнĕ. Шумиловпа Алагер юлташсем ертсе пырас ĕçре организацилĕх тĕлĕшпе вăйсăр ĕçленĕ.

Чăваш республикинчи ĕççыннисем, республика правительстви тата партин область комитечĕ,—терĕ Ислюков,—пирĕн литература ăнăçлăн ўссе аталанасса, вăл коммунизмшăн, миршĕн, социализмла Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн кĕрешес ĕçре çивĕч хĕçпăшал пулса тăрасса шанса кĕтсе тăраççĕ.

Съездра тăванла республикăсен представителĕсем **Д. Ковалев** (Белоруссин ССР-ĕ), **Н. Эркай** (Мордва АССР-ĕ), **А. Лужанин** (Удмурт АССР-ĕ), Сталинла премин лауреачĕ **Кави Наджми** (Тутар АССР-ĕ), **С. Вишневский** (Мари АССР-ĕ), **А. Елисеев** (Горький облаçĕ) тухса каларĕç.

Пренире çавăн пекех **Ф. Уяр**, **Г. Харлампьев**, **И. Малгай**, **Е. Паймина** (Шупашкар хулинчи 6-мĕш номерлĕ шкул) **Г. Пласкин**, **Н. Терентьев**, **С. Павлов**, **М. Акимов** (Улатăр районĕ), **М. Волкова** тата ытти юлташсем тухса каларĕç.

Съезд Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн ĕçне çителĕксĕр тесе хакларĕ.

Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн çĕнĕ составне съезд: А. Башкиров-Талвир, П. Хусанкай, В. Долгов, Я. Ухсай, К. Сергеев-Турхан, М. Сироткин, А. Алга юлташсене суйларĕ.

Ревизи комисси составне съезд А. Кăлкан, С. Шавли, А. Артемьев юлташсене суйларĕ.

Съезд совет писателĕсен пĕтĕм Союзри иккĕмĕш съездне кайма ĕç тăвакан сасăпа пилĕк делегат: А. Башкиров-Талвир, П. Хусанкай, Я. Ухсай, М. Шумилов (Уйăп Мишши), М. Сироткин, канашлакан сасăпа пĕр делегат—С. Шавли юлташсене суйларĕ.

Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленин малтанхи ларăвĕнче Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕн председателĕ пулма А. Башкиров-Талвир юлташа, правленин ответлă секретарĕ пулма К. Сергеев-Турхан юлташа суйланă.

Ревизи комиссин малтанхи ларăвĕнче комисси председателĕ пулма А. Кăлкан юлташа суйланă.

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН ТĂВАТТĂМĔШ СЪЕЗЧĔ ЙЫШĂННĂ РЕЗОЛЮЦИ

Чăваш совет писателĕсен тăваттăмĕш съезчĕ çакна палăртать: КПСС Центральнăй Комитечĕ идеологи ыйтăвĕсем пирки панă аслă кăтартусем тăрăх ĕçлесе тата Коммунистсен партийĕн XIX съезчĕ йышăннă историлле решенисене пурнăçа кĕртсе пырса, тĕнчере чи малта пыракан вырăс совет литератури пысăк пулăшу панипе, чăваш совет литератури юлашки çулсенче прозăн, поэзин тата драматургин çĕнĕ произведенийĕсемпе пуянланчĕ.

Чăваш АССР халăх поэчĕн Я. Ухсайăн «Çул» ятлă поэми, унăн «Кĕлпук мучи» ятлă кĕнеки, Чăваш АССР халăх поэчĕ П. Хусанкай çырнă лирикăлла сăвăсемпе поэмăсем, А. Башкиров-Талвирĕн «Пăва çулĕ çинче» ятлă повеçĕ, А. Артемьевăн тата ытти писательсен калавĕсем совет литературинче тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕç. Чăваш совет писателĕсен произведенийĕсене чылайăшне вырăсла та, Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсен чĕлхине те куçарнă.

Анчах хальхи чăваш литератури, пĕтĕмĕшпе илсен, Коммунистсен партийĕн требованийĕсенчен юлса пырать-ха, вăл халăхăн ўссе пыракан культура ыйтăвĕсемпе пĕр шайра тăмасть, çакна партин Чăваш облаçĕнче XXV конференцийĕ тивĕçлипе кăтартса пачĕ. Идейăпа илемĕенчен лайăх, социализмла реализм требованийĕсемпе пĕр шайра тăракан произведенисем сахал çыраççĕ. Чăваш писателĕсен хастарлăхне хальхи пурнăçри çивĕч темăсемпе ĕçлеме, совет çыннисем коммунизм строительствин аслă задачисене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешнине çутатса паракан произведенисем çырма мобилизацилемен.

Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленийӗ хӑйӗн ӗҫне Совет Союзӗнчи Коммунистсен партийӗн XIX съезчӗ, КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти тата февральти-мартри Пленумӗсем йышӑннӑ решенисем кӑтартса панӑ пек ҫӗнетсе урӑхлатман.

Чӑваш писателӗсем пурнӑҫпа начар ҫыхӑннӑ, районсене сайра кӑна тухса ҫӳреҫҫӗ, вӗсенчен нумайӑшӗ темиҫе ҫул хушши колхозсемпе машина-трактор станцийӗсенче пулман. КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ хыҫҫӑн прозӑра та, поэзире те, драматургире те колхоз производствинче пулса иртекен ҫӗнӗ явленисемпе ӗҫсене ҫутатса паракан пӗр паллӑ произведени те тухман.

Чӑваш писателӗсен илемлӗ произведенийӗсенче Чӑваш республики тӗпренех социализмла улшӑнса ҫӗнелнине, рабочи класӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене, рабочисемпе интеллигенцин наци кадрӗсем ӳснине, Коммунистсен партийӗ ҫӗнӗ общество тӑвас ӗҫе ертсе пынине начар кӑтартса параҫҫӗ. Чӑваш литератури хальхи колхоз ялӗн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене ытла та ҫителӗксӗр ҫутатать. Чӑваш совет писателӗсен союзӗн пичет органӗсем — «Ялав», «Тӑван Атӑл», «Дружба»—идейӑпа илемлӗх енчен ҫӳлӗ шайра тӑмаҫҫӗ. Журналпа альманахсен редколлегийӗсем «Литературная газета» критикинчен кирлӗ выводсем туман.

Драматурги жанрӗ тӳсме ҫук кая юлнӑ, ача-пӑча литератури ҫамрӑксемпе ачасен ыйтӑвӗсемпе пӗр шайра тӑмасть.

Творчество секцийӗсем ҫителӗклӗ ӗҫлемеҫҫӗ. Вӗсенче творчествӑн чи кирлӗ ыйтӑвӗсене интереслӗ, ҫивӗч, пурнӑҫпа ҫыхӑнтарса, тӗплӗ сӳтсе явни сайра пулать.

Чӑваш совет литератури кая юлса пынин сӑлтавӗсенчен пӗри квалификациллӗ литература критики ҫуккинчен килет. Чӑваш литератури аталанӑвӗн пысӑк та кирлӗ ыйтӑвӗсене хускатмаҫҫӗ, литературӑри паллӑ явленисене тивӗҫлӗ хак памаҫҫӗ, уйрӑм авторсен йӑнӑшӗсемпе ҫитменлӗхӗсене вӑхӑтра палӑртмаҫҫӗ, чӑваш литературинче типлӑх ыйтӑвне тӗпчесе пӗлменха, илемлӗ произведенисен стилӗ, чӗлхи ҫинчен тӗплӗн сӳтсе явман. Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленийӗ республикӑри писательсен организацинче критикӑпа самокритикӑна вӑйлӑлатас тӗлӗшпе кирлӗ ӗҫсем туса иртермен. Уйрӑмах ҫамрӑк писательсене воспитани парас тӗлӗшпе сахал ӗҫленӗ. Съезд чӑваш писателӗсем хушшинче совет литературишӗн ют явленисем палӑрни ҫинчен асӑрхаттарать: уйрӑм писательсем час-часах ӗҫсе ӳсӗрӗлсе ҫӳренӗ, мораль енчен хӑйсене таса тытман.

Чӑваш совет писателӗсен тӑваттӑмӗш съезчӗ ҫапла йышӑнать:

1. Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленийӗн ӗҫне ҫителӗклӗ мар тесе йышӑнас.

2. Чӑваш совет писателӗсен союзӗ умӗнче ҫакӑн пек тӗп задача тӑрать тесе шутлас: чӑваш совет писателӗсен пӗтӗм творчествӑлла вӑйне совет ҫыннисен партин XIX съезчӗ, КПСС Центральнӑй Комитечӗн сентябрьти Пленумӗ тата партипе правительство каярахпа йышӑннӑ решенисене пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешнине ҫутатса паракан, вулакансене Коммунистсен партийӗпе социализмла Тӑван ҫӗршыва чун-чӗререн юратма, пирӗн ҫамрӑксене хаваслӑ, йывӑрлӑхсенчен хӑраман, ҫав йывӑрлӑхсене ҫӗнтерме пӗлекен ҫынсем пулма воспитани паракан идейӑпа илемлӗхӗ енчен лайӑх произведенисем ҫырма мобилизацилемелле.

3. Съезд Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленине тата чӑваш совет писателӗсене пурне те чӑваш совет литературин аталанӑвӗнче юлса пыракан участоксене пӗтерессишӗн ҫине тӑрса ӗҫлеме хушать; чӑваш драматургине тӗпренех лайӑхлатмалла, литература критики юлса пынине пӗтермелле, сатирӑпа юмор жанрне вӑйлӑлатмалла, ҫак ӗҫе пур писательсене те хутшӑнтарса, сатирӑпа юмор журналӗ кӑларма кирлӗ условисем хатӗрлемелле, ача-пӑча литературипе ача-пӑча драматургинче ӗҫлеме писательсен квалификациллӗ вӑйӗсене хутшӑнтармалла, ҫамрӑк писательсемпе ытларах ӗҫлемелле.

4. Съезд Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленине «Ялав» журналта, «Тӑван Атӑл» тата «Дружба» альманахсенче пичетленекен произведенисен идейӑпа илемлӗх шайне ӳстерме, авторсен умне пысӑкрах требованисем лартма, ҫамрӑк писательсене консультаци парас ӗҫе лайӑхлатма хушать.

5. Съезд Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленийӗн ҫӗнӗ составне творчество секцийӗсен ӗҫне тӗпренех лайӑхлатма, вӗсене писательсен чӑнчӑн творчествӑлла лабораторийӗсем туса хума хушать. Писательсен ҫӗнӗ произведенийӗсене сӳтсе явнисӗр пуҫне, творчество секцийӗсен ӗҫӗнче ҫак ыйтусем тӗп вырӑнта тӑмалла тесе шутлать съезд: литература теорийӗпе литература ӑсталӑхӗн ыйтӑвӗсем тӑрӑх творчествӑлла дискуссисем организацилемелле, марксистла-ленинла эстетика ҫинчен квалификациллӗ лекцисем иртермелле т. ыт. те.

6. Съезд Чӑваш совет писателӗсен союзӗн правленине пӗр актлӑ пьесӑсем ҫырас ӗҫе вӑйлӑлатма, художествӑлла пултарулӑх кружокӗсем валли пьесӑсем ҫырас ӗҫре драматургсене пур майсемпе те пулӑшма хушать; ҫак шутпа пӗр актлӑ лайӑх пьесӑсем ҫырма конкурссем иттермелле; тӑтӑшах рецензисем, аннотацисем пичетлесе, вулакансен конференцийӗсене иртерсе, чӑваш литературин произведенийӗсене пропагандӑлас ӗҫе вӑйлӑлатмалла; литература наследствине пухас ӗҫе йӗркелемелле, К. Иванов ячӗпе тӑракан литература музейӗ уҫмалла.

7. Съезд хӑшпӗр писательсем мораль енчен хӑйсене таса тытманнине сивлет, ҫакӑ вӑл совет писателӗн ырӑ ятне ярать тесе шутлать.

* * *

Съезд чӑваш совет писателӗсем съезд решенийӗсене пурнӑҫа кӗртме пӗтӗм вӑя хурса ӗҫлессе, ҫитес ҫывӑх вӑхӑтрах совет халӑхне тивӗҫлӗ идея тӗлӗшпе тарӑн, илемлӗхӗ енчен ҫӳлте тӑракан произведенисем ҫырасса шанать.

Вырӑс халӑхӗн аслӑ композиторӗ

М. И. Глинка ҫуралнӑранпа 150 ҫул ҫитнӗ май

Ҫӗр аллӑ ҫул каярах, 1804 ҫулхи июнӗн пӗрремӗшӗнче (кивӗ стильпе майӑн 20-мӗшӗнче) Новоспасск салинче, Ельня хули ҫывӑхӗнче, вырӑс ҫарӗн отставкӑна тухнӑ Иван Николаевич Глинка капитан ҫемйинче ҫӗнӗ ҫын ҫуралнӑ. Ашшӗ-амӑшӗсем ӑна Михаил тесе ят панӑ.

Пӗчӗк Глинка тӑрӑшсах историе, географие, вырӑс тата ют ҫӗршывсенчи халӑхсен чӗлхине вӗреннӗ, нумай вуланӑ. Анчах пуринчен ытла вӑл музыкӑна юратнӑ. «Музыка — манӑн чунӑм»,— тенӗ вӑл ача чухнех. Сехечӗ-сехечӗпех вӑл Новоспасскинче янӑракан вырӑс халӑх юррисене итленӗ. Глинка хӑй каярахпа каланӑ тӑрӑх, шӑпах ҫав юрӑсем ӗнтӗ ӑна пирӗн халӑхсен мухтавӗпе чысӗ пулса тӑракан вилӗмсӗр произведенийӗсене ҫырма пулӑшнӑ.

Глинка нумай ҫул хушши вӗреннӗ, ют ҫӗршывсем тӑрӑх ҫӳренӗ. Мӗн чухлӗ ытларах ют ҫӗршывсенче пулса курнӑ, ҫавӑн чухлӗ ытларах хӑйӗн тӑван ҫӗршывне юратнӑ.

Патшапа ун таврашӗнчи пуш параппансем халӑх творчестви ҫине йӗрӗнчӗкле пӑхнӑ. «Императорски театрсенче» ют ҫӗршывсенчи композиторсен оперисене лартнӑ, Российӑна ют ҫӗршывсенчи юрӑҫӑсемпе актерсене илсе килнӗ, вӗсене тем пекех мухтаса чапа кӑларнӑ. Анчах та пултаруллӑ та талантлӑ вырӑс музыканчӗсене асӑрхама та шухӑшламан. Ҫапла пулин те, Глинка хӑйӗн ӗҫне пӑрахман. Хӑйӗн творчествипе вӑл тӑван халӑхне, унӑн патриотизмне, паттӑрлӑхӗпе ырӑ кӑмӑлне, унӑн иртнӗ кунсенчи мухтавлӑ ӗҫсене чапа кӑларса ҫутӑ пуласлӑхӑн шанӑҫне ҫирӗплетме тӑрӑшнӑ.

1836 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗнче Питӗр хулинче Глинкӑн «Иван Сусанин» ятлӑ пӗрремӗш оперине кӑтартнӑ. Ҫак оперӑри ӗҫсем XVII ӗмӗр пуҫламӑшӗнче, ют ҫӗршывсенчи захватчиксем пирӗн ҫӗршыва килсе тапӑннӑ вӑхӑтра пулса иртеҫҫӗ. Ҫав йывӑр вӑхӑтра вырӑс халӑхӗ хӑйӗн патриотизмла пӗрлӗхне ҫав тери хӑватлӑн палӑртнӑ. Тӑшмансем, Кострома вӑрманӗсем витӗр тухма ҫул кӑтартма тесе ватӑ хресчене хистеме тытӑнсан, старик вӗсене нихҫан калле тухайми сӗм чӑтлӑхсене ертсе каять. Ҫакна ӑнланса илсен, тӑшмансем Сусанина вӗлереҫҫӗ, анчах хӑйсем те унтах тӗп пулаҫҫӗ.

Иртнӗ ултӑ ҫул. 1842 ҫулхи ноябрӗн 27-мӗшӗнче Питӗр хулинче Глинкӑн «Русланпа Людмила» ятлӑ иккӗмӗш оперине лартнӑ. Ку хутӗнче композитор хӑйӗн оперине, халӑх творчествине ачаранпах юратнӑ тата ӑнланнӑ Пушкинӑн генилле поэми тӑрӑх ҫырнӑ. Оперӑн тӗп геройӗ—Руслан витязь, чӑн-чӑн вырӑс пӑхаттирӗ, вӑйлӑ та пӗр шиксӗрскер, хӑйӗн савнӑ тусне вӑрласа кайнӑ хаяр асамҫӑна — Черномора ҫӗнтерет. Пушкин та, Глинка та, хӑйсен творчествипе пирӗн халӑх хӑйӗшӗн темӗнле йывӑр вӑхӑтра та тӗрӗслӗх ӗҫӗ ҫӗнтерсе ҫиеле тухасса ҫирӗппӗн шанса тӑнине кӑтартса панӑ. Руслан хӑй хӑватлӑ та вӑйлӑ пулнипе кӑна мар Черномора ҫӗнтерет, ун енче—чӑнлӑх.

Глинка ҫырнӑ талантлӑ произведенисем кусем кӑна мар. Оркестрпа каламалли сочиненисенчен «Камаринская» ятлӑ фантазине, «Вальс-фантазия» тата испани халӑхӗн юрисемпе ташшисен кӗвӗ темипе ҫырнӑ икӗ увертюрине пирӗн халӑхсем уйрӑмах кӑмӑлаҫҫӗ. Вырӑс халӑхӗн аслӑ композиторӗ Петр Ильич Чайковский каланӑ тӑрӑх, Глинкӑн «Камаринская» музыки вырӑссен хӑйне евӗр симфониллӗ музыкин пуҫламӑш произведенийӗ пулса тӑрать.

Глинкӑн генилле ҫырнӑ романсӗсем, юррисем, ытти сочиненийӗсем, унӑн оперисемпе оркестрпа каламалли ытти произведенийӗсемпе танах вырӑс халӑх юррисемпе ҫыхӑннӑ. Чӗрене пырса тивекен хӑйӗн произведенийӗсене вӑл ҫав юрӑсене асра тытса ҫырнӑ.

Бородин, Мусоргский, Римский-Корсаков, Чайковский тата ытти вырӑс композиторӗсем те Глинкӑна хӑйсен учителӗ тесе шутланӑ. Паллӑ совет композиторӗсем те унран вӗренеҫҫӗ. Глинка ятне пирӗн ҫӗршывра пӗтӗм халӑх чунтан-чӗререн юратса асӑнать.

Глинка вырӑс халӑхӗн чӑн-чӑн аслӑ композиторӗ, ҫӗршыври мӗн-пур халӑхсен чапӗпе мухтавӗ.



Спортсменсем стадиона тухрĕç

Епле саванман-ха хĕлĕпе тĕлĕрсе ларнă йывăç-курăксемпе хирсем ем-ешĕл тум тăхăнсан?! Çутçанталăка чĕрĕлĕх кĕртекен хĕвел пурне те пĕр пек ачашласа çупăрлать-çке! Сывлăш уçă, таса.

... Çак куна пурте тӳсейми кĕтрĕç. Спортсменсем кăна мар, пĕтĕм хула халăхĕ спорт уявне хатĕрленчĕ.

Шупашкарта кăçалхи спорт уявĕ çĕнтерӳ кунĕнче килчĕ. «Энергия» спорт обществин Шупашкарти стадионне халăх ирех пухăнма пуçларĕ. Çакăн чухлĕ халăх пухăннине юлашки çулсенче никам та астумасть. Вырăн çитменнипе çамрăксем ешĕл çерем çине вырнаçнă. Çанталăкĕ, физкультурниксемшĕн юри тенĕ пекех, ытарма çук илемлĕ.

Спорт уявне, яланхи йăлапа, республика столицинчи чи лайăх спортсменсем уçрĕç. Спорт обществисен ялавĕсене йăтнă колонна стадиона кĕнине курсан, пĕтĕм халăх тăвăллăн алă çупса ячĕ. Уçă сывлăшра хăватлă марш кĕвви янăраса тăрать (аялти ӳкерчĕксем).



Акă спорт вăййисем пуçланчĕç. Чаплă марш хыççăн самантлăха пушанса юлнă стадиона акробатсем тухаççĕ. Мĕн-мĕн кăна кăтартмаççĕ вĕсем (варринчи ӳкерчĕк)? Хулари спорт шкулĕпе «Динамо» обществин воспитанникĕсен вăййисене уява пухăннисем пурте ăшă кăмăлпа йышăнчĕç. Вĕсенне анчах мар, педагогика институтĕнчи ултçĕр физкультурник гимнастикин массăллă упражненийĕсене те çав тери кăмăлларĕç.

Республика чемпионĕн Чăвашсен ялхуçалăх институтĕнчи Эдуард Таврин студентăн ăсталăхĕ пурне те савăнтарчĕ. Вăл ăста гимнаст, снарядсем çинче упражненисем тунă вăхăтра ăна пĕтĕм стадионри халăх алă çупса саламларĕ.

Спортсменсен Шупашкарти уявĕ пирĕн халăх физкультурниксене чунтан юратнине кăтартса пачĕ. Хулари çамрăксем кăна мар, ялти

çамрăксем те хĕлĕн-çăвĕнех спорт вăййисемпе хăйсен сывлăхĕсене çирĕплетеççĕ. Спорт çамрăк колхозниксене ĕçлеме, йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшать.

Çĕрпӳ районĕнчи «Çĕнĕ пурнăç» колхоз çамрăкĕсем ĕçре кăнамар, вăйăра та харсăр çынсем. Парти пленумĕн решенийĕсемпе хавхаланнă колхозниксем ялхуçалăхне икĕ-виçĕ çулта тĕпрен çĕнетсе улăштарассишĕн, халиччен илмен тĕштырă, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем туса илессишĕн ырми-канми ĕçлеççĕ.

Колхоз кăçал пирвайхи хут çĕрулмие тăваткал тĕмĕпе лартать. Çĕрулми лартма МТС нумай пулăшрĕ. СКГ-4 маркăллă çĕрулми лартмалли машина хире тухсан, Геннадий Картошкинпа Юрий Соболев çав машинăпа ĕçлеме хапăлларĕç (сулахайри, варринчи ӳкерчĕк).







Колхозри физкультурниксем ялти пур ĕçсенче те малта пыраççĕ. Хирте ĕçлеççĕ-и вĕсем, е строительствăра, пурпĕрех, колхозниксем вĕсем пирки ăшă кăмăлпа асăнаççĕ.

Юрий Сторублев «Çĕнĕ пурнăç» колхозри чи маттур платниксенчен пĕри. Вăл халĕ çĕнĕрен тăвакан сысна вити строительствинче ĕçлет (сылтăмри, варринчи ӳкерчĕк).

Каçхине çамрăксем колхоз клубне е спорт площадкине пухăнаççĕ. Кăçал вĕсем республикăри кубока илессишĕн пыракан ăмăртăва хутшăнаççĕ. Кĕçех правлени умне машина пырса тăрать. Футболистсем Сĕнтĕрвăрринчи футбол командипе юлташла тĕл пулса вылямa тухса каяççĕ (сулахайри, аялти ӳкерчĕк).

Тĕлпулу çав тери интереслĕ пулчĕ. «Çĕнĕ пурнăç» колхозри футболистсем мĕн вăйă вĕçленичченех Сĕнтĕрвăрри футболисчĕсен «алăкĕ» патĕнче кĕрешрĕç (сылтăмри, аялти ӳкерчĕк). **Вăйă икĕ футбол команди те кăçалхи спорт сезонне лайăх хатĕрленнине кăтартса пачĕ.**

Ĕçлеççĕ çамрăксем, савăнаççĕ, çĕнтереççĕ. Спорт пирĕн çĕршывра çамрăксен сывлăхне çирĕплетме пулăшать.

В. Тимкин, Н. Голубев, В. Исаев, М. Егоров фотоӳкерчĕкĕсем.

ЧĂВАШСЕН ЮРĂПА ТАШĂ АНСАМБЛĔ ХĔВЕЛАНĂÇ УКРАИНĂРА

(Çул çинче çырса пынисенчен)

Украина Российăпа пĕрлешни 300 çул тултарнине паллă тума хатĕрленнĕ вăхăтра пирĕн чăваш халăхĕн юрăпа ташă ансамблĕ концертсем кăтартма Хĕвеланăç Украинăна хăнана кайса килчĕ. Гастрольре пулнă 75 кун хушшинче (февралĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа майăн 4-мĕшĕччен) ансамбль 84 концерт панă, çав концертсене 60 пин çын ытла пырса итленĕ.

Хĕвеланăç Украинăра ансамбль Совет Çарĕн Главнăй Политически Управленийĕ панă маршрут тăрăх çар чаçĕсенче концертсем кăтартса çӳренĕ. Çакăнпа пĕрлех концертсене Хĕвеланăç Украинăри ĕççыннисем те нумай пырса курнă.

Пирĕн ансамбль Хĕвеланăç Украинăна кайса çӳрени Украина халăхĕпе чăваш халăхĕ хушшинчи туслăха татах та ытларах çирĕплетрĕ. Ансамбль çинчен Украинăри хаçатсенче тӳрех «аслă вырăс халăхĕн анлă Атăлĕ таврашĕнчен килнĕ хăнасем», тесе çырчĕç, чăваш халăхĕн искусствине мухтарĕç.

Халĕ эпир ансамбль солисчĕ Петр Кулагин çул çинче çырса пынисенчен хăшпĕр сыпăксене пичетлетпĕр.

МУСКАВ, ФЕВРАЛĔН 20-МĔШĔ

Пирĕн малтанхи концерт Мускавра, Совет Çарĕн Центральнăй Çуртĕнче февралĕн 20-мĕшĕнче пулчĕ.

Тĕрĕсрех каласан, ку вăл концерт мар, хăйне евĕр экзамен пекки пулчĕ. Совет Çарĕн ответлă работникĕсене пирĕн хамăрăн пултарулăха кăтартса ĕнентермеллеччĕ. Юрăхлă-и пирĕн ансамбль Совет Çарĕн чаçĕнче концертсем пама, кăмăла кайма пултарать-и пирĕн репертуар воинсене?

Концерта эпир пурсăмăр та çак ответлăха туйса тĕплĕн хатĕрлентĕмĕр. Паллах ĕнтĕ, ансамблĕн кашни артисчĕ чăнласах пăлханчĕ.

Акă, эпир сцена çинче. Йывăр бархат чаршав ерипен уçăлать. Залра халăх туллиех пулин те шăп. Эпир аслă офицерсен погонĕсене куратпăр...

Малти ретре Жуков маршала асăрхарăмăр. Унăн сулахай кăкăрĕ çинче виçĕ ылттăн çăлтăр çиçсе тăрать. Вăл та пирĕн концерта итлеме килнĕ-мĕн.

Совет Çарĕ пире питĕ ответлă ĕç панине эпир çакăнтан та чухласа илтĕмĕр. Вăл пире татах та ытларах пăлхантарма тытăнчĕ.

Маршал пире ăшă куçсемпе пăхать. Вăл çапла пăхни кăштах лăплантарчĕ.

Совет Çарĕн Центральнăй Çурчĕн аслă та çӳлĕ залĕнче акă «Тăван çĕршыв» юрă гимн евĕрлĕ янăраса каять. Хор ăна чăвашла тата вырăсла юрласа парать. «Тăван çĕршыв» юрăшăн пире тăвăллăн алă çупса тав тăваççĕ. Çакă пире татах та ытларах лăплантарать.

Унтан хор «Занялася заря Российская» ятлă хальхи вырăс халăх юррине юрласа парать.

Ансамбль каялла чакса сценăн кайри пайне йĕркеленсе тăрать. Вара чăвашсен арçын ташши пуçланать. Тĕрленĕ кĕпесем тăхăннă ташăçăсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ташлаççĕ. Сцена çинче ташлакансем хутшăнсах пыраççĕ. Вĕсем виçĕ мăшăра çитсен, хористсем алă çупнă май, ташăçăсем ташшăн тĕп ӳкерчĕкне ташласа параççĕ. Куратпăр—залра ларакансене вăл кăмăла кайрĕ.

Концерт питĕ лайăх иртрĕ. Хамăрăн ăнăçлăхшăн эпир çав тери савăнтăмăр.

Хăйсен пултарулăхне кăтартма тӳр килнĕ солистсем çак телейлĕ каçа ĕмĕрне те манас çук. Астăватăп: Мефодий Денисов «Ой ты северное море» юрласа парсан, куракансем ăна нумайччен сцена çинчен ямарĕç. Çакăншăн эпир кашниех чунтан-чĕререн савăнтăмăр.

Совет Çарĕн Центральнăй Çуртĕнче эпир концертăн пĕр пайне çеç кăтартрăмăр. Чăваш юррисемпе вырăс юррисене юрларăмăр; чăваш, вырăс, Украина ташшисене ташларăмăр. Юлашкинчен, пирĕн ташă ăстисем Украина халăх ташшине «Гопак» ташласа пачĕç. Вăл куракансене кăмăла кайрĕ. Асăрхарăмăр: Жуков маршал пире мухтаса йăл кулса илчĕ.

Савăнтăмăр эпир тăван искусствăшăн. Концерта хамăр тăрăшса хатĕрлени кăлăхах пулмарĕ: эпир экзамен лайăх тытрăмăр.

Концертран тӳрех эпир Хĕвеланăç Украинăна—Львов хулине тухса кайрăмăр.

ХĔВЕЛАНĂÇ УКРАИНĂРА

Гастрольре çӳренĕ вăхăтра ансамбль Хĕвеланăç Украинăпа Карпат тăвĕ умĕнчи Украинăра 33 хулара пулса концертсем пачĕ.

Ансамбле пур çĕрте те хапăл туса йышăнчĕç, унăн концерчĕсене кăмăлласа итлерĕç. Ансамбль руководительне Сталинла преми лауреатне Ф. Лукина тав туса нумай çырусем ярса пачĕç, пире пурне те творчествăра çĕнĕ çитĕнӳсем тума ырă сунчĕç.

Львов хулинче эпир Совет Çарĕн вырăнти юрăпа ташă ансамблĕпе тĕл пултăмăр, пĕрле концерт патăмăр.

Мартăн 12-мĕшĕнче Станислав хулинчи филармонире гуцул халăх ансамблĕпе пĕрле «Халăхсен туслăхĕ» ятлă ташă кăтартрĕç. Ташă вăхăтĕнче сцена çинче пĕр харăс 120 çын пулчĕ.

...Чăваш хорĕ «Линькка-линькка» юрланă вăхăтра гуцулсен ула-чăла тĕрленĕ тумсем тăхăннă халăх хушшинчен ташша майĕпен чăваш хĕрĕсем хутшăнаççĕ. Çав самантрах каччисем те тухаççĕ. Ташă çемми май гуцулсем алă çупаççĕ. Майĕпенех ташша гуцулсем хутшăнса пыраççĕ. Халĕ ĕнтĕ гуцулсем çеç ташлаççĕ.

Унтан аякри Атăл тăрăхĕнчен килнĕ хăнасене чĕререн тав туса парнесем параççĕ. Чăваш халăхне Украина чĕлхипе сывлăх сунса тав туни залра чи çĕпĕç юрă пек янăраса каять: «Хай живе чувашское мистетство!» Залра тăвăллăн алă çупаççĕ. Аслă Совет çĕршывĕнчи халăхсен никам аркатайми туслăхĕн çак ытарайми тĕслĕхне курса пурте ура çине тăраççĕ, нумайччен-нумайччен алă çупаççĕ.

Ужгородрах хулари культура пайĕн заведующийĕ Колен юлташ облаçри культура управленийĕ ячĕпе ансамбле Прикарпатски облаçри ĕççыннисене лайăх концертсем кăтартнăшăн грамота пачĕ. Хула Совечĕн депутачĕ Клара Балог ансамблĕн художествăллă руководительне Ф. Лукина чечек çыххи пырса пачĕ.

Пушă вăхăтсенче ансамбль коллективĕ çар чаçĕсенчи художество пултарулăхĕн коллективĕсене ансамблĕн уйрăмах кăмăла каякан юррисемпе ташшисене вĕренме пулăшрĕ.

Концерт куракансене пур çĕрте те Г. С. Лебедевăн «Тăван çĕршыв», Ф. П. Павловăн «Тюньккитюньки» тата «Сĕрен», Мураделин «У калитки», Акуленкăн «Песня молодых солдат», Мокроусовăн «Давай сегодня встретимся», Украина халăх юррисем: Н. Комиссаров «Вдовицу я любил» ятлă Украина халăх юррине юрлани, М. Денисов Ф. Лукинăн «Хăна юрри» юрлани уйрăмах кăмăла кайрĕ. Çавăн пекех ансамбль ташласа паракан ташăсене те куракансем кăмăлласа пăхрĕç.

Совет Çарĕн Главнăй Политически Управленийĕ панă маршрут тăрăх эпир юлашки концерта Львов хулинче кăтартрăмăр.

Апрелĕн 21-мĕшĕпе майăн 2-мĕшĕ хушшинче эпир хамăрăн тăван çĕршывăмăрăн столицинче—Мускавра концертсем патăмăр.

КАРПАТ ТĂВĔСЕМ УМĔНЧЕ

Илемлĕ Карпат тăвĕсем таврашĕнчи çĕршыв...

Вагон чӳречисенчен пăхатăн та, пысăках мар ялсем курăнса лараççĕ. Халĕ вĕсен çурчĕсене уйăрса илме пулать-ха, мĕншĕн тесен март уйăхĕн пуçламăшĕнче кунта та ӳсентăран сарăлса çитеймест. Тепĕр икĕ-виçĕ эрнерен садсенчи çимĕç йывăçĕсем çулçă сараççĕ, чечеке лараççĕ. Вара ял садсем ăшне кĕрсе çухалать, ял хăш вырăнтине садсем тăрăх çеç чухласа илетĕн...

Тырă акнă уйсем те курăнаççĕ, вĕсем юртан тасалнă ĕнтĕ, анчах ешĕл симĕс тум тăхăнса çитереймен-ха.

Ĕлĕкрех кунта вăрмансем нумай пулнă, теççĕ вырăнти çынсем. Анчах вĕсене вăрçă вăхăтĕнче касса пĕтернĕ-мĕн. Халĕ çав вăрмансем вырăнне совет çынни çимĕç йывăççем лартса çитĕнтерет.

Сулахай енчи чӳречерен Карпат тăвĕсем курăнаççĕ. Вĕсен тăррисене тĕллĕн-тĕллĕн пĕлĕтсем хупласа илнĕ.

Дрогобыч патне çывхарса пынăçемĕн чугун çул çамрăк вăрмана пырса кĕрет. Кунта пуринчен ытларах хурăн ӳсет, вырăн-вырăнпа чăрăшсем те тĕл пулаççĕ.

Дрогобыч — промышленноçлă чылаях пысăк хула. Хулара унта та кунта заводсен çӳлĕ мăръисем хура тĕтĕм мăкăрлантарса лараççĕ.

Хулара эпир хваттере кĕрсе вырнаçрăмăр та, çав кунах Дрогобычран 12 километрта ларакан нефть хулине—Борислава тухса кайрăмăр. Борислав вăл Карпат тăвĕсен çывăхĕнчех ларать.

Ансамбль Нефтяниксен дворецĕнче концерт пачĕ. Куракансем уйрăмах Н. Комиссаров, М. Денисов тата А. Казакова солистсем юрланине кăмăлласа итлерĕç.

Унтан сцена çине хаçат работникĕсемпе фотографсем пычĕç. Вĕсем пирĕнпе калаçрĕç, ансамбле ӳкерсе илчĕç. Тепĕр кунне вырăнти хаçатра ансамбль çинчен, унăн репертурĕ çинчен материал пичетленсе тухрĕ. Унта пире мухтаса çырчĕç.

Ансамбль руководителĕ радио тăрăх ĕççыннисене ансамбль çинчен, республика çинчен тата унăн пурнăçĕпе культури çинчен каласа пачĕ.

Хĕвеланăç Украинăра ансамбль нумай хуласенчи çар чаçĕсенче пулса концертсем пачĕ.

Пире пур çĕрте те хапăл туса кĕтсе илчĕç. Эпир зала пырса кĕретпĕр çеç—пире, Атăл таврашĕнчен килнĕ хăнасене, тăвăллăн алă çупса саламлаççĕ.

Концертсем пĕтсен, часть командирĕ сцена çине тухать те залри мĕнпур халăх ячĕпе артистсене чĕререн тав тăвать. Çынсем алă çупма та чарăнман-ха—сцена çине воинсем пырса кĕреççĕ.

— Салам, земляксем!—теççĕ вĕсем пире чăвашла.

Вара хамăр земляксемпе ăшă калаçу пуçланса каять. Вĕсем пирĕнтен хамăр республикăри пурнăç çинчен ыйтса пĕлеççĕ.

Салтаксемпе офицерсем хушшинче нумай пирĕн земляксем. Вĕсем аслă Совет çĕршывĕнче ытти халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле совет çыннисен мирлĕ пурнăçне, творчествăлла мирлĕ ĕçне хӳтĕлеççĕ.

Эпир Вăрмар районĕнчи Герман Тарасовпа, Иван Федоровпа, Çĕмĕрле çыннипе—Андрей Пашкуртовпа, Муркаш районĕнчи Петр Пугачевпа тата ыттисемпе те тĕл пулса калаçрăмăр.

Пирĕн земляксем, хамăр кунтан таврăнсан, тăван чăваш халăхне саламлама ыйтрĕç, коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн нимĕн пăшăрханмасăр тăрăшса ĕçлеме ырă сунчĕç, мĕншĕн тесен Совет Çарĕ—совет çыннисен мирлĕ пурнăçĕпе мирлĕ ĕçне хӳтĕлекен шанчăклă та хăватлă вăй пулса тăрать.

* * *

Чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ Хĕвеланăç Украинăна гастроле кайса килни чăваш халăх искусствин историйĕнче питех те паллă вырăн йышăнса тăрать. Вăл пирĕн артистсен ăсталăхĕ ӳснине, пирĕн артистсене халăх юратнине кăтартса парать. Çакăнпа пĕрлех гастроль ансамбль ĕçĕнчи çитменлĕхсене те кăтартса пачĕ. Ансамбль коллективĕ малашне çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлеме тытăнассине ĕненес килет.

П. КУЛАГИН.

1954 ÇУЛТИ 3-мĕшĕпе 4-мĕш КВАРТАЛСЕМ-
ШĔН „ЯЛАВ“ ЖУРНАЛПА „ТĂВАН АТĂЛ“
АЛЬМАНАХА ÇЫРĂНСА ИЛĔР!

„ЯЛАВ“

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ КĂЛАРАКАН ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРĂПА ОБЩЕСТВĂЛЛА-ПОЛИТИКĂЛЛА ЖУРНАЛ.

Х А К Ĕ:

УЛТĂ УЙĂХА—12 ТЕНКĔ; ВИÇĔ УЙĂХА—6 ТЕНКĔ; УЙРĂМ НОМЕРĔ—2 ТЕНКĔ.

„ТĂВАН АТĂЛ“

ЧĂВАШ СОВЕТ ПИСАТЕЛĔСЕН СОЮЗĔН ВИÇĔ УЙĂХРА ПĔРРЕ ТУХСА ТĂРАКАН ИЛЕМЛĔ ЛИТЕРАТУРА, КРИТИКĂПА ИСКУССТВО ТАТА ИСТОРИПЕ ПУБЛИЦИСТИКА АЛЬМАНАХĔ.

Х А К Ĕ:

УЛТĂ УЙĂХА—6 ТЕНКĔ; УЙРĂМ НОМЕРĔ—3 ТЕНКĔ.

Пурте „Ялав“ журналпа „Тăван Атăл“ альманаха çырăнса илĕр.

ЯЛАВ № 6 (102)
ИЮНЬ—1954

ЕЖЕМЕСЯЧНЫЙ ЛИТЕРАТУРНО-ХУДОЖЕСТВЕННЫЙ И ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКИЙ ЖУРНАЛ СОЮЗА СОВЕТСКИХ ПИСАТЕЛЕЙ ЧУВАШИИ
ИЗДАТЕЛЬ: ЧУВАШСКОЕ ГОСУДАРСТВЕННОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО.

Редколлегия: А. Эсхель (отв. редактор), Л. Агаков, А. Артемьев, В. Долгов, Н. Ильбеков, К. Сергеев-Турхан, П. Хузангай.

Рукописи не возвращаются. Тех. оформление И. Григорьева.

НТ 00766. Подписано к печати 22/VI-54 г. Объем 5,165 п. л. Заказ 1612. Тираж 4950 экз. Цена 2 руб.

Адрес редакции и издательства: Чувашская АССР, г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. Телеф. № 8—36.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР.

Хакĕ 2 тенкĕ.

— Эс калатăн: «кăмăл майăн,
Юратас тесен хĕре—
Хĕр тени вăл пултăр лайăх,
Таврара пĕртен-пĕрре.

Сăнĕ-пичĕ пултăр хӳхĕм,
Çӳçĕ—вăрăм та кăтра;
Йăл кулма та, илĕртӳллĕн,
Пĕлтĕр кирлĕ вăхăтра.

Ун хисеплĕ пултăр ячĕ.
Аслă пултăр вăл ялан...»
— Пытармасăр каласамччĕ:
Ху вара, эс кам пулан?

И. МИТЯСЬ.